К83
Е51
Ч-37847

ЕФРЕМ

# ЕДИЕВ

## ҪЁНЁ ӐНЛАНУПА ӐНЛАНТАРУ

Национальная библиотека ЧР
4-037847

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

Моргаушская типография

К83
Е52

Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ

# ЕФРЕМ ЕЛЛИЕВ: ÇĔНĔ ĂНЛАНУПА ĂНЛАНТАРУ

(тĕпчевсем, аса илӳсем, «Çухалнă телейсем» драмăн сцена валли хатĕрленĕ вариантĕ)

4-37535

Шупашкар — 2002

УДК 821.512.111.0
ББК 83.3 (2 Рос-Чув)
Е 52

*Пичете Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн Ăслăлăх Канашĕ çирĕплетнĕ*

Пухса хатĕрлекенĕ **Ю.В.Яковлев**

**Ефрем Еллиев. Çĕнĕ ăнланупа ăнлантару (тĕпчевсем, аса илӳсем, «Çухалнă телейсем» драмăн сцена валли хатĕрленĕ вариантĕ)**. — Шупашкар: Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ, 2002. — 120 с.

Кĕнекене кĕнĕ ĕçсем Е.В.Еллиев пурнăçĕпе пултарулăхĕн халиччен тĕпчемен, паллă мар енĕсене çутатаççĕ, тĕнче тата Раççей литературин, историн перспективинче курма май параççĕ; çынна «сассăр» тунă усал самана тата шалти сасă, Турă ирĕкĕ пирки шухăшлаттараççĕ, çыравçăн чăн-чăлăмне çынлăхра кураççĕ, вулакан умне (тепĕр чух ятран палăртмасăрах) ыйтусем лартаççĕ.

К-37847
ПРОВЕРЕНО 20 02 МАР

ISBN 5—87677—055—8

© Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ, 2002

Национальная библиотека Республики Чувашия

...Мĕншĕн чăваша йăваш тенĕ, мĕншĕн чăваша кăнтăрла иртсен кăна ăс кĕрет, мĕншĕн чăвашăн кĕнекине ĕне çинĕ, мĕншĕн чăваш тĕшмĕшлĕ пулнă, мĕншĕн чăваш хытă, мĕншĕн «Турă çырнисем хăй çапла», мĕншĕн?..

* * *

Мĕншĕн-ха ман яланах пĕр-пĕр япала çырса пĕтерсен ыйтас килет: ма-ха тĕнче пиллĕк кĕтеслĕ?

Ухмах ыйту?..

* * *

Каллех: — Тĕнче миçе кĕтеслĕ?

Айван ыйту...

* * *

Чăн-чăн писатель чăн лайăх художествăллă произведенире ниме те тӳррипех каламасть, систерет çеç... Е тĕслет тĕплĕ, кирлĕрех енне маларах хурса.

*Ефрем Еллиев*

## УМ САМАХ ВЫРĂННЕ
### (Чăваш çыравçин шăпи пирки)

«Тăхăр çул пытарса усранă хыççăн кăна хайлава кун çути кăтартмалла», — тенĕ Флакк Квинт Гораций Пизонсем патне çырнă çырура[1].

1997 çулта литература пĕлĕвĕпе фольклористика пайĕ 1996 çулхи ăслăлăх ĕçĕсен пĕтĕмлетӳ сессине Ефрем Васильевич Еллиева халалларĕ. «Е.В.Еллиевăн пултарулăх шыравĕсем тата чăваш литературин 20-мĕш ĕмĕр варринчи сăнарлăхĕ (1930—1980 çç.)» — çапла пулчĕ нарăсăн 13-мĕшĕнче иртнĕ лару ячĕ. Сирĕн аллăрта халĕ çавăн чухне тухса каланисем. «Кивелмен-ши?» — тейĕ вулакан. — Кивелмен, — теес килет ман. Çĕнĕ тĕпчевсем унтанпа пулмарĕç, курăнмарĕç... Çапла, юбилейрен юбилее кăна аса илетпĕр чăваш çыравçисенчен чылайăшне. «Чăваш поэт-çыруçисем! / (...) Юпа пулăр пурăр та. / Уй хапхисен тăпсине / Ялтан яла ларăр та / Иртен-çӳрен хапхана / Уçа-уçа хупнă чух / Чăррик-чăррик! çухăрăр; / Кĕрен-тухан урапин / Тĕнĕл пуçне перĕнсе /, Ĕмĕр пурăнăр савăнса», — ытарлăн такмаклать Илле Тăхти 1925 çулта çырнă сăввинче[2]. «Юлташăм, тантăшăм Уяр, / Ялан пĕрне-пĕри туяр», — çапла асăнмалăх çырса панă Митта Ваçлейĕ Хветĕр Уяра хăй куçарнă «Фома Гордеев» кĕнекене[3].

Кăçал, кăрлач уйăхĕн 23-мĕшĕнче, Е.В.Еллиев çуралнăранпа 95 çул çитрĕ. Ăна, хамăр намăса, нимле те паллă тăваймарăмăр (те чун çитмест, те вăхăт çитмест пире)... Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕнчи литературăпа фольклористика пайĕн ĕçлевçисем Аксăва кайса писатель Çурт-музейне чечек хунипех çырлахрăмăр. Çак пĕчĕк кĕнеке тăван çĕршывăмăршăн çапăçса вилнисен ячĕпе чĕртнĕ сӳнми вут умне хунă чечек кăшăлĕ вырăнне пултăр (Е.В.Еллиев вил тăприйĕ паллă мар, вăл вăрçăра пуçне хунă).

«Эпир ташлатпăр, юрлатпăр, / Ĕçетпĕр, ай-хай çиетпĕр. / Эсир те çапла ĕçсе-çисе, / Выляса-кулса пурăнăр. / Сире

эпир асăнатпăр, / Эсир пире ан асăнăр», — тенĕ халăхăмăр юпа юррисенче[4]. Хамăр пирки кăна мар — пиртен ĕмĕрлĕхе уйрăлса кайнисем пирки те шутласчĕ, вĕсен ырă ĕçне, шухăш-ĕмĕтне малалла тăсасчĕ...

«Чăваш халăхне упраса хăварни вăл — ратне, хурăнташ туйăмне упраса хăварни, — тет Хветĕр Агивер. — Чăваш, чăваша пулăш, пур халăхпа та тату пурăн. Хурăнташра пĕтĕм чăваш пулмалла: вара Юркка та кирлĕ пулать, Хĕветĕр те кирлĕ пулать, пурте кирлĕ пулать».

Пурне те (уйрăмах ӳнерçĕсене — искусство çыннисене — тата вĕсен пурăнма хăват паракан ĕçĕсене) халăх асне, чунне кĕртсен кăна эпир вилĕмсĕрлĕх çулĕ çине, чăн наци пулас çул çине тăрассăн туйăнать. Çавăн чухне тин чăваш чĕри тĕпĕнче «Чăваш поэт пуличчен, тăлăх поэт пулас-мĕн» теекен шухăш-кăмăл капланмĕ. Ку ĕç — уйрăм çын тумалли ĕç мар. Кашни вĕреннĕ чăвашăн (уйрăмах чăваш филологĕсемпе историкĕсен) кăштах та пулин хăй кам пулни пирки шухăшлас пулать. Чăваш халăхне пĕр пĕтĕмлĕ организм пек курма, туйма тытăнасчĕ...

«В области думающего вопрошания могут иногда помочь уже и мимолетные соображения, тем более — старательно взвешенные. И грубые заблуждения в чем-то плодотворны, даже если они выкрикиваются в ослепленной полемике», — çырнă Мартин Хайдеггер[5]. Е.М.Тимирясовпа Ф.А.Михейкин аса илĕвĕсем, В.Н.Оринов лартнă спектакль Ефрем Еллиев тĕнчи, ун шăпин вăрттăнĕ иксĕлми пулни пирки систереççĕ. Кĕнекен пĕтĕмĕшле тĕп туртăмĕ пирки те çавнах каланă пулăттăм.

«Художествăллă произведение тытсан, ун çинчен çуран утса тухма хушнă. Лашапа кустарса мар... Чăнах та — улăхран çуран утса тухнă чух куран нумай чечек, сăнан нумай улах вырăнсем, киленетĕн ытларах... Çавăн пекех вула-ха эс сăвва хуллен, тăсса, чăмласа кашни сăмаха, курăн вара: мĕн чухлĕ илем, мĕн чухлĕ аталантаракан, савакан, шухăша яракан вырăн», — çапла çырнă çыравçă кун кĕнекинче (1932, ака, 14). Çак шухăша асра тытса вуласчĕ Е.В.Еллиева та, ыттисене те...

*Ю.В.Яковлев.*

## Литература

[1] *Гораций.* Собр. соч. СПб., 1993. С. 19—20.

[2] *Тăхти И.* Поэзи, проза, публицистика. Шупашкар, 1979. 183 с.

[3] Сăвăплă ят (Митта Васлейĕ çуралнăранпа 90 çул çитнĕ май). Аса илӳсем. — «Хыпар» кĕнеки. 30 (2) №. Шупашкар, 1998. Пуш, 5, 7 с.

[4] Чăваш халăх сăмахлăхĕ. IV том. Шупашкар, 1979. 264 с.

[5] *Хайдеггер М.* Время и бытие: Статьи и выступления. М.: Республика, 1993. С. 37.

[6] ЧПГĂИ ĂА. V уйр., 1559 упр. ед., 8702 инв. №.

# ТĔПЧЕВСЕМ

## ЕФРЕМ ЕЛЛИЕВ ПУЛТАРУЛĂХĔ: ÇЫНЛĂХĂН ТĔНПЕ ФИЛОСОФИ ПĔЛТЕРĔШĔ ПИРКИ

**Ю.В.Яковлев**

«Автор пленник своей эпохи, своей современности. Последующие времена освобождают его из этого плена, и литературоведение призвано помочь этому освобождению», — теннĕ Михаил Бахтин[1].

Ефрем Еллиев пултарулăхне çĕнетмелли, кăсăклантармалли майсенчен пĕри — çыравçă çынлăхĕ, гуманизмĕ.

«Тăванăм! Эсĕ те асаплă ман пекех —
Пĕр пек тивет, ачам, асапланма,
Кăкăр таппи шăп чарăничченех
Пĕр пек тивет, ачам, асапланма»... —

тесе куçарать вăл 1931 çулта Генрих Гейне сăввине[2]. Нимĕç поэчĕ хăйне тӳпене тытса тăракан Атласпа (Атлантпа) танлаштарни те 24 çулхи чăваш çамрăкĕшĕн çывăх пулнă. «Киревсĕр Атлас эпĕ. Тĕнчери асап тĕнчине хул пуççипе çĕклĕп», — тет вăл тепĕр сăвăра.

Чĕлхе çине килни ума килет теççĕ. Еллиев пултарулăхĕ, пурнăçĕ, шăпи пирки шухăшлатăп та: «Çыравçă гуманизм çулĕ çине ăнсăртран тăман пулĕ», — тетĕп. Ахальтен марçке вăл, калăпăр, тепĕр икĕ çултан чăваш çыравçисене чернилпа мар — юнпа çырма чĕнет[3].

«Ăслă çын вăл — сăнакан çын кăна», — вулатпăр эпир унăн кун кĕнекинче. Çĕршывăн тĕп е пысăк хулисенче сăнамалли чылайрах. Еллиев вĕсенчен кăна мар, чăвашăн тĕп хулинчен те аякра пурăннă — Тутарти Аксура. «Ĕçлеме Шупашкара пыраймарăм ĕнтĕ, — çырать вăл, сăмахран, Аркадий Золотов патне. — Вĕренӳ çулĕ пуçланчĕ. Эпĕ вăл

тĕлĕшпе Наркомпросра та пултăм. Анчах Тутар республикинче чăваш чĕлхипе урăх преподаватель тупаймаççĕ. Калаçмарĕç те... Сире пит пысăк тав тăватăп — хисеп туса йыхăрнăшăн, анчах мĕн тăвас-ха! Урăх çын тупăр-ха! Чăваш совет литературине эпĕ урăх енчен те кирлĕ пулăп-ха»[4]...

«Чăн çыравçă сахал япала тăрăх та нумай ăнланать», — тенĕ Фридрих Ницше[5]. Аксури педагогика училищинче вĕрентнĕ чăваш çыравçи пирки те çавнах калама пулать. Самана хыттине ун пек çивĕч туякан пирĕн литературăра сайра: «Епле пысăк улшăну, — çырать вăл, тĕслĕхрен, кун кĕнекинче. — Ĕлĕк этеме юраттаракан, этем çинчен ăшшăн çырнă произведенисем хаклă тăратчĕç. Писатель халне те çавăнпа виçетчĕç. Халĕ — этемлĕхе курайманни, уйăрни, пайлани маларах пултăр. Писатель хакне те çавăнпа виçеççĕ».

Çак шухăш революци хыççăнхи гуманизм ыйтăвне, кризисне тĕпрен палăртать. Еллиев шухăшлавçă вăрттăнĕ, тупсăмĕ — ун кăмăлĕнче, чун ыйтнинче. Вăрçă-харçă, курайманлăх вутне вăйлатма килмен пулмалла çав пирĕн çыравçă Çĕр çине, алла хĕç-пăшал тытма, çар çынни пулма та çуралман. Портнова Анна Павловна (унăн вĕренекенĕ) каланă тăрăх, «пуртенккине чĕркейместчĕ» тесе калаçнă тет Еллиевпа çарта пĕрле пулнисем.

Еллиев финсем енне куçнă текен сăмах* та çав ретри япалах. Ан тив, вăл суя пултăр, анчах çыравçă чунĕ тĕпĕнчи

---

* «...чувашский писатель Еллиев Ефрем Васильевич в послевоенные годы был оклеветан и до 1962 года считался предателем Родины. Это обстоятельство мне стало известно в Чебоксарах в 1949 г., когда я был назначен консультантом по вопросам литературы Правления Союза писателей Чувашской АССР, и мне было объявлено о том, что есть слухи о перебежке писателя Е.Еллиева к финнам и упоминать его имя в печати не следует. (...) В 1962 г. стало известно, что писатель Е.Еллиев никакой не предатель, а погиб на Калининском фронте в ноябре 1942 г., и его имя было реабилитировано» (Талвир А. Справка в облвоенкомат Татарской АССР. — НА ЧГИГН, отд. 5, ед. хр. 1558, инв. № 8700).

«...мне сообщают, что в Правлении чувашских писателей в Чебоксарах имеется сообщение, — якобы писатель Е.В.Еллиев находится в плену. Я не верила этому, ибо очень хорошо знала мужа и решила скрыть это от детей, но они раньше меня услышали об этом. На нас стали смотреть с подозрением. И только спустя много времени было установлено, что писатель Еллиев Е.В., находясь на фронте Отечественной войны, погиб в ноябре 1942 г. на Калининском фронте» (Медянцева С.И. Заявление. — НА ЧГИГН, отд. 5, ед. хр. 1558, инв. № 8695).

шухăш-кăмăла темле майпа тĕрĕс палăртать пек. («Клевета, как объяснил нам психоанализ, это бессознательная догадка о бессознательном оклеветаемого», — тет Борис Парамонов философ.)

Вĕл-вĕл вĕçкелет кĕрхи çулçă,
Тăлăха юлнипе хуйхăрать:
Хаяр çил — çилĕллĕ хуралçă —
Татса, хирелле хăвалать.

Тулларĕ çавра çил пуш хире,
Çулçа илсе кайрĕ таçта.
Эпир те çулçă вĕт тĕнчере,
Вĕçетпĕр, васкатпăр таçта.

Мана та темле вăй хускатрĕ,
Пăрахрĕ тĕнче юхăмне,
Пурнăç хурлăхне кăтартрĕ,
Сахал палăртрĕ ырлăхне.

Асăрхăр çыравçă тĕнчетуйăмне: «Эпир те çулçă вĕт тĕнчере, вĕçетпĕр, васкатпăр таçта», «мана та темле вăй хускатрĕ, пăрахрĕ тĕнче юхăмне». Ун чухнехи пурнăç тĕлсĕрлĕхне, абсурдне епле тĕрĕс палăртнă иккен Е.Еллиев.

«Çамрăк католик патне çырнă çырура» Генрих Белль вăрçă тĕлсĕрлĕхĕнчен хăтăлмалли майсем пирки калать. Акă вĕсем: культура, цинизм, хăвшăн çеç тăрăшни, хăвна ху вĕлерни.

Белль унтер-офицерĕ, ман шутпа, Еллиева питĕ çывăх пулмалла:

«Маленький бледный унтер-офицер с криво нашитыми лычками на погонах — утром часовой обнаружил его возле бункера, он лежал точнехонько на линии прилива, пистолет под боком, перед застывшим взором — серая, бескрайняя гладь равнодушного океана. Что он чувствовал в миг своей кончины, этот бледный преподаватель гимназии, наизусть шпаривший своего любимого Плавта?»[6].

Ăнсăртран-и «Çамрăксем» драмăра Сергей револьверпе пĕрĕнсе вилесшĕн, Çурхи поэт морфипе хăйне пĕтересшĕн, «Çухалнă телейсем» трагедире вара Çимен çакăнса вилет, унăн хĕрĕ Еля путса вилесшĕн шыва сикет...

«Постарайтесь понять отчаяние того маленького унтер-офицера, который не смог вынести поступь истории», — çырать Генрих Белль.

Нимĕç çыравçи нумай япалана çак унтер-офицер вилĕмĕпе танлаштарса хаклать. Çакăн пек виçе чăваш çыравçин те пулнă. Еллиев мăшăрĕ каласа панинчен (1989 çул):

«Брат Ефрема Егор кончил жизнь самоубийством. Перед этим братья всю ночь напролет разговаривали. Егор резко осуждал политику Советской власти по отношению к крестьянству. Говорил, что каждый раз, когда он садится пить чай, ему вспоминается соседская девочка, которая лишена сахара. Сахар давали на карточки, а карточки давали за сдачу излишек муки, у соседа излишек не было. Значит, не было и сахара. Ефрем старался вселить в брата надежду, говорил о том, что здесь, возможно, какая-то ошибка, что это, может быть, временно, хотя сам также не верил в это. Наутро брат в метель уехал в школу. Он тоже был учителем в соседней школе, где и застрелился из учебной винтовки».

«Усал çумне выртиччен ырăн ури вĕçне вырт», — тенĕ ĕлĕк чăвашсем.

Усал йĕрке (система) йăрине (обоймине) аркату хатĕрĕ пулса кĕриччен пăшала хăвăн тăнлавна тăрăнтарни çав авалхи йăлана чĕртниех пулнă. Якур хăйне хăй вĕлерни Еллиевăн чун пурнăçне, ахăртнех, ĕмĕрлĕхе тухатланă, вилĕмпе пурнăç ыйтăвĕпе çыхнă. Шăллĕпе юлашки хут каласнин ахрăмĕ ытти хайлавсене те тĕл-тĕл кĕрет. Ак, «Çухалнă телейсем» драмăри Кĕтерук хăй пурнăçĕнче пĕрре шур çăкăр çисе курнă. Хĕрача: «Тата тепре шур çăкăр çийĕттĕм», — тет.

**Кĕтерук**. Анне! Эпĕ вилсен — эсир савăнăр!

**Чĕкеççи** (*ыталаса, куççульпе*). Хĕрĕм, хĕрĕм! Çапла калаççĕ-и вара, хĕрĕм, аннӳне?

**Кĕтерук**. Эпĕ çиме ыйтмăп вара. Пирĕн çăкăр çук вĕт...

**Чĕкеççи**. Ах, Тур, хĕрĕм! Чарăн-ха. (*Макăрать.*) Мĕншĕн аннӳне çапла хурлантаратăн?..

**Кĕтерук**. Анне! Эпĕ рая лексен, Турра сире çăкăр нумай пар тесе кĕлтăвăп! Юрĕ-и?.. Эсир вара хальхи пек çăкăрсăр пурăнмăр. Лайăх пурăнăр...

(«Çухалнă телейсем»)

«Тĕлĕк» калав Улатимĕр арăмне: «Нихăçан та тавар çук тесе ӳпкелешсе ан калаç, юрĕ-и?» — тенипе вĕçленет. Анчах вăл, чăннипе, çуклăх пирки. Çакна çыравçă вăрттăнкĕрттĕн систерет. Ӳсĕр çын чĕлхинчен вĕçерĕннĕ сăмахсем те ăнсăртран мар:

«— Ан пăх ман çине! Мĕне пĕлсе пăхатăн! Ним те илсе килмен сирĕн валли, мĕншĕн тесен — çук! Илтетри! Лавккасенче çук! Нимĕн те çук!»[7]

«Тăшман куçĕ умĕнче» калав ячех нумай калать. Пирĕншĕн паян паллă — кулак юлашки Виктор тăрăхлавĕпитлевĕнче историлле чăнлăх тени ытларах:

«Мăнакка ман çине тĕллесе пăхать те çавăнтах хаш! хуйхăрса ярать; унтан тĕпеле кĕрсе каять, унта теменскер шалтăртаттарма пуçлать, каллех тухать те хаш! хуйхăрса ярать.

Туятăп вăл мĕншĕн вĕтеленнине: пирĕн чăнах та хăналама нимĕн те çук.

— Мăнакка! — терĕм эпĕ. — Кайса кил Кузьмасем патне. Кивçен çăкăр ыйт!

— Гм! — Виктор тăчĕ, йĕрĕннĕ пек пуçне пăрчĕ. — «Пуян та культурăллă пурнăç»-им ĕнтĕ ку сирĕн? — лăхлăх-лăх кулать хăй.

Кун пек кулма ĕлĕк пĕлместчĕ, халь вĕреннĕ. Çын кăмăлне пăсакан, нервăсене ыраттарса карăнтаракан кулă.

Йăвăр утăмпа утса сĕтел хушшине ларчĕ.

— Кала-ха, Анна, мĕнле пурнăç турăр çирĕм çул хушшинче? Мĕншĕн паян выçă ларатăр?

Унтан куçĕпе мана тĕллерĕ, пăхăнтаракан, пăшăлтатса тухакан сассипе манран ыйтрĕ:

— Кала-ха чăннипе, чăннипе... Пĕр пытармасăр. Ĕлĕкхи, вăрçăвченхи пурнăçа таврас килет-и? Астăватни? Пирĕн çурт. Мĕн кăна çукчĕ вĕт. Эх, райри пурнăç вĕтĕ! Э, Анна!

Тăрса, уткаласа çӳре пуçларĕ. Унтан, вăрт! çаврăнса, каллех пăшăлтатрĕ:

— Ман пĕлес килет. Ăнланатни, пĕлес килет: мĕн те пулсан улшăннă-и сирте? Мĕн те пулсан çыхнă-и сире çак влаçпа? Тарăн та сарлака-и вăл çыхăсем? Е пушă сăмахсем кăна-и вăл — «класлă сознани», «патриотизм», «советла героизм» — тата тем те пĕр... Пурăнас килет-и «класлă сознанисĕр», «революцисĕр», колхозсăр?[8]

«Чĕлхесĕр Эрхип» калаври Эрхипе вут çине чĕлхерен çакассипе хăратаççĕ (Петĕр, Калук). Самана улшăннă хыççăн Эрхип хăй ыттисен сехрине хăпарта пуçлать:

«Айăплисем, сăмаха шӳт çине ярса ахăлтатма пуçласан, Эрхип пит-куçне çилĕллĕ хытарса, стена çинчи портрет çине

кăтартнă, унтан хăрушшăн юнаса илнĕ: «Астăвăр, вăл килсессĕн...» Ахăлтатма пуçланăскерсем куллисене тартнă»[9].

«Хапхари» (калав 1933 çулта «Сунтал» журналта çапăннă) Пракки шухăшĕнче, шалти калаçăвĕнче те усал йĕркене йышăнман Якурăн сасси илтĕнет: «Епле чĕрĕ, çемçе, сисĕмлĕ çын ыр курса пурăнтăр «çуклăх» çумĕнче? Кашни çыртăк вĕт аса илтерет выççисене, мĕскĕнсене...»[10]

Якур 1935 çулта перĕнсе вилет. Ефрем юратнă шăллĕпе инкек пулассине маларах туйнă, ун çамки çинчи шăпа çырăвне вулама сĕмленнĕ.

Пĕр самант! Тепĕр юлашки утăм,
Хăварăн тĕссĕр çынсене.
Мĕн кĕтĕп? Уçалнă тупăкăм,
Путмастăн мĕншĕн çĕр тĕпне, —

сăвăлать Çурхи «Çамрăксем» пьесăра[11].

Ефрем Еллиев 1931 çулта «Хут купăс» сăвă çырать:

Тăкать сапаланса хут купăс
Хурлăх чăмăрккине сӳтсе.
Мĕншĕн-ха çак тĕнче пит тăкăс?
Хирĕнет чĕре тем илтсе.
Тăсать хумхантарса хут купăс,
Пĕркенчĕк салатать йĕрсе;
Пĕркенчĕк айĕнче шур тупăк
Курать куç, тĕтрене сирсе[12].

Çыравçă малалла мĕн пулассине юмăç пекех чухланă иккен. Сăвăри тупăк умма килет. Çĕршыври пурнăç малалла кайманнин сăлтавĕ пирки те вăл тавçăрнă. «Марксизм вĕрентет малтан экономика пырать тесе. Хальхи вăхăтра малтан пырать политика, сĕтĕрет экономикăна... Çавăнпа тĕрлĕ чăрмав, пăтăрмах... Епле çавна килĕштермелле?»[13]

«Халăх пурнăçĕнче, калаçăвĕнче, кăмăлĕнче сарăлать, ман шухăшпа, çӳлте тăракан çулпуçĕн кăмăлĕ.

Микулай патша чухне сарăлнă халăх хушшинче мăкалăх, сысналăх, çынна темле ухмахла шеллеменни.

Ленин вăхăтĕнче — ырă героика, ĕмĕтлĕ çутă кăмăл.

Сталин вăхăтĕнче — çын çине, чи малтан тăшман çине шанманрах пăхни, çынран тăрăшу кĕтни.

Çулпуçсен хăйсен кăмăлĕ те çавнашкал пулмалла»[14].

«Юратмаççĕ халь уйрăм тĕслĕ çынна. Пурте пулмалла пĕр тĕслĕ, пĕр ĕмĕтлĕ. Уйрăм тĕс йĕкĕлтет, хăратать»[15].

Пăсмаллипех пăснă халăха «тухатмăш» Сталин. Çулпуç кам тарçи пулни пирки те май тупса систерет çыравçă:

«Пĕр кун, тупата, килте тăрин, пĕр кун, — тет «Пĕр кун» пьесăра Лиса хăйĕн упăшкине Ванюка — колхоз председательне. — Кунĕн-çĕрĕн таçта... шуйттан шăтăкĕнче»[16].

Пĕр Лисашăн кăна мар колхоз — шуйттан шăтăкĕ. «Туласа, тăпăлтарса, вăрласа пухнă пурлăх», — тет пуп «Чĕн тилхепе» калавра колхоз пурлăхĕ пирки[17].

«Пĕр колхоз, колхоз шавлă йышĕ çеç кĕрет хапхаран савăнăçлă, — вулатпăр «Хапха» калавра. — Вĕçĕмсĕр кулу, шӳт сăмах, хуйхăсăр шухăш, паллă ĕмĕт курать хапха колхоз йышĕ кĕнĕ чух»[18].

«Юхать те юхать халăх пĕтĕрĕнсе. Иртет лаша, иртет урапа... Вĕлкĕшет çĕлĕк, карттус, сухал... Çăтать хапха колхоз ушкăнне».

«Çăтать» сăмах савăнăçлă (ытла савăнăçлă) ӳкерчĕке тамăк сĕмĕ хушать.

«Кама усал ернĕ, çавсем мана ăсран тухнă тесе шутлаççĕ, мĕншĕн тесен эпĕ усалсем (демонсем) пуррине ĕненетĕп, — тенĕ Карл Густав Юнг 1945 çулхи çу уйăхĕнче панă интервьюра. — Эп пĕлетĕп: усалсем пур. Бухенвальд пур-çке, çавăн пекех усалсем те пур. Вĕсем Бухенвальд пек чăнлăхах»[19].

Людмила Сараскина та «Бесы»: роман-предупреждение» кĕнекепе усал вăйсем пуррине ĕнентерет. А.Франсуа-Понсэ, Германири 1931—1938 çулсенчи Франци посолĕ, Гитлер пирки ак мĕн çырнă иккен: «...это был персонаж со страниц Достоевского, человек, «одержимый бесами»[20].

Достоевский Сталина тата сталинизм тапхăрне ăнланма пулăшнă, тет Сараскина.

«Коммунистсем — усалсем» шухăша çирĕплетме вăл Борис Савинковăн «Конь вороной» повеçĕнчи (1923) икĕ çын калаçăвне илсе парать:

«— За что ты их ненавидишь?

— Кого?

— Коммунистов.

— Бесов-то? А за что их любить? Дом сожгли и сына убили... Даже пес жалеет своих щенят... На кострах жарить их надо...»[21]

Максимилиан Волошинăн та çĕнĕ тĕнче — усал тĕнчи:

Исполнилось пророчество: трихины
В тела и дух вселяются людей, —

çырнă вăл «Трихины» сăвăра (1917)[22].

Трихина — килти выльăхсен паразичĕ. Çынсене те хурт ерме пултарать.

«Образ действий оголтелых разрушителей и погубителей ассоциируется с «антихристовой затеей», с абсолютным злом, а сами деятели — с его пособниками, — шухăшлать Л.Сараскина Борис Можаевăн «Мужики и бабы» роман-хроникине тĕпченĕ май. — «Служители сатаны», «выродки непутевые», «басурмане» — так зовет их народ.

Обличье сатаны, имя антихриста возникает в сознании людей не сразу; оно долго остается в тени, неузнанное, нераспознанное. И только в редких беседах мужиков нет-нет да и мелькнет опасливо и тревожно саднящее душу закравшееся в сердце подозрение. Художественный документ народного самосознания эпохи перелома, роман-хроника «Мужики и бабы» свидетельствует: обнаружить и обезличить главного беса бесовской затеи 1929—1930 годов русские деревенские люди смогли самостоятельно»[23].

«Литературăна Еллиев вак хуçалăхсене колхоза пĕрлештерес ĕç хĕрсе пынă вăхăтра килсе кĕрет, — çырать Юрий Артемьев тĕпчевçĕ. — Çыравçă колхозлă ял пурнăçне ӳкерет, йышпа алла-аллăн пурăнма пикеннĕ çын психологийĕ улшăнма пуçланине ĕненмелле кăтартать»[24]. «Писатель пултарулăхĕн тĕп шăнăрĕ пĕр тема тавра явăнать. Çĕнĕ пурнăçпа пĕрле улшăнса çĕнелекен этем психологине шалтан уçса кăтартасси ку»[25].

Этем, халăх улшăннинче Еллиев социализм вăййăмне кăна курман — шуйттан вăййăмне те туйнă. Çак туйăма ахăртнех Достоевский çивĕчлетнĕ[26].

«Достоевский первый понял, что неземные, из того мира в этот идущие силы зла — «Бесы» — могут овладевать не только отдельными людьми, но и целыми народами, — палăртать Дмитрий Мережковский революци хыçĕнче тăракан усал вăйсене сăнлас йăлари (традицири) Достоевскин вырăнĕпе пĕлтерĕшне. — Силы эти вошли в русский

народ. (...) Вера в бесов кажется людям наших дней нелепым суеверием варварских веков, уничтоженным наукой. Но вот Гете, великий ученый и человек, обладающий таким чувством действительности, как очень немногие люди, верит в «демоническое», не всегда совпадающее для него с «бесовским», близкое к нему, — и даже более, чем верит, — чувствует его в себе, в людях и в мире так же несомненно-осязательно, как рука чувствует в темноте невидимый предмет. Не надо, впрочем, верить в бесов — достаточно только искать ключ к замкнутой двери — к тайне русской революции, чтобы увидеть в демонологии Достоевского сквозь художественную символику метод познания, дающий возможность заглянуть в неземную природу совершающегося в русской революции изначального и бесконечного Зла — того самого, что религиозный опыт христианства чувствует как одержимость человека диаволом»[27].

Еллиев хайлавĕсенче усал — çын чунне кĕнĕ самант:

«— Ан кăшкăр пит. Кулак. Хăвăн юнна малтан ĕçĕпĕр.

...Çавăнтах сывăх, тарават, ырăн туйăнчĕ иртекен ушкăн, хӳрине каснă лаша, çĕмрĕк урапа, хыçалти этем: йӳле пилĕк, уттисем çирĕп, калаçать юлташпа тем çинчен.

— Тăван! Тăванăм!.. Эсĕ, мĕн, тăван вĕт, — çитсе çав этеме ыталас килчĕ Праккин. — Пире революци хăйматлăх турĕ, куçне сивĕ штыкпа шăтарнă салтак пире: «Ĕçе вĕçне çитерĕр, тĕп тăвăр тăшмана», — тесе юнĕпе кăшкăрчĕ... Тăкнă, тăкăннă юн çыхнă пире... (...) Эпĕ сирĕнпе. Татах çапăçăпăр-ха. Вăрçăра çĕнтертĕмĕр. Кулака кăкланă чух та çĕнтерĕпĕр. Ытла та ырă-çке. Шăнсан ăшă пӳрте лекнĕ пек, çăмăлланчĕ шăм-шак, çемçелчĕ чĕре. Ăшра темле вăй, илĕртекен, хистекен хăват, тĕкĕлесех хăвалать. Пуç çаврăнчĕ темле телейпе. Халь ак, халь тем тума хатĕр»[29] («Хапха»).

«Вунă çултан» калавра Марье хăйĕн савнийĕ пулнă Матвие «сутать»:

«— Арбуз, арбуз вăрлас терĕ... Кур! — лапчăннă арбузсем çине кăтартрĕ. — Кай, кай, Макçăм пичче, систер правление. Халех килччĕр!

Пырне куççуль пырса капланчĕ.

— Вăл ĕлĕк колхоз тăлăпне те вăрланăччĕ! Кала пурне те, пурне те...

Хăй те пĕлмест, мĕншĕн-тĕр, вăл ĕсĕклесе макăрса ячĕ.

Пĕр çур сехетрен ăш-чик лăпланчĕ, чĕререн йывăрлăх хуллен çухалчĕ. Çăмăллăн тăрса алăк патне пычĕ Марье.

Çăмăл чĕрере, шăм-шакра... Темле пысăк япалана ăнланса илнĕ пек. Пысăк, кирлĕ ĕç тунă пек»[29].

Куçан çын шутĕнчен тухса ӳкни тата халăх:

«— Эсĕ, Куçан, ял çинчи ĕçе тума мар, пухура та ларма пултараймастăн. Сана сассăр тунă! — Элекçей те сассине хăпартрĕ.

— Мĕнле сассăр хăварнă?! — сасартăк хăравçăллă сасă кăларчĕ Куçан. — Эпĕ вилмен вĕт-ха!

— Виличченех сассуна илнĕ пулать ĕнтĕ санран... Халиччен ытла кăшкăрашнăшăн пулмалла.

Темскер мăкăртатса кайрĕ Куçан килнелле. Чирлĕ çын пек, урине аран-аран пускаласа кайрĕ.

— Каяс килмест ял пуçĕ пулма вĕреннĕ çыннăн! Еплерех утать! — шăппăн хушрĕ тахăшĕ. Пухури халăх, темле йывăр япаларан хăтăлнă хыççăнхи пек, çăмăллăн сывларĕ те Элекçее сасăлама хушрĕ»[30] («Çĕнĕ хак»).

Революциллĕ «ăс» Çĕми мучие «Турă çук» теекен Андрей Степанчă учителе стражниксем тытса кайнă хыççăн кĕнĕ:

«Андрей Степанча лав çинче куртăм, темле пăхрĕ вăл юлашкинчен: те шеллесе, те ӳпкелесе...

Кăкăр тăвăнса çитрĕ. Пĕр-ик кун никама сăмах чĕнмесĕр çӳрерĕм, тепĕр кун, тĕттĕм пулсан, пупăн хыçра çӳрекен пăрушне тип пусса тĕртсе ятăм.

Учителе тытса кайсан, шкул хупăнчĕ, манăн вара вĕренесси пулмарĕ. Эпĕ çынсем тăрăх çӳре пуçларăм, алхасма тытăнтăм: ним айăпсăр йытăсене çăкăр ăшне йĕп чиксе парса, вĕсем епле асапланнине пăхса тăма юрата пуçларăм, хамăр пахчана кĕрекен сыснасене тимĕр сенĕкпе чиксе шăтарма пикентĕм.

Ӳснĕçемĕн пăсăласси хăвăртланчĕ: халь ĕнтĕ никам «ăса» вĕрентмесĕрех «ăс» кĕре пуçларĕ»[31] («Таврăннă çамрăклăх»).

Еллиев хăй чунне социализмпа килнĕ усалсене кĕртмен. «Çав хатер шелленĕччĕ эп ăна çав вăхăтра, — çырать вăл «Йышран уйрăлсассăн» повеçре тĕрек çухатнă Питтай председателе шеллесе. — Ăçта каять этем? Ăçта каять? Ăçта кайса хăна ху лăплантарăн? Кам сана шеллĕ? Кам йăпатĕ? Эсĕ вилетĕн вĕт ĕнтĕ! Ăçтан тупăн эсĕ чĕрĕлĕх? Ушкăнтан уйрăлтăн? Ăçтан тупăн эс савăнăç? Кам парĕ сана савăнăç



4-37847

ушкăнтан пуçне? Ăçтан тупăн эс вăй ыранхи кун пурăнма? Кам парĕ сана вăй ушкăнтан пуçне? Сĕм вăрмана вĕт, сĕм вăрмана каятăр! Пĕр йывăç та пулсан ăнланĕ-и сана?»[32]

«Заседани пĕтсен, аран-аран урисене сĕтĕрсе тухнă Питтай урама. Ăшра тĕрек пĕтсен, урасенче те тĕрек пĕтнĕ. Уйăхĕ çутатнă çаплах тĕлĕнсе, хытса. Ĕлĕкхи пекех, виçĕмçулхи пекех. Пин çул малтанхи пекех. Çав уйăх умĕнче пĕр пытармасăр каласа парас килнĕ. Пĕр уйăх çеç ăна, тен, ăнланĕ! Урăххи кам ăнланĕ? Урнă йытă ачашланма пырсан та вĕт хăраса тараççĕ. Вĕт мана мĕнпур ял урнă йытă пек курать пулĕ»[33].

«Вечер истории», — тенĕ сталинизм пирки Андрей Платонов. Каçхи тӳпе куçĕ — уйăх — космос саккунĕ, Турă ирĕкĕ пурри пирки систерет. Хĕвел тухмаллах! Çутçанталăк йĕрки çапла... Еллиев çакна аван ăнланнă. «Хуранта пăтраннă пек пăтранчĕ ял. Путрĕç аяла «ырă çынсем», тухрĕç çиеле ятсăррисем. (...) Мĕншĕн айăплă аялтисем?» — çакăн пек ыйтусем канăç паман ун чунне. Ыйтусем вăл тамăк хуранĕ айне вут хуманни пирки калаççĕ. Пĕтнĕ çынна та вăл çын вырăнне хисепленĕ, сасăсăррисене те хăй хайлавĕсенче сасă панă. Шеллет вăл çӳп-çапа тухнисене. Çак туйăмпа шăварăннă ун çутçанталăк ӳкерчĕкĕсем те (пейзажсем): «Хĕвеланăç енчен тапхăр-тапхăр çĕкленет çепĕç çил, таять уйра ларакан тăлăх йывăççене, варкăштарать хыт суха çинчи мăянсене, армутисене... Унтан тытăнаççĕ хĕвĕшме пĕлĕтсем, хĕвĕшеççĕ мăнкăмăллăн, çĕре курмасăр, палламасăр»[34]. «Куç умĕнче хĕрлĕ çыран. Çӳллĕ вăл, çӳллĕ. Çĕлĕк ӳкмелле. Темле курăк сырăннă чăнкă çырана (мĕнле вара ӳсет-ха çара тăм çинче?). Тĕпĕнче пĕр мăян, йĕнĕ çын пек, чикнĕ пуçне, хуçăлнă»[35].

Çепĕç çил — Турă палăрăмĕ. Мăян, армутисем — çын шутĕнчен тухнисем. Пĕлĕтсем — усалсем е усал ернĕ халăх. Тарăн вар — тамăк, пурнăçри чĕр тамăк.

«Хурçă хытти çапрĕ тĕнчене», — çырать Еллиев «Хапха» калавра. Сивĕ тимĕр нумай çыравçăн чун ăшшине туртса илнĕ. Хăйсенчен чура тунă. «Чăвашăн ăсĕ — хурăç пул, — чĕннĕ Çеçпĕл. — Чăваш! Çип-çивĕч ухă йĕппилле пĕр чашкăрса вĕçсе тĕлле, — çут тĕнчене тĕлле-йĕпле».

Юрий Зайцев сталинизма тимĕр тылăпа танлаштарнă.

Тимĕр тылă ăшĕнче
Шурă шуйттан ларать тет.
Тимĕр тылла тытсанах
Шăлĕсемпе шаккать тет.
Кантăр тыллас тесенех
Çӳпне куçа кӳртет тет.
Çав çӳп куçра юлсассăн,
Çын тухатмăш пулать тет.

Кĕçтенттин Иванов сăмахĕ кунта ытарлă. Сăвăçă пулассине курнă, туйнă. Пĕр Çеçпĕлшĕн кăна мар, «тимĕр тылă» тытнă нумай çыравçăшăн ун юптарăвĕ тĕрĕс, пророкла. Тимĕре тытакан тимĕртен хăй пĕтет. Еллиев сталинизма тимĕрпе çыхни унра çыравçă хевти пысăк пулни пирки калать.

«С ужасом заметил Хома, что лицо было на нем железное», — çырнă Гоголь «Вий» пирки.

Тимĕр сăнлă сталинизм Е.В.Еллиева нумай шар кăтартнă, анчах чунĕнчи Турă сассине хуплайман, унтан тимĕр чĕреллĕ тимĕр салтак тăвайман. Паян та усал вăйсем этеме хăйсен чури тăвасшăн, тухатмăша кăларасшăн. Еллиев чун çирĕплĕхĕ, çынлăхĕ[36] пирĕншĕн ыр тĕслĕх пулма тивĕç...

**Литература**


[1] *Бахтин М.* Эстетика словесного творчества. М.: Искусство, 1979. С. 332.

[2] Хыпар, 1997. Кăрлачăн 24-мĕшĕ.

[3] *Еллиев Е.* Уççыру — чăваш çыравçисем патне вулакантан (Творчество ыйтăвĕсене сӳтсе явнă май пичетленет) //Трактор, 1933. 7 кĕнеке. 155 с.

[4] ЧР патшалăх тĕп архивĕ, 434 ф., 2 оп., 78 ĕç, 45 л.

[5] *Ницше Ф.* Человеческое, слишком человеческое //Сочинения в двух томах. М.: Мысль, 1990. Т. 1. С. 347.

[6] *Белль Г.* Собр. соч. в 5 томах. М.: Худ. лит-ра, 1990. Т. 2. С. 686.

[7] *Еллиев Е.* Тĕлĕк //Ял пурнăçĕ, 1990. Мартăн 28-мĕшĕ.

[8] *Еллиев Е.* Тăшман куç умĕнче //Тăван Атăл, 1990. 10 №. 48 с.

[9] *Еллиев Е.* Чĕлхесĕр Эрхип //Хальхи чăваш литературин илемлĕ ăсталăх ыйтăвĕсем. Шупашкар, 1990. 115 с.

[10] *Еллиев Е.* Суйласа илнисем. Шупашкар, 1973. 36 с.

[11] ЧПГĂИ ĂА, 1 уйр., 1562 упр. ед., 8709 инв. №, 28 л.

[12] *Еллиев Е.* Кун кĕнеки //Коммунизм ялавĕ, 1990. Майăн 18-мĕшĕ.

[13] ЧПГĂИ ĂА, 5 уйр., 1559 упр. ед., 8762 инв. №.

[14] Çавăнтах.

[15] Çавăнтах.

[16] *Еллиев Е.* Суйласа илнисем. 182 с.

[17] Çавăнтах. 17 с.

[18] Çавăнтах. 24 с.

[19] Послевоенные психологические проблемы Германии (Интервью, взятое у К.Г.Юнга Н.Шмидтом в мае 1945 г.) //*Одайник В.* Психология политики. Политические и социальные идеи Карла Густава Юнга. СПб.: Ювента, 1996. С. 367.

[20] Сараскина Л. «Бесы»: роман-предупреждение. М.: Советский писатель, 1990. С. 230.

[21] Там же. С. 406.

[22] Там же. С. 385.

[23] Там же. С. 455.

[24] *Артемьев Ю.* Илемлĕ проза ăсти //Коммунизм ялавĕ, 1977. Февралĕн 2-мĕшĕ.

[25] *Артемьев Ю.* Кăйкăрла çунатпа //Хатĕр пул, 1987. 1 №. 21 с.

[26] Достоевский тĕнчине чăваш çыравçи витĕр курнă: «Достоевскине вуланă чух — пылчăкла, çăмăрла, тĕтреллĕ кĕрхи кун, таçта çын çухăрнă пек туйăнать» (*Еллиев Е.* Кун кĕнеки. 1932. Авăнăн 14-мĕшĕ. — ЧПГĂИ ĂА, 1 уйр., 1562 упр. ед., 8709 инв. №).

[27] *Мережковский Д.* Тайна русской революции. Опыт социальной демонологии. М.: Русский путь, 1998. С. 48.

[28] *Еллиев Е.* Суйласа илнисем. 38—39 с.

[29] Çавăнтах. 45 с.

[30] Çавăнтах. 54—55 с.

[31] Çавăнтах. 65—66 с.

[32] Çавăнтах. 166, 169 с.

[33] Çавăнтах. 33 с.

[34] Çавăнтах. 36 с.

[35] Çавăнтах. 26 с.

[36] Е.В.Еллиев пултарăвне 1990 çулччен «колхозлă ял юрăçи» формулăпа хакланă. Çыравçа çĕнĕлле (ун çынлăхне, шухăш тарăнлăхне, вичкĕн ăсне мала кăларса) вуласси çак ĕçсенчен пуçланнă: **Е.В.Еллиев çырнисене пичетленинчен**: Кĕтмен хăна //Хальхи чăваш литературин илемлĕ ăсталăх ыйтăвĕсем. Шупашкар, 1990; Чĕлхесĕр Эрхип. — Çавăнтах; Тăшман куç умĕнче //Тăван Атăл, 1990. 10 №; Тĕлĕк //Ял пурнăçĕ, 1930. Мартăн 24-мĕшĕ; Кун кĕнеки //Коммунизм ялавĕ. Май 18-мĕшĕ; Пирĕн телей çавнашкал (Драма сыпăкĕ) //Хыпар, 1992. Юпа 2-мĕшĕ. (Хайлавсене пичете Ю.В.Яковлев хатĕрленĕ.) **Е.В.Еллиев çинчен çырнинчен**: *Яковлев Ю.В.* Е.Еллиевăн прозăри пултарулăхĕ (Интерпретаци ыйтăвĕсем) //Хальхи чăваш литературин илемлĕ ăсталăх ыйтăвĕсем. Шупашкар, 1990; *унăнах.* Пурнăçа тарăн сăнлакан //Тăван Атăл, 1990. 10 №; *унăнах.* Тарăн шухăшлă писатель //Ял пурнăçĕ, 1990. Мартăн 24-мĕшĕ; *унăнах.* Чувашский Эзоп //Чăваш ен, 1991. № 16; *унăнах.* Чăваш литературинчи çынлăх Атланчĕ //Хыпар, 1997. Кăрлач, 24.

# ИЛЕМЛĔ ХАЙЛАВСЕНЧИ ЯЛ ПУРНĂÇĔН СОЦИАЛЛĂ ЧĂНЛĂХĔ: Е.ЕЛЛИЕВПА С.АСЛАН ПРОЗИНЕ ТАНЛАШТАРУЛЛĂ ТИШКЕРНИ

**А.А.Ефимова**

Е.Еллиев — 30-мĕш çулсенче палăрнă çыравçă. Литература ĕçченĕсен ăс-тăнĕнче социологи меслечĕсем тымарланнă тапхăр ку. Литература социологийĕ сăмахлă культурăна обществăпа этем, уйрăм çынпа сослови (класс) пĕр-пĕрне мĕнле витĕм кӳни енчен тишкернĕ. Çыравçăсен хăйсен хайлавĕсене социалла пурнăçа идеологипе, истори событийĕсемпе çыхăнтарса калăплама тивнĕ. Çакă, паллах, илемлĕ литературăна пĕр еннеллерех сулăнтарнă, ун сиенĕ питĕ пысăк пулнă. Çапах ку туртăмăн ырă енĕсем те пулман мар: произведенисенче сюжет динамики хивреленнĕ, историре пулса иртнĕ палла ĕçсене кăтартасси тĕпе тухнă. Пурнăçа сăнланă май авторсем ытларах событисем çине таянса пынă, фабулăлла сюжета вырăн панă. Ку ĕнтĕ çакна пĕлтерет: произведенисен сăнарлăх енне событисем кăна тытса пыма пултарнă. Кунашкал мел — событисем тĕп вырăнта пулни — ытларах чухне приключенияллĕ произведенисемшĕн курăмлă пулнă. Хайлавсем ирĕксĕрех приключенияллĕ пекрех пулса тухнă. Илемлĕх енĕсем туллин пулайманран çакă произведени пуплевĕн сăн-сăпатне пĕр енлĕн тунă. И.Тукташăн «Вăкăр çырми» (1931), Л.Агаковăн «Пĕрре, çуркунне» (1939), С.Элкерĕн «Шурăмпуç килсен» (1940) повеçĕсем, М.Данилов-Чалтунăн «Колхоз калавĕсем» (1936) тата ытти хайлавсенче ку уйрăмах палăрнă. Çавăнпа этем характерĕ чунăн шалти кĕрешĕвĕ урлă мар, истори пулăмĕсен «вучахĕнче» туптаннă. Кунашкал хайлавсенче геройсем çиелти конфликта çеç хутшăнаççĕ. Характер тени вара этем чунĕнчен тухнине кăтартмасăр пулмасть. Конфликт та çав «вучахпа» килĕшӳллĕ çивĕчленнĕ. Элкер, Тукташ

поведĕсенче, Аслан произведенийĕсенче историллĕ конфликт сăнарлăха хĕссе кăларать. Тӳррипе вара сăнарлă конфликт пулмалла. (Сăнарлă конфликт вырăнне производствăллă (фермăри, производствăри) конфликт та пулма пултарать. В.Алентей хайлавĕсемшĕн курăмлă ку.) «История, — тенĕ историллĕ конфликт пирки Литературăн кĕске энциклопедийĕнче, — врываясь в сердцевину «частной» жизни, требовала не созерцания или сочувствия, а содействия, хотя бы и активным устранением от нее»[1]. Апла пулсан, хайлавра истори хăй кăна çителĕксĕр, сăнарлама тытăннă пурнăç хăйĕн логикине тупса аталанса пымалла. Чылай писатель вара историллĕ конфликт тупать те героя унта кĕртсе пырать. Хăш-пĕр авторсем кунашкал туртăмсенчен хăтăлма та пултарнă. Акă, М.Трубинан «Мучар» поведĕнче Михалян шалти пурнăçĕ палăрса пырать. Çыравçă ăна Мучарпа танлаштарса сăнарлать. Автор ăнăçлăхĕ кунта — Михаля ăшĕнче чун конфликчĕ тымарланнине кăтартма пултарни (Михаляпа Мучар хушшинчи конфликт историллĕ конфликт çеç). Ку енĕпе Г.Федоров литературовед каланипе килĕшмеллех. Çыравçă Михаляна эстетика енчен тишкернине палăртать вăл[2]. Кунашкал ăнăçлă сăнарсем Михаля кăна мар, ыттисем те пур литературăмăрта. «Хапхари» Пракки (Е.Еллиев), «Тăпра каласатьри» Тăхтаман (В.Рсай), акă, колхоза кĕмесĕр тăма пултараймаççĕ. Çапла тумашкăн вĕсене хайлавра сăнарланса пыракан пурнăç саккунĕ хистет, татăклă шухăш сăнарсен чунĕ витĕр шăранса тухать. Çакăн йышши сăнарсем тăвас енĕпе Еллиев пултарулăхĕ татах та вăйлăрах. Унăн хайлавĕсенче çиелти конфликт çук та темелле. Чун пурнăçне тĕпе кăларса калăплать вăл хăйĕн геройĕсене. Çакăн евĕр сăнарсем тăвайман çыравçăсен вара хăйсен геройĕсене татăклă утăма ирĕксĕрлесе тутарма тивет. С.Асланăн «Аслă çул» тетралогийĕнчи Макар, акă, колхоза автор ирĕкĕпе кĕрет. И.Тукташăн «Вăкăр çырми», Тихăн Петĕрккин «Çĕнелнĕ тымар» поведĕсем, ытти хăш-пĕр произведенисем пирки те çавна каламалла.

Ку тапхăрта истори событийĕсене, общество тăрăмне, класс кĕрешĕвне тĕпчемен-çутатман произведени пулман та темелле. Уйрăмах çакă хресчен кун-çулĕпе ăс-тăнне тĕпрен улăштарнă коллективизаци тапхăрĕпе çыхăннă. Вăрçă хыççăнхи çулсенче те, хальхи тапхăрта та чылай çыравçăшăн

«алран кайми аки-сухи» пулчĕ ял пурнăçне сăнласси. Саманан кашни тапхăрĕнчи улшăнусемпе шайлашуллă курса тишкереççĕ ăна авторсем.

Халиччен калани çакăн пек шухăшсем патне илсе пырать: пĕр енчен, социаллă хайлавсене соцреализм ыйтнинчен урăхларах куçпа курса хакламалла. Тӳнтерле енсене унччен хурланă пулсан, халĕ вĕсене ырласси йăлана кĕрет. Çыравçă пĕр енчен тепĕр енне сулăнни ку. Сăнарланакан пурнăçа, пулăма, сăнара пĕр енлĕн кăна кăтартни произведение сиен кӳни паллă ĕнтĕ. Тепĕр енчен, литература историнче мĕн пуррине пĕтĕмпех сирсе ывăтма çук пулĕ, кашни хайлава тивĕçлĕ хак памалла. Çак сăлтавсене кура статья авторĕ икĕ çыравçăн — социаллă чăнлăха тĕрлĕ мелсемпе çутатнă авторсен — Е.Еллиевпа С.Асланăн — произведенийĕсене пăхса тухас тĕллев тытнă.

Пултарулăх ĕçĕн меслечĕ вырăнне соцреализм меслетне суйласа илнĕ чылай çыравçă пекех, Аслан та çак çулпа кайнă, хайлавсенче идеологие мала кăларнă. Ку уйрăмах унăн «Аслă çул» тетралогийĕшĕн курăмлă. Кунашкал произведенисенче ĕç-пуç парти идеологийĕн схемипе аталанать. Пурнăçри улшăнусене кăтартнă чух «социаллă заказа» ытларах кăмăллани палăрать. Çавна пула ирĕксĕрех общество аталанăвĕн çиелти пулăмĕсене мала кăларма тивет авторăн. Çакă ăна уйрăм çынпа çемье кун-çулне мар, общество пурнăçне тĕпе кăларма хистет. Хресченĕн пĕрлехи хавалĕ пĕрлешӳллĕ хуçалăхра çеç вăй илме пултарнине ĕненет çыравçă. Çак хавала автор Макарта та курать. Вăл ял халăхĕпе çураçуллă пурăннине, ытти хресченсене яланах пулăшма тăрăшнине палăртать. Çавăнпа уйрăм харпăрлăхпа пурăнма кăмăллакан Макар колхоза хăй ирĕкĕпе кĕмелле пек туйăнать. Тетралогире вара автор ăна унта васкаса кĕртни палăрать. Еллиев хайлавĕсенчи геройсем çак утăм патне хăйсем тĕллĕн çитнине ĕненмелле кăтартнă. Писатель çакна социаллă опыт йĕр хăварни урлă, вĕсен чун пурнăçне йĕрлесе пырса тăвать. Герой татăклă шухăш патне çитнине психологизм мелĕпе кăтартать пулсан, Аслан — ытларах автор каласа пани урлă. Унăн тĕп сăнарĕ — Макар та — чылайччен иккĕленсе пурăнать. Маларах йĕркеленнĕ хуçалăхсене çитсе курать вăл, Разумов учительпе (парти уполномоченнăйĕпе) канашлать, ыттисен ӳкĕтне итлет. Пĕрлешӳллĕ хуçалăха кĕресси унăн

кĕтмен çĕртен, колхоз председательне — Кузьма Пастухова — кулак хӳрешкисем тапăннă хыççăн пулса иртет. Çавăн чухне вăл парти ретне те тăрать. Куратпăр ĕнтĕ, Аслан хайлавĕнчи Макар колхозлă ялпа пурăнма шухăш тытни çителĕксĕртерех сăлтавланнă, уйрăмах — партие кĕни.

Социаллă тĕрлĕ сийсем вырăн тупнă тетралогире. Хире-хирĕçле икĕ вăйăн ĕçĕ-хĕлĕ, вĕсем хушшинчи кĕрешӳ уйрăмах курттăмăн палăрнă. Çакна автор истори юхăмĕнчи вăйсен шайлашăвне, фактсен логикине тĕпе хурса тăвать. Кулленхи пурнăçпа историллĕ событисем геройсен пурнăçне йĕркелемелли конкретлă условисем, илемлĕх мелĕсем пек тухса тăраççĕ. Хайлаври тĕп хирĕçӳсене пысăк пĕлтерĕшлĕ событисене тĕпе хурса пĕтĕмлетнĕ. Материала хăнăхнă концепцисемпе кăшăллани, ытти чылай автор пекех, Асланшăн та курăмлă. «Çакă ăна хăш-пĕр сăнарсемпе ситуацисене иллюстрациллĕрех тăвасси патне илсе çитернĕ»[3], — çырать кун пирки Г.Хлебников литературовед. Чăн та, коммунистсен сăнарĕсене пĕр енлĕ, ырă енчен кăна курса калăпланăран, вĕсем плакатлăрах пулса тухнă. Класс тăшманĕсене те çапларах (ытлашши хаярлатса-нĕрсĕрлетсе) курни сăнарсене туллин уçма паман. Тенденцилĕхе пула ытти геройсене те çавнашкал шăпа тивĕçнĕ. Çакă çыравçăсене пăрнăç çул çине илсе тухать иккен. Ытларах çакă хайлаври пурнăç хăйне евĕрлĕ аталаннине вырăна хуман, истори чăнлăхне кăтартакан хатĕр концепцисене кăмăллана чухне пулать.

М.Юман, В.Рсай, Е.Еллиев йышши çыравçăсем вара ӳкерĕнекен пурнăçăн хăй евĕрлĕ аталанăвне суйласа илнĕ. Çĕнĕ пурнăçа сăнлассине, халăх ăна мĕнле йышăннине кăтартассине соцреализм меслечĕ ыйтнинчен урăхларах туса пынă — геройсене колхоза ирĕксĕрлесе кĕртмеççĕ, çав утăм патне сăнарсем хăйсем тĕллĕн çитеççĕ.

Социаллă танмарлăх проблеми, паллах, çыравçăсене яланах шухăшлаттарнă. Чăваш литературишĕн те ют мар ку. Хв.Уяр, С.Элкер, Илпек Микулайĕ, Н.Мранька, ытти чылай писатель хускатнă çак ыйтăва. Нумайăшĕ танмарлăха аркатнă хыççăнхи пурнăçа сăнлассине хăйсен пултарулăхĕн никĕсне хывнă. Е.Еллиев — çавсенчен пĕри. Революци кĕрешĕвĕ, хире-хирĕçле классем пĕр-пĕринпе антăхса тытăçни мар, халăх çĕнĕ пурнăçа мĕнле йышăнни, колхозлă ял сывлăшĕ ытларах илентернĕ ăна. Çакна тĕпе хурса хайланă

вăл хăйĕн произведенийĕсене. Соцреализм лавне кӳлĕннĕ çыравçăсенни пек, яланхи сăнарсем — обществăри тĕрлĕ сийсен, кĕрешӳçĕсен сăнарĕсем — куçа тăрăнмаççĕ вĕсенче. Социалла конфликт та тĕпе тухмасть. Колхоза хирĕç тăракан пуянсем палăри-палăрми кăна сăнарланнă. Темиçе хайлавра кăна («Хапха», «Кĕтмен хăна», «Çĕнĕ хак», «Йышран уйрăлсан»...) «чĕрĕ» кулаксем тĕл пулаççĕ. Ку сăнарсене ытларах ытти персонажсен аса илĕвĕнче е автор хăй аса илнĕ евĕр кăтартнă.

Хăйĕн дневникĕнче каланă пек (çакна Ю.Яковлев тĕпчевçĕ тупса палăртнă), çыравçăшăн «чăн-чăн илемлĕ искусство... — тĕрлĕ пĕчĕк, вак-тĕвеке кăтартмалли япаласен пуххи»[4]. Чăн та, хайлавсенче вăл çавнашкал вак-тĕвек пулăма, ĕç-пуç, сăнара кăна кăтартать темелле. Анчах «ытларăха мĕнпур енчен ăнланса-ăнкарса çитнĕ Еллиев»[5] (Г.Федоров) вĕсем урлă пысăк проблемăсем хускатать. Пурнăçăн ĕмĕртен килекен, хăй халлĕн аталанакан йĕркине сăнарлать. Геройсем те унăн кĕрешӳре туптаннисем мар, ыттисенчен уйрăлсах кайман, ахаль, мĕскĕн çынсем. Вĕсене сăнарлама кулленхи пурнăçпа çыхăннă лару-тăрăва илет. Пархатарлă е пархатарсăр сăнар çук уншăн. Искусствăшăн пур герой та пĕр тан пулнине асра тытать. Геройăн ĕçĕ-хĕлĕ, вăл мĕнле сословирен тухни кăсăклантармасть çыравçа — унăн кăмăл-туйăмне шалтан тĕпчесси тĕпре. Ю.Яковлев тĕпчевçĕ шухăшĕпе килĕшсе, çапла калама пулать: кирек мĕнле сăнарта та чи малтан этеме курнă гуманист-çыравçă. Çавăнпа соцреализмшăн пархатарлă мар шутланнă геройсем те унăн — трагеди палăрăмлă, шеллеме тивĕçлĕ çынсем. Акă, «Кĕтмен хăнари» Лукка. Колхоза хирĕç агитациленĕшĕн, витине вут тĕртнĕшĕн тĕрмене хупнă ăна. Лармалли çулталăк çурă юлсан унтан тухса тарнă, аякра ирĕклĕ пурăнмашкăн хут тутарас тĕллевпе тăван ялне килнĕ. Анчах кунта ăна пулăшакан-ăнланакан та, çĕр выртма яракан та çук иккен. Нимĕнле çăлăнăç та çуккине туйса милиционера парăнать таркăн, хăйне каялла тĕрмене ăсатма ыйтать. Унăн трагедине чунпа ăнланни сисĕнет, хăй ун майлă пулнине, шелленине палăртать автор. Шалти тĕнчине тĕпчесе, ăна инкеклĕ çын пек уçса парас хаваллă. Ытти хайлавсенче те сисĕнет çакă. Тахçан ял хуçи пулнă пуянсем («ыр çынсем» тет вĕсене автор йĕплесе) хальхи саманара хисепсĕре тухнă («Куçан — «Çĕнĕ хак» калав»...).

Кулак-пуян сăнарĕ çыравçа вĕсем урлă герой татăклă шухăш патне çитнине кăтартма та кирлĕ. «Хапха» калавра, акă, пуянсем ĕлĕк хăйне мăшкăлланине аса илни, Ивантей Мĕтри текен пуян ăна хăйсемпе пĕр рете лартни, унăн колхоз йĕркине курайманлăхĕ («Çиçĕм çилли, арăслан хаярлăхĕ, кашкăр тискерлĕхĕ Ивантей сăнĕнче») Праккие колхоза кĕрес шухăша татăклă тума хистеççĕ. «Çерем çинче» очеркра, «Пĕр кун» пьесăра, «Çĕнĕ хак» калавра та çавах. Пуянсене тарăхнă пирки кĕреççĕ колхоза геройсем. Хире-хирĕçле сăнарсене танлаштарулла хаклани автора пархатарсăр текен сăнарсене релятивлă, иккĕмĕшле пĕлтерĕшлĕ тума май парать. Унсăр пуçне, çакă авторшăн сюжета антитезăлла хывма, конфликта хĕрӳлентерме пулăшакан мел те.

Обществăн социаллă тăрăмне тĕпе хывнă хайлавсенче (ку Асланăн курттăмăн палăрать) пусмăр тӳсекен халăхпа унăн ырлăхĕшĕн кĕрешекен коммунистсен тата пуян-кулакăн кĕрешĕвĕ тĕпре. «Аслă çул» тетралогире çакна палăртакан конфликт (тĕслĕхе, Макар — Лисор, Упрам — Куçук...) парти идеологийĕ хушнипе çӳлтен антарнă пек хывăнать пулсан, Еллиев хайлавĕсенче вăл çынсен чунĕнчен тухать. Çакă ăна сăнара туллин уçса пама май панă (Аслана вара чăрмантарнă).

Стиль, сăнарлăх енĕпе икĕ çыравçăн пĕрпеклĕхне те, уйрăмлăхне те палăртмалла. Тетралогире тĕрлĕ стиль вырăн тупнă, сăнарсен системинче геройсене тĕрлĕ мелсемпе сăнланă. Çурма фольклорлă сăнара — Микие, — акă, кулăшпа трагеди мелĕсемпе, пархатарлă сăнарсене — çĕкленӳллĕ (романтикăллă) хавхапа. Пархатарсăррисене иронипе сарказм, сатирăпа гротеск мелĕсемпе питленĕ. Тĕп сăнара — Макара сăнламашкăн публицистика, философи, психологизм пайрăмĕсем тупнă. (Идеологи Аслана кунта та ура хунă.) Еллиев та хăйĕн хайлавĕсенче тĕрлĕ стиль мелĕсене вырăн панă. Чылай произведение шăнарлаканни — антитезăпа хирĕçлетӳ, танлаштарупа шайлаштару. «Çĕнĕ хак», «Таврăннă çамрăклăх...» калавсенче, акă, ĕлĕкхипе хальхи пурнăçа хире-хирĕçлетсе танлаштарса пыни, вĕсене ватă çынсем (Ваçли старик, Çĕми мучи) аса илĕвĕ евĕрлĕ хывни курăмлă. Çак мелсем сăнара уçса пама та кирлĕ автора. «Çарăмсан тăрăхĕ» очеркра Еллиев геройпа калавçă аса илнине тĕпе хунă. Çĕнĕ пурнăç «тĕреклĕрех пулнине» ĕненнĕ çыравçă

сăнара тата пĕрлехи ĕçĕн хавалне романтикăлла хавхаланупа сăнлать. «Хапха» калавшăн, «Хастарлăх» очеркшăн курăмлă çакă. Çыравçăн тĕп мелĕсенчен пĕри — психологизм. Кашни хайлавра тенĕ пекех — герой чунне уçмалли хатĕр ку. «Чĕн тилхепе», «Хапха», «Стахановец çулĕ»... калавсенче, «Çаран çинче» очеркра вара уйрăмах палăрать. Вĕсенче герой татăклă ĕç тума шут тытнине психологи енчен тĕпченĕ. Çакă çыравçа В.Рсайăн сăнарлă тĕнчипе çывăхлатать. Колхоза кĕме е урăх йӳтĕмпе çирĕп шухăш тытнă сăнарсен чунĕ витĕр тухса кĕвĕленет ку. «Авторăн илемлĕ тĕнчи шалтан тавлашуллăн шăранса тухать»[6], — тет кун пирки Ю.Яковлев тĕпчевçĕ. Çакă саманаран кăна мар, писателĕн чун-чĕринчен те килнине палăртать. Паллах, пысăк талантлă çыравçă кăна тума пултарать çакна.

«Хапха» калаври Пракки ятлă хресчен нумай вăхăт иккĕленнĕ хыççăн колхоза кĕме тĕв тăвать. Ку шухăш патне вăл хăйĕн тĕрекне иртнинче курни (граждан вăрçи вăхăтĕнче тискеррĕн вĕлернĕ салтак тăтăш аса килни), пĕр туйăм тепĕрне куçни, хăйĕн хальхи пурнăçне тишкерни, ӳкĕнни, хăйне хăй тарăхни-ятлани урлă çитет. «Чĕн тилхепере» ку мелпе — геройăн шалти монологĕ урлă — хресчен ăс-тăнĕнчи туйăмпа тивĕç хушшинчи хирĕçĕве уçнă. Чунри çак хирĕçӳрен — колхоза вăхăтра леçсе паман тилхеперен — хăтăлни этеме канăçлăх, ирĕклĕх кӳрет. «Стахановец çулĕнче» те канăçа çухатнă çыннăн кăмăл-туйăмĕ тĕпре. Иккĕмĕш эрне çапла нушаланать иккен Тимĕр. Хăйне валли вырăн тупаймасть. «Куçĕнче темле тертлĕ, çул тупайман шухăш çеç куçа йăмăхтарать»[7]. Юлашкинчен вăл ăшĕнче темĕн капланнине туять, пурне те итлет, «колхоза кĕмеллех» текен шухăш патне пырса тухать. Тинех кăмăлĕ çĕкленсе каять унăн, пурнăç çĕнĕлле таврăннăн туйăнать, кайран колхозра стахановец пулать.

«Çаран çинче» очерк малтан пуçласа вĕçне çитиех психологизмпа витерĕннĕ. Сăнарлăх енĕпе те пуянрах вăл ытти хайлавсенчен. Çавăнпа ăна сăнарлă, психологиллĕ очерк теме пулать. Кашни сăнара чĕрĕ пек кăтартма пултарнă художник, ку мелпе ăнăçлă усă курса.

Аслан пекех, Еллиев та хресчен пĕрлешӳллĕ ĕçре вăй илме пултарнине ĕненнĕ. Пурнăç логики, унăн авалтан килекен йĕрки тăрăх чăвашсемшĕн эртелпе ĕçлесси, йышпа пурăнасси курăмлă пулнине ăнланнă. Çавăнпа, ман шутпа,

социализм çулĕ, колхоз пурнăçĕ уншăн ют пулман. Çав вăхăтрах вăл колхозлă ял пурнăçĕн тӳнтерле енĕсене те курмасăр тăма пултарайман. Г.Федоров тĕпчевçĕ калашле, «çĕнĕ пурнăçа васкавлă, хыпăнчăклă хăвăртлăхпа туни çын кун-çулне аркатма пултарнине»[8] тавçăрнă. Сталинизм унтан та хăрушăраххине туйнă (ку -изм çине çыравçă мĕнле пăхнине Ю.Яковлев тĕплĕ тишкернĕ)[9]. Сталинла социализмпа соцреализм, паллах, ăна ку пулăмсем пирки уççăн калама паман. Хăйĕн шухăшне ирĕксĕрех — Тăхти, Иван Мучи пек — ытарлăхпа, тĕрлĕ символпа палăртма тивнĕ. «Хапха», «Чĕн тилхепе», ытти хайлавсемшĕн кăна мар, «Çаран çинче» очеркшăн та палăрăмлă ку.

Очерк кăшкарĕпе сюжечĕ ĕлĕкхипе хальхине танлаштарни çинче ӳтленсе хывăнаççĕ. Иртнĕ пурнăçăн синкерĕ, паянхипе çутă пуласлăхăн тăтăрхи, вĕсемпе кĕвĕллĕ юрăçемĕ кăшăллать ăна. Хайлавра Тутар çĕрĕн Аксу районĕнчи тĕне кĕмен чăвашсен авалхи нуши-терчĕ, пулас пурнăçăн хавхи, «çутă социализмăн» тивлечĕ никĕсре. Анчах паянхи (çĕнни) тикĕссĕн шумасть иккен, тĕрлĕ тумхах тем чухлех унта. Çыравçă çакна тӳрех пейзажпа систерет: «Чĕтревлĕ лачака, хĕрлĕ хурăнлăх... Хăймаллă кăвак пĕлĕт. Текерлĕк нăйкăшать кӳлĕсем çинче. Савăк та, кичем те...»[10]

Колхоз çаранĕ çинче çичĕ çын карталанса утă çулать. Çичĕ çава, çичĕ тĕслĕ сас, çичĕ тĕрлĕ çын. «Çава сасси — çын тĕсĕ», — палăртать калавçă. Çава сасси уншăн çын кăмăлне, вăл мĕнле çын иккенне кăтартакан паллă. Кашни çулакана çав сасă тăрăх хак парса пырать вăл. «Акă çава сасси. Тăсăк, виçеллĕ, хисеплĕ, сивĕ. Йăпатмасть, ăшăтмасть чĕрене. Паллатăп. Пуçар çави, пĕлетĕп çави тăрăх çыннине»[11]. Чăнах та çави сассипе пĕр кĕвĕллĕ çын иккен Пуçар кăмăлĕ. Бригадир вăл. Яштака, илемлĕ пит-куçлă каччă. Вăйпиттискер, яланах хастар, ялан малта. «Ăслă, çивчĕ, сăмахĕ ялан витĕмлĕ те вырăнлă». Колхоза кайран кăна кĕнĕ иккен, анчах хăй кăмăлĕпе мар, çын унран иртнинчен вĕчĕрхенсе. Ĕç кунĕшĕн, чапшăн çуннăран кăна тăрăшса ĕçлет каччă. Юратура та çавнашкал. Савнă хĕрне — Эрнеçе — чĕрине уçса паман вăл, хăйĕн кăмăлне пытарнă. «Чĕре те çук, кăмăл та çук», — хаклать ăна çыравçă.

Ун хыçĕнчи çава уççăн, ăшшăн, çинçен янăрать. Этемми те çавнашкал кăмăллă иккен, хаваслă. Пурте ăна тивĕçтерет,

çавăнпа телейлĕ Элмеш. Уйрăммăн, хĕр кулли, купăс кĕвви пек янрать Эрнеç çави. Тяпук кичем, хаяр этем-мĕн. «Ахăртнех, этемми те çавăн йышши пуль. Çави сасси те хирĕнчĕклĕ», — хаклать ăна Еллиев. Кашни çава сассипе çапла танлаштарулла-шайлашулла хак парса, геройсен шалти тĕнчине уçса пырать. Кашнинех ушкăнри пур çынпа тата пĕр-пĕринпе танлаштарать. Пуçарпа Элмеш, акă, хире-хирĕçле сăнарсем. Айслупа Эрнеç те çавах. Уçă кăмăллă, пуриншĕн те пăшăрханакан Айслу инке пурне те юратать, хĕрхенет. Анчах мĕншĕн юратнине хăй те пĕлмест. Эрнеç вара хăйне ачашласан çеç çынпа аван иккен. Хăйне савсан кăна çынна юратать, ĕçре те хăй ĕçĕпе кăна йăпанать. Кăтьăкпа Тяпук сăнарĕсенче шайлашулăх тĕпре. Иккĕшĕ те çынна юратмаççĕ вĕсем, хаяр, сивлек этемсем. Ĕçлекенсенчен кашнийĕ колхоз çине тĕрлĕ пăхать. Айслупа Элмеш çĕнĕ пурнăçа, колхоз йĕркине чун-чĕрепе йышăннă пулсан, ыттисемшĕн харпăрлăх туйăмĕ вăйлăрах.

Кăтьăка, акă йывăр шухăшсем канăç памаççĕ. Нимĕн те кăсăклантармасть ăна. Чарлан кăшкăрни те, хĕвел хĕртни те, ĕç хавалĕ те. Колхоз йĕрки тарăхтарать. Хресченсене вăл пулăпа танлаштарать. «Пире вĕт, пире, кӳлĕ пуллисене, кĕртрĕç те ячĕç чĕрĕ юхăма. Юхать юхăм шыв, кĕрлет, пăтранать... Ăçта кăларса пăрахĕ çĕнĕ шыв хумĕ?» — канăçсăрланать вăл. Колхозăн малашнехи шăпи пăшăрхантарать ăна. Пĕрлешӳллĕ хуçалăх уншăн халь салтайми тĕвĕ. «Эх, çыхрĕç, пурантарчĕç пурнăçа. Вĕçне нихăçан та шыраса тупас çук пек. Тĕвĕ хушшине хĕстерчĕç пире...»[12] — тет колхоза кĕнĕшĕн ӳкĕнсе. Çитменне, кулаксем хăратаççĕ иккен ăна. Кусем ирĕкре пулнăшăн ăмсанать вăл. Ĕçлес килмесĕр колхозра, шухăшĕсене çынна уçмасăр.

Тяпук та иртеннех кăмăлсăр. Колхоза кулаксене тавăрас тесе кĕнĕскер, ĕçшĕн хыпса çунмасть. Ĕçленĕçемĕн кăмăлĕ пăсăлса пырать, пурте хирĕçтерет, кĕвĕçтерет. Çави мукалса çитнĕ, анчах ăна лапаткалас килмест. Хăй хыçĕнчи Кăтьăк хăваласа çитни уртарсах ярать. Çилли тăвăлса çитнĕскерĕн, «темĕскер капланчĕ Тяпук ăшĕнче, тăвăнчĕ, пыра ларчĕ». Юлашкинчен çавине таçта çити ывăтса ярса, колхозпа ăна ертсе пыракансене вăрçма тытăнать. «Тата пĕр самант çеç — хатĕр тĕнче илтĕнмелли, этем курман, çын илтмен чăрсăр харкашу хускатма. Тăвăнать пĕтĕмпех этем»[13], — пĕтĕмлетет

çыравçă ĕç-пуç, кăмăл тăрăмĕ чи хĕрсе çитнĕ вăхăтра. Çитменне, председатель çунакан вут çине краççын сапать: Тяпука тата хытăрах уртарать. Чунĕ тăвăлса çитнĕ хресчен ун çине сиксе ӳкет, колхоз ертӳçисене çĕнĕ улпутсемпе танлаштарса питлет.

Психологизм мелĕпе пĕрле автор пейзажпа усă курать. Çут çанталăкĕ, ӳсен-тăранĕ, хĕвелĕ, вăхăчĕ — пурте чĕрĕ хайлавра. Курăкĕ, акă, куçран пăхать, кĕтет, çын элекне итлет. Вăхăт чупать. Хĕвел чупать. К.Ивановшăн пекех, Еллиевшăн та Хĕвел пысăк пĕлтерĕшлĕ. Асланăн та пур Хĕвел сăнарĕ. Анчах тетралогире ку сăнар хăй халлĕн ĕçлеймест, Еллиев вара çакна ăнăçлă тума пултарнă. К.Ивановăн «Нарспи» поэминчи майлах, Хĕвел сăнарĕ геройсен ĕçĕ-хĕлĕпе, шухăш-кăмăлĕпе, чун тăрăмĕпе параллеллĕ хывăнса пырать унăн произведенийĕсенче. Ĕç пуçланнă вăхăтра, ир кӳлĕм, ăшшăн пăхать вăл ĕçлекенсем çине. Кун иртсе пынăçемĕн, ĕç-пуç улшăннăçемĕн вăхăтпа пĕр тан чупать. Герой чунĕ тăвăлса пынă май «Хĕвел йĕрнĕçем йĕрет вутлă шăлне. Мукалнăçем мукалать çава. Тулнăçем тулать ăшра вĕри çилĕ»[14]. Психологилле параллелизмпа, градаци мелĕпе йĕркелесе пырать ăна çыравçă. Хĕвел сăнарĕ герой кăмăл-туйăмĕпе, чунĕпе пĕр кĕвве хывăнать. Тяпук кăмăлĕ çаврăнсан, «Хĕвел тин ăшшăн пăхма пуçларĕ».

Çĕнĕ пурнăç çуратнă Ĕç сăнарĕ очеркра колхозниксене пĕр йыша пĕрлештерет, çĕнĕ психологи çуратать. Ушкăнĕ пĕрле пулсан та, ун çине кашнийĕ хăйле пăхать. Пуçарпа Эрнеçшĕн ку — чапа тухмалли мел. Çак тĕллеве пăхăнса тăрăшаççĕ вĕсем. Çутă пуласлăхпа хавхаланса, тăрăшса ĕçленипе кăна ăна çывхартма пулнине ĕненсе ĕçлеççĕ Элмешпе Айслу. Ĕçе пурнăçа лайăхлатмалли мехел пек ăнланаççĕ. Тяпукпа Кăтьăк чунĕсене хытарса, хăйсене хăйсем хĕнесе кăна тăрмашаççĕ — пĕрлехи ĕç тарăхтарать вĕсене. Кахал Пархун нихăçан та ĕçе юратман, йышра та çав кăмăлне пăрахаймасть. Ыттисен шучĕпе ĕç кунĕ илес хаваллă. Тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ Ĕç сăнарĕ хайлавра: çынсене пĕрлештерет, чуна канлĕхпе хавхалану кӳрет, ăш-чике тăвăнтарать, ятлаçтарать.

Икĕ йĕрпе тытса пырать çыравçă хайлавне, çĕнĕ пурнăçа ырлани (ку уççăн палăрса пырать) тата колхозлă пурнăç йĕркин, пĕрлĕхлĕ ĕçĕн тӳнтерле енĕсем (авторăн куна

пытарарах тытса пыма тивет). Ытти произведенийĕсемшĕн те курăмлă çакă («Кĕтмен хăна», «Хастарлăх», «Стахановец çулĕ» т.ыт.те). Пытарма тивнĕ йĕр очерк тăршшĕпех хывăнать. «Ĕç пултарулла пултăр — ытти унтан...» — тет автор, уйрăм çын пурнăçĕ мар, ĕç малта пулнине систерсе. «Лайăх пурăнма çак тĕнчере. Тата лайăх ушкăнпа, ушкăн ĕмĕчĕпе, ушкăн хавасĕпе пурăнсан», — ытарлăн вăлтать вăл çынсем пĕринчен тепри юлмасăр, робот е машина механизмĕ пек ĕçленине кăтартса. Вĕсене çын теме те çук: «Пилĕк çын сулăнать те сулăнать. Çук пилĕк çын. Пур пилĕк кăкăр, пилĕк ала, пилĕк çава... Те юхатăн, те вĕçетĕн... Нимĕн те туймастăн!»[15]

Çĕнĕ пурнăçăн тӳнтерлĕхĕсене пĕр тĕвве тĕвĕлесе хайлав вĕçĕнче çапла пĕтĕмлетет: «Йĕрке вĕт хăвалать. Йĕрке вĕт хутшăнтарать. Çулакансем хутшăнса, пĕр-пĕрне хистесе, йĕрке хистенине итлесе чăмăртанса тухнă пекех... Мĕнпур колхоçнĕк, мĕнпур ĕç халăхĕ юлашкинчен тухĕ аслă ĕçсен вĕçне, ырă, çутă социализăма» (палăртни авторăн). «Çакăн пек шухăш кĕрет пуçа»[16], — тесе хурать юлашкинчен çыравçă, «айăпне» хăйĕнчен сирсе.

Çапла вара, икĕ çыравçă социалла чăнлăха икĕ тĕрлĕ сăнланă. Пĕрремĕшĕ — Аслан — çакна илемлĕхе политика шухăшĕсемпе улăштарса, идеологи схемине тĕпе хурса тунă. Иккĕмĕшĕ çав илемлĕхе, эстетикăна мала кăларнă, хайлавĕсене пурнăç йĕркин шалти туртăмне курса ăсталанă. Илемлĕх нормисене çирĕп тытса пынăран Еллиев сăнарсене туллин уçма пултарнă. Эстетика принципĕсене политикăпа, тенденцилĕхпе улăштарнăран Аслан тетралогийĕн пахалăхĕ вара сисĕнмеллех чакнă; характерсем, сăнарсем вĕçне çитиччен туллин уçăлайман. Çиелте выртакан енсене ытларах палăртма тăрăшни Аслана сăнар логикине уçма чарнă. Еллиевăн пултарулăх шăнăрĕн тĕп паллисем — «пĕчĕк», мĕскĕн çын шăпине кăтартасси, çавăнпа пĕрлех çынлăхпа гуманизм, трагизм пулсан, Асланăн — общество тăрăмне палăртасси, истори событийĕсене мала кăларасси.

Статьяра тишкернĕ произведенисенчен çакă курăнать: ку тапхăрти ял сăн-сăпачĕ тĕрлĕ пулнă, çакă уйрăм сăнарсенче палăрнă. Кунта эпир икĕ çыравçă пултарулăхне кăна тĕпчерĕмĕр. Ыттисенне (çӳлерех асăннă авторсенне) те пăхса тухсан тата анлăрах пулмалла. Вĕсенче идеологи маларах тухса

пынă пулсан та, характер уйрăмлăхĕсене палăртса хăварни нумай пĕлтерĕшлĕ. Уйрăмах колхоз проблемипе çырнă хайлавсемшĕн палăрăмлă ку. Тĕрлĕ психологие кăтартнă вĕсенче авторсем. Хресчен колхоза мĕнле сăлтавпа кĕниех, акă, куна аван çирĕплетет. Куртăмăр ĕнтĕ, С.Асланпа Е.Еллиев произведенийĕсенче те тĕрлĕрен вĕсем — татăклă утăм тума хистекен сăлтавсем. «Аслă çул» тетралогири Макаршăн колхоза кĕмелли тĕп сăлтав — тантăшсем колхоз председательне (хăйĕн тăванне) амантни. Еллиевăн «Хапха» калавĕнчи Праккишĕн ку — хăйĕн тĕрекне иртнинче (уйрăмах граждан вăрçи вăхăтĕнче) курни. «Алла-аллăнри» Кузьма Степанович, «Çаран çинче» очеркри Айслупа Элмеш йышши хресченсем колхоз йĕркине чун-чĕрепе йышăннă. Çак хайлавсенчи Сантăр, Пархун пеккисем унта ыттисен хуттипе пурăнас хаваллă. Çынран юлас мар, ялпа пĕрле пулас тесе кĕрекенсем те пур иккен. Тарăху, вĕчĕрхенӳ туйăмĕ те çак утăма тума хистет персонажсене. «Çаран çинче» очеркри Пуçар, акă, çынсем хăйĕнчен иртнишĕн вĕчĕрхенсе кĕрет колхоза. Çак хайлаври Тяпук кулаксене тарăхнăран пĕрлешет ку йыша. «Пĕр кун» пьесăра, «Çĕнĕ хак» калавра, ыттисенче те пур кунашкал сăнарсем. Ĕлĕк пуян шутланнă çынсен вара хăйсен уйрăм сăлтав. Колхоза, çĕнĕ пурнăçа сăтăр тăвас шутпа кĕреççĕ вĕсем унта. «Алла-аллăнри» Лисор чееленсе, хăйне чухăн пек кăтартса колхозник пулать. М.Трубинан «Мучар» повеçĕнчи Мучар та çавах. Т.Петĕркки «Çĕнелнĕ тымарĕнчи» кулаксем — «юссем» — колхоза чи малтан кĕреççĕ. Çапла вара тĕрлĕ çын, тĕрлĕ характер, тĕрлĕ психологи сăнарланать хайлавсенче. Çакă тĕпчеве анлăлатма, каярахри тапхăрсемшĕн курăмлă проблемăсене хускатма май парать.

**Усă курнă литература**


[1] Краткая литературная энциклопедия. М.: СЭ, 1972. 359 с.

[2] *Федоров Г.* Сăнарлă сăмах шыравĕ. Шупашкар, 1996. 114 с.

[3] *Хлебников Г.* Современная чувашская литература. Шупашкар, 1971. 62 с.

[4] *Яковлев Ю.* Е.Еллиевăн прозăри пултарулăхĕ //Хальхи чăваш литературин: илемлĕ ăсталăх ыйтăвĕсем. Шупашкар, 1990. 66 с.

[5] *Федоров Г.* Асăннă ĕç. 70—71 с.

[6] *Яковлев Ю.* Асăннă ĕç. 65 с.

[7] *Еллиев Е.* Суйласа илнисем. Шупашкар, 1973. 57 с.

[8] *Федоров Г.* Асăннă ĕç. 167 с.
[9] *Яковлев Ю.* Асăннă ĕç.
[10] *Еллиев Е.* Çаран çинче //Трактор, 1933. 5 №. 3 с.
[11] Çавăнтах. 4 с.
[12] Çавăнтах. 11 с.
[13] Çавăнтах. 17 с.
[14] Çавăнтах.
[15] Çавăнтах. 19 с.
[16] Çавăнтах. 21 с.

# Е.ЕЛЛИЕВĂН ПИЧЕТЛЕНМЕН СĂВВИСЕМ

**А.А.Тимофеев**

Ефрем Еллиевăн пултарулăхĕ нумай енлĕ. Вăл прозаик та, публицист та, критик та, тăлмач та, сăвăç та. Тĕпчевçĕсемшĕн унăн çирĕм çичĕ сăвви паллă. Чылайăшне (15 сăвă) автор 1931 çулта çырнă. Çав сăвăсенчен хăй пурăннă чухне «Чăваш поэтне»[1] ятли кăна пичетленме пултарнă, ыттисем кун çути курайман. Сăвăç çуралнăранпа тăхăр вунă çул çитнĕ кунсенче тепĕр ултă сăввине «Хирĕнет чĕре тем илтсе» ярăмпа Юрий Яковлев тĕпчевçĕ «Хыпар» хаçатра ум сăмах çырса[2] пичетлесе кăларчĕ.

Мĕншĕн пичетленеймен-ха Ефрем Еллиевăн сăвви хăй пурăннă чухне? Ытти авторсен çав вăхăтра çапăннă сăввисемпе танлаштарса пăхсан хуравĕ хăвăртах тупăнмалла пек. Акă еплерех сăнланă вăл вăхăтри пурнăçа чăваш поэчĕсем. Николай Шелепи:

Уйрăм хуçалăхлă
Пуян хуçасен
Тискер чуралăхĕн
Юнлă сăнчăрне
Ĕç халăхĕ çапла
Çĕмĕрĕ çапса.
Çапла килсе çитĕ
Хурçă çиçĕмлĕ
Çĕнĕ, çутă сăнлă
Коммунизм,
Чаплă та илемлĕ
Чăнлăх самани[3].

Иван Малкай:

Хăштик-хăштик
Васкать пуйăс.
Станцине çитесшĕн.

Канас темĕ
Пăравусĕ —
Эп утарнĕк тесшĕн[4].

Уйăп Мишши:

Пулин
Песыменски пек,
Шарăв пек пултăр,
Вăл маншăн та тĕрĕс,
Вăл маншăн та юлтăр:
Куллен перона
Хут çинче эп хăйрам —
Малтан комсомолец эп,
Сăвăç —
Кайран[5].

Андрей Петтоки:

Трам-тара-рам...
Трам-тарам...
Тарам...
Тарам...
Трам...
Кăвак тĕтрен
Явçать умра,
Сарлать тавра,
Ирлет шавра:
— Ас илĕм:
Вилĕм...
Хĕм...
Ак — инçетрен
Сассем чĕрлеç,
Сăр-сăр чĕрлеç,
Тавра ирлеç:
Трам... тăр-тăр-тăр-р-р...
Трам-тăр-р-ррр...
Трам...
Там...
Трам-тар...
Трам-там...
...Тĕпкомăн пленăмĕ...
Токлат...
«Пĕрремĕш пилĕкçуллăх иттокĕсем.

Токлатчĕк — Сталĕн...
...Польшевикла
Иртейрĕмĕр хуса çитсе...»[6]

Василий Шевлин:

Пăрахут сасси янрарĕ,
Эххă карĕ ӳхĕрсе.
(Пăрахутăн мăн çăварĕ
Тӳлек илчĕ ӳсĕрсе)[7].

Çав параппан тата туттурут сассиллĕ самана чăнлăхне уçса пама Ефрем Еллиев пачах урăх сăрсем тупать:

Тĕшĕрмен лантăш шурă чечекне,
Ӳкеймĕ пуçăм чĕрçитти çине.
Пăхаймĕ куккук ĕмĕр юмăçне,
Кураймăп текех эс йăл кулнине.

Урамри пĕрене кичем выртса
Ӳстерĕ вĕлтрене эпир çукран.
Сĕлĕ кĕлти пек сар çӳçне ухса
Ирхи тĕлĕк пек çухалтăн куçран[8].

Поэтăн тепĕр сăвви, «совет вăрманĕнче выçă кашкăр уламасть» текен чарулла, хушулла саманара çуралнăскер, ун чухнехи çамрăк çыннăн кӳтсе çитнĕ кăмăлне тата витĕмлĕрех уçса парать:

Вĕл-вĕл вĕçкелет кĕрхи çулçă,
Тăлăха юлнипе хуйхăрать:
Хаяр çил, çилĕллĕ хуралçă,
Татса хирелле хăвалать.

Тулларĕ çавра çил пуш хире,
Çулçа илсе кайрĕ таçта.
Эпир те çулçă вĕт тĕнчере,
Вĕçетпĕр — пĕлместпĕр ăçта.

Мана та темле вăй хускатрĕ,
Пăрахрĕ тĕнче юхăмне.
Пурăнăç хурлăхне кăтартрĕ,
Сахал палăртрĕ ырлăхне[9].

Ку сăвва вăл хăй çирĕм тăваттă тултарас умĕн сакăр кун маларах çырнă. Çамрăклăх — телейлĕ вăхăт. Пĕтĕм çĕршыв «хĕпĕртесе» пурăннă чух хăйĕн уявĕ умĕн Е.Еллиевăн та

савăнăç юрри юрламалла пек. Çук иккен, çавра çил ункине лексе унăн ĕмĕчĕсем тĕнче тăрăх ыткăнаççĕ: «Вĕçетпĕр, пĕлместпĕр ăçта».

Чăваш поэзинче мĕнле сăвăç кăна сăнланăман-тăр улăхри çава тытнă çынсен ĕç илемне. Кашнин сăввинченех савăк кăмăл тапса тăрать. Ефрем Еллиевăн «Утă çулни» сăвви вара вулавçăсен чунĕсенче хурлăхлă туйăм çуратать.

Лачака та шурлăх,
Мăн кăвак тӳпе.
Макрать шур хурăнлăх
Ешĕл çеçкипе.

Нăйкăшать текерлĕк
Ăшĕ çуннипе.
Инçе вĕçрĕ тĕлĕк
Çава сассипе.

Юрласа — тикĕтсĕр —
Тайăлать кăрман.
Яш-кĕрĕм хеперсĕр
Тухать улăхран[10].

Сăвăç хайлавĕсенче час-часах тăкăнакан çеçке, ӳкекен юр пĕрчисем, шурă тупăк сăнарланать. Паллах, вăл вăхăтри «Днепрострой»[11], «Колхозниксен маршĕ»[12], «Социализм ирĕ»[13], «Çĕр йĕркелӳ»[14], «Магнит ту»[15] йышши хавхалануллă хайлавсемпе тулса ларнă чăваш хаçат-журналĕ Ефрем Еллиевăн «тăм тивнĕ», «мукалнă» чĕлхеллĕ сăввисене хапăлах пулман-тăр. Ун чухнехи пичет Митта Ваçлейне «Надсонсенчен», Хусанкая Есенинран, Илле Тукташа Фетран «вĕренме пăхнăшăн»[16] ятласа хытарсах тăнă та, тен, Е.Еллиев хăй те килĕшмен-тĕр «мещенле индивидуализмпа сăрхăннă» сăввисене çавнашкал мухтав юрриллĕ хаçат-журналта курма? Ахальтен çырмасть-тĕр хăйĕн кăранташне кăна шанса калакан кун кĕнекинче: «Халĕ упадок: литература та, искусство та, пĕтĕмĕшпех. Мĕншĕн? Ăçтан та чарак! Искусство чăтмасть чарака...»[17] — тесе. Çав чарак «халăхсен çулпуçĕ» аллинче пулнине Е.Еллиев витĕр курса тăнă, кун кĕнекинче Сталин ятне вăл темиçе вырăнта та куларах асăнать. «Ан çухăрăр! Хуллен каласан та илтетпĕр», — тет поэт 30-мĕш

çулсем ячĕпе мухтав юрри юрлакансене шахвăртса хăйĕн «Уç çыру — чăваш писателĕсем патне вулакантан» статйинче[18].

Ефрем Еллиев сăввисем ыттисен хайлавĕсенчен содержани тĕлĕшĕнчен кăна мар, форми тĕлĕшĕнчен те уйрăлса тăраççĕ. Поэт упранса юлнă çирĕм çичĕ сăвăран улттăшне — сакăр, вунă тата вуникĕ сыпăклă силлабика техĕмĕпе, ыттисене тоника витĕмĕпе çырнă. Тепчевçĕсемшĕн паллă, ун чухнехи сăвăçсенчен чылайăшĕ сăввисене силлаботоника виçисемпе калăпланă. Çичĕ сыпăклă силлабика мехелĕпе çыракансем те пĕтсех кайман-ха.

Чăваш поэзийĕ валли çĕнĕ формăсем шыранине Е.Еллиев хăй çапла ăнлантарать: «...Вĕсен (вырăссен. — *А.Т.*) 200 çулхи литература. Вулакана вĕсен яка çепĕç тоника системи (силлабо-тоника тытăмĕ çинчен сăмах пырать. — *А.Т.*) çапах йăлăхтарнă, хускатми, пăлхатми пулнă. Вĕт Пушкинтан вара пĕр тĕрлĕ. Пушкинтан вара вырăс поэзийĕ пысăк улшăну курман. Вĕсене çавăнпа çĕнĕ, кĕмсĕркке, чуна витерекен мелсем кирлĕ. Ахаллĕн хускатас çук вулакана. Вĕсем çавсене шыраççĕ те. Маяковский Пушкинтан мала çуралайман. Малтан Пушкин çуралмалла пулнă, унтан тин Маяковскин хăйĕн ораторлă сăввисемпе. Пирĕн вара? Пирĕн Пушкин та çуралманха. Пирĕн хальхи литература вырăссен Пушкинченхи литератури çеç (ăсталăх енчен илсен калатăп)... Мĕн тĕрлĕ хитре юрă пулсан та, пĕр май ĕнĕрлесен юлашкинчен йăлăхтарать; хăть те мĕнле усăллă, вырăнлă тема та пĕр май шăйăрттарсан, пĕр манерлĕ çутатсан пăлхатми, хускатми пулать»[19].

Е.Еллиевăн упранса юлнă сăввисенче «çĕрĕк ăвăс», «вăйсăр алă», «çĕрти пылчăк», «çаврa çил», «хура пĕлĕт», «хурлăх чăмăркки», «юн ялав», «вĕçкĕн кăмăл», «мĕскĕн суха», «хĕсĕк алăк», «çĕленлĕ кулăш», «муза черкки» кăна мар, «шурă улмуççи» те, «пĕчĕк шăпчăк» та, «акăш карти» те, «кăвак тӳпе» те, «шухăш кӳлнĕ шур урхамах» та, «хĕр пек улăх» та тĕл пулаççĕ. Урамра «кичем выртакан» пĕрене вĕлтрен те ӳстерет. Эппин вĕлтрен çинчисем те пулĕç. «Çамрăк юманĕ» те сĕткен пухать поэтăн. «Çӳхе тута» та илĕртмест мар ăна. «Çитес илем» те çавăрать унăн «шухă пуçне»...

Савсам мана, тăван Сĕнче!
Савса уç кăкруна.
Çӳçентер-ха тĕнче çинче
Аташнă ывăлна.

Çĕмĕрт кăкри чечек сапса
Пир сарать çул çине.
Пилеш тĕми вĕрсе сурса
Вăй кӳртет чĕрене.

Çеçке сарса чĕнет çумне,
Куçне хĕсет çырла.
Пуçна хурса чечек ăшне
Тĕнчене ан хурла[20], —

тет поэт юлашки умĕнхи сăввинче.

«Чăвашсен Ивановпа Çеçпĕлсĕр, Хусанкайпа Миттасăр тата Айхисĕр пуçне урăх никам та çук» тенисем хаçатсенче пĕрре мар пичетленчĕç. Сăвăç калашле, пуçа «хурса чечек ăшне» тĕнчене чухăнлатар мар-ха. Чăвашсен Ефрем Еллиев поэзийĕ те пур.

**Усă курнă литература**


[1] *Еллиев Е.* Чăваш поэтне //Сунтал, 1931. 6 №. 28 с.

[2] *Яковлев Ю.* Чăваш литературинчи çынлăх Атланчĕ //Хыпар, 1997. Кăрлачăн 24-мĕшĕ.

[3] *Шелепи Н.* Çĕнĕ тĕнче //Сунтал, 1933. 2 №. 17 с.

[4] *Малкай И.* Пуйăс çинче //Сунтал, 1933. 2 №. 17 с.

[5] *Уйăп М.* Комсомолец эп //Çамрăк вăй. Шупашкар, 1931. 15 с.

[6] *Петтоки А.* Романтĕкле тĕлĕрӳ //Сунтал, 1933. 2 №. 2 с.

[7] *Шевлин В.* Атăл çыраньнче //Сунтал, 1933. 3—4 №№. 28 с.

[8] Еллиев Е. ЧПГĂИ ĂА, V уйр., 1565 упр. ед., 8712 инв. №.

[9] Çавăнтах. Ку сăвва Ю.Яковлев тĕпчевçĕ «Хыпар» хаçатăн 1997 çулхи кăрлачăн 24-мĕшĕнчи номерĕнче хатĕрлесе кăларнă.

[10] Çавăнтах.

[11] *Уйăп М.* Днепрострой //Сунтал, 1933. 3—4 №№. 10—12 с.

[12] *Ухсай Я.* Колхозниксен маршĕ //Сунтал, 1933. 5 №. 8 с.

[13] *Пушкай Л.* Социализм ирĕ //Сунтал, 1933. 5 №. 21 с.

[14] *Хусанкай П.* Çĕрĕркелӳ. Шупашкар, 1933.

[15] *Хусанкай П.* Магнит ту. Шупашкар, 1933.

[16] *Нямань М.* Уйăп Мишшин пултарулăхĕ çинчен //Сунтал, 1933. 3—4 №№. 28—31 с.

[17] *Еллиев Е.* ЧПГĂИ ĂА, V упр., 1565 упр. ед., 8712 инв. №.

[18] *Еллиев Е.* Уç çыру — чăваш писателĕсем патне вулакантан //Трактор, 1933. 7 №. 144—151 с.

[19] Çавăнтах. 156 с.

[20] Еллиев Е. ЧПГĂИ ĂА, V уйр., 1565 упр. ед., 8712 инв. №.

# ЕФРЕМ ЕЛЛИЕВĂН ДРАМАТУРГИРИ ШЫРАВĔСЕМ

**Е.Р.Афанасьева**

Кашни тапхăр хăйĕн улăпĕсене çуратать теççĕ. Çавăн пек улăп XX ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенчи чăваш литературишĕн тивĕçлипех Е.Еллиев пулнă тесе калама май пур. Унăн ытарлă сăмахĕ — ахах евĕр, кашниех тупайман ăна. Çавна пула-тăр паянхи вулакан валли упранса юлайнă та унăн хайлавĕсем. Шухăшне паянхи куна илсе çитерсе, актуаллăхĕпе çĕнĕрен çырăнакан хайлавсемпе тупăшма пултарчĕç. Театр сцени çинчен çĕнĕ сасăпа янăрама вăй çитерчĕç.

Паянхи куна виçĕ пьесине пĕлетпĕр унăнне. Вĕсенчен «Пĕр кун» пьеси 1934 ç. «Сунтал» журналта пичетленсе тухнă, каярах вăл унăн 1973 çулта кун çути курнă «Суйласа илнисем» пуххине кĕрет. «Çухалнă телейсем» (1934—37 çç.) тата «Çамрăксем» (1937—38 çç.) драмăсем гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн архивĕнче упранаççĕ, халиччен туллин пичетленмен. Еллиев тата тепĕр пьеса çырни паллă. Ăна автор 1941 çулхи конкурса тăратнă иккен, анчах та вăрçă пуçланнă пирки «Эрхип» (е «Энтип»?) пьеса çухалнă.

Ефрем Еллиевăн драма туртăмĕ вăйлă пулни куçкĕрет, мĕншĕн тесен вăл пьесăсене çырнă кăна мар, вĕсене сцена çинче те лартнă. Аксури педагогика училищинче ĕçленĕ вăхăтра вăл унта драма кружокĕ йĕркелет, ăна хăех ертсе пырать, кружок валли пьесăсем çырать. Тăван ялĕнче клубри драмкружокпа та çыхăну тытать. Хăй çырнă пьесăсене клубри драмкружокра е Аксури училищĕре вĕренекенсемпе лартать, вĕсене халăх мĕнле йышăннине сăнать. Çакă ăна драма ăсталăхне тата ытларах туптама май парать.

«Ку пьесăна «Мĕншĕн?» тесе ят пама та пулать, — çырать Еллиев хăйĕн «Çухалнă телейсем» драмăн ум сăмахĕнче

(Çамрăксен театрĕн сцени çине ăна В.Оринов режиссер «Пирĕн телей çавнашкал» ятпа кăларчĕ). — Мĕншĕн чăваша йăваш тенĕ; мĕншĕн чăваша кăнтăрла иртсен кăна ăс кĕрет; мĕншĕн чăвашăнне кĕнекине ĕне çинĕ; мĕншĕн чăваш тĕшмĕшлĕ пулнă; мĕншĕн чăваш хытă; мĕншĕн «турă çырнисем хăй çапла», мĕншĕн?..

Чикĕсĕр пусмăр айĕнче пурăнакан халăх кăна çапла калама пултарнă.

Пĕр хурав: пусмăр».

Епле пысăк ырату туятпăр çак сăмахсенче, тăван халăх çинчен шухăшласа чуна ыраттарни!

Măш та ан ту, пăш та ан ту,
Ан калаç,
Ан илт,
Ан кур!
Эс чĕлхесĕр,
Эс хăлхасăр,
Эс чĕресĕр те ӳпкесĕр,
Эс ухмах! Çакна манмасăр
Пурăн!
Чĕлхӳне татаççĕ — эсĕ măш! кăна,
Тăванна таптаççĕ — эсĕ пăш! кăна.

(Иосиф Дмитриев)

Мĕскĕнлĕхпе те айванлăхпа кăна витсе пытарма, курмăш пулма юрамасть наци çитменлĕхне, наци чирне. Ăна саспа каласа, çиеле кăларса сиплемелле.

Пьесăри Çимун: «Чăваш вĕт вăл — йăваш халăх», — тет. «Çавăнпа вăл пусмăр айĕнчен тухаймасть те», — тесе каласшăн Еллиев. Йăлăнать, хăйĕнчен култарать, хăйне хисеплемест, таса пурăнмасть. «Чистă сан. Чăваш тесех сана калаймăн», — тет стражник Çимун пӳртне кĕрсен. Юлашки укçине хупаха кайса ĕççе ярать е тата, инкек çитсен, «кăнтăрла иртсе ăс кĕрсен», пуçне мăйкăча кайса чикет. Драмăри Çимен çакăнса çемйине выçлăхра хăварать. Мĕншĕн-ха чăваш çав териех вăйсăр? Мĕншĕн вăл хăйшĕн тăма пултараймасть? Хуравĕ те паллă. Мĕншĕн тесен чăвашăн пĕр-пĕрне пулăшас йăла çук, пĕри теприне путарасси вара — ытлашшипех. Пьесăри пуян Çимун хăй патне Ерçен вĕренме кайма укçа

ыйтма пырсан: «Сухапуç лайăхрах тытма вĕренмелле. Вĕренес тесен пĕр тенкĕ те памастăп», — тесе касса татать.

«Кашни чăваш пайтах пĕлни, ытларах пĕлме тăрăшни пурте чăваш халăхĕн пӳлмине кĕрет, ăслăлатать, пуянлатать», — çырать Ефрем Еллиев кун кĕнекинче.

Пьесăри Кĕтерук Чĕмпĕре вĕренме каять: «Тен, эсĕ те пулин телейлĕ пулăн-и?» — тесе ăсатать ăна амăшĕ.

Е.Еллиевăн пур пьесине те телей ыйтăвĕ витерсе тăрать. Еля телейне пуян ывăлĕ таптать, Ерçен телейĕ те авăра чăмать.

Çыравçă кăмăлĕ «çухалнă телейсем» енче, самана пусмăрне пула çухалнă телейсем енче.

«Çамрăксем» пьесăра та Ефрем Еллиев çак ыйтăвах тăсать. «Ăçта вара телейлисем?!» Пьесăна «йышран уйрăлсан этем мĕн патне çитĕ?» текен шухăш пуçласа ярать. Тĕпрен илсен, ăна виçĕ пая пайлама пулать: пĕрремĕш пайĕнче сцена — çурхи илем. Ирхине. «Çын хăй ĕçĕнче, ун шухăшне никам пĕлмен чух кăна телейлĕ». «Эпĕ хам пĕччен... пулас терĕм пурнăç патши», — тенипе геройсем кризис патне çитсе тухаççĕ. Пурнăç кризисĕ, хуçăкĕ. Çак хуçăк урлă каçасси вара — йывăр, чăрмавлă. Пьесăн иккĕмĕш пайĕ — каç. «Каç Еллиев пултарулăхĕнче — кутăн кайнă пурнăçăн метафори; самана палли» (Ю.Яковлев). Кунта вара геройсене пурнăç вĕçĕмсĕр трагеди пек курăнать. Çынсем вара вăл трагедире — сăмахсăр статистсем. Пурте кунта телей тĕлли-паллине çухатаççĕ. Виççĕмĕш пайĕнче вара геройсем коллективра, юлташсем хушшинче телей тупаççĕ. «Коллектившăн пăртак хăвăн мăнкăмăллăхна та чакармалла! Кăмăлна та пусармалла!» Колхоз тени хушма япала пек кăна кĕрсе кайнă пьеса тытăмне.

Пурнăçра йӳççипе тутли тĕлĕнмелле хутăшса пĕтнĕ. Вăл та пулать, ку та пулать. «Этем нихçан та пурнăçпа тăранмасть», — тесе вĕçлет автор драмăна.

«Пĕр кун» пьеса автор этем психологине тарăн пĕлнипе уйрăлса тăрать. Вăхăт иртнĕçем вăл епле улшăнса пыни. Кунта çын шухăша кайса хăйĕн пурнăçри вырăнне шыранине кăтартса панă.

Ефрем Еллиев пьесисенче яланах контраст хуçаланать. Çак мел ăна хурапа шурра аванрах кăтартма май парать.

Çыравçă чĕлхи сăнарлă. Вăл сахал сăмахпах пысăк шухăш калама пултарать. Репликăсем те, ремаркăсем те вăрăм

мар. Çакă вулакан ĕçне çăмăллатать, авторпа пĕрле философилле, пурнăç ыйтăвĕсем çинчен шухăшлама май парать.

Е.Еллиев лартнă ыйтусем паян та, сцена çинчен янăраса, шухăшлама пултаракан чăваш çыннине тарăн шухăша яраççĕ, мĕншĕн тесен наци ыйтăвĕ — паян кун та чи çивĕч ыйтусенчен пĕри.

«Халăх хăйĕн вăйне шансан çеç, хăйĕн туррипе çеç çĕнтерет», — тет Еллиев. Çакă паянхи чăваш интеллигенцийĕшĕн тĕпре пулмалла тесе шутлатăп.

# Е.ЕЛЛИЕВĂН КРИТИКĂРИ ШЫРАВĔСЕМ

**А.Н.Тимуков**

Ефрем Еллиевăн критика еткерĕ калăпăшĕпе пысăк мар (пичетре кун çути курнисем пурĕ те виçĕ статья çеç), анчах хăйне евĕрлĕ. Кунпа пĕрлех унăн 1932 çулхи куллен çырса пынисен кĕнеки упранса юлнă. Паллах ĕнтĕ, «Куллен çырса пынисем» пичете валли хатĕрленĕ япала пулман. Ăна эпир çыравçăн пултарулăх лабораторийĕ теме те пултаратпăр пулĕ. Унта Е.Еллиевăн чи шалти, чи хаклă туйăмĕсем, чылай чухне 30-мĕш çулсенче çĕршывра, литературăра çирĕпленнĕ политикăпа килĕшсе тăман шухăшсем ӳкерĕнсе юлнă. Çапах та, еткерĕ калăпăшĕпе пысăк мар пулин те, çирĕппĕнех Е.Еллиев-критик, Е.Еллиев-эстетик пирки калаçма сăлтав çителĕклех. Тӳррипе, ĕçĕ нумай çырса хăварнинче мар вĕтха — çырнинче хывăннă шухăшра, çав шухăш анлăхĕпе тарăнлăхĕнче: сахал-им пирĕн критикăпа литературоведени историйĕнче (20—30-мĕш çулсенче те, каярахри тапхăрсенче те) купи-купипе çырса тултарнă, пичетленнĕ критиксем? Анчах мĕн юлнă-ха вĕсенчен — пуш сăмахлă, шухăшсăр ĕçсенчен — паянхи кун валли?

Ефрем Еллиев, паллах ĕнтĕ, критик-специалист, эстетик-специалист пулман: вăл хăй хыççăн йĕркелесе, системăласа якатса çитернĕ концепци хăварман. Çапах та уншăн илемлĕ пултарулăх ĕçĕ патне тарăн ăнланулăхпа, çивĕч туйăмпа пыни курăмлă.

Мĕнрен пуçламалла-ши Е.Еллиевăн критикăри шыравĕсем çинчен калаçма? Ытларах та: Еллиев çинчен çеç мар, иртнĕ тапхăрти ытти çыравçăсем, критиксем, литература тĕпчевçисем пирки сăмахлама та? Анлă контекстсăр, урăхла каласан, çав вăхăтри илемлĕ литература тата литературоведенипе критика тĕллевĕсене, пĕлтерĕшне, тытăмне, функцийĕсене мĕнлерех курса ăнланнисĕр, çав

вăхăтрах çĕршыври пĕтĕмĕшле лару-тăрăва куçран вĕçертмесĕр, асра тытмасăр объективлă тĕпчеме ниепле те май çук. Унсăрăн пĕр енлĕ хаклавсем патне çитсе тухас, тӳнтер социологи енне сулăнас хăрушлăх тухса тăрать.

Литература аталанăвĕн 20—30-мĕш çулĕсен пуçламăшĕ тăван сăмахлăх историйĕшĕн çеç мар, литература пĕлĕвĕпе критикишĕн те уйрăмах пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнса тăраççĕ. «Время, беременное будущим», тенĕ хăй вăхăтĕнче декабристсем. Çак ытарлă, тарăн шухăшлă сăмахсем тăван сăмахлăх историйĕнчи асăннă тапхăршăн та вырăнлă: ку çулсенче илемлĕ сăмахлăх хăватлăн ӳссе çĕкленсе аталаннипе пĕрлех критика, литература вĕрентĕвĕпе историйĕ те *çĕнĕ вăй илсе малалла аталанать.*

Мĕншĕн-ха аталанать çеç мар, пусăмласах çĕнĕ вăй илсе аталанать тесе çирĕплететпĕр? Н.С.Павлов «Краткий очерк истории чувашского литературоведения и критики» тĕпчевĕнче, В.С.Эзенкин «Чăваш литературоведенийĕпе критика историйĕн кĕске очеркĕ» кĕнекинче тăван литература науки 1917 çул хыççăн тин, «чăваш партипе совет пичечĕ, чи малтанах «Канаш» тата «Çĕнĕ пурнăç» хаçатсем аталанса пынă май çуралнă» тесе çирĕплетнипе ниепле те килĕшме май çук. Литература пĕлĕвĕ XIX ĕмĕр варринчех çуралнине А.В.Васильев «У истоков чувашского литературоведения и фольклористики»[1], В.Г.Родионов «Чăваш литература вĕрентĕвĕн малтанхи утăмĕсем»[2] тĕпчевĕсенче çирĕплетсе параççĕ. Унти шухăшсем çак статья авторне те çывăх.

Маларах асăннă тухăçлă тапхăр нумай чаплă çыравçă çуратса ӳстернипе пĕрлех литература наукипе критикине туллин ĕçлеттерсе яракан М.Ф.Федоров, Е.З.Захаров (Матен), Н.В.Шупуççынни тата ытти пултаруллă ятсене кăларса тăратать.

Тăван сăмахлăхпа ăслăх историйĕнчи 20—30-мĕш çулсен пуçламăшĕн характерлă паллисенчен пĕри — илемлĕ сăмах ăстисенчен чылайăшĕ пĕр вăхăтрах писатель те, тĕпчевçĕ-критик та пулни. Çав вăхăтра литература теорийĕн, историйĕн, критикин ыйтăвĕсенчен аякра тăма май та килмен, мĕншĕн тесен ку чухне хускатнă проблемăсенчен ытларахăшĕ 20—30-мĕш çулсен çеç мар, литературоведенин ĕмĕрхи, яланхи иксĕлми ыйтăвĕсем пулса тăраççĕ: илемлĕ сăмахлăхăн, критикăн пĕлтерĕшĕ, функцийĕ, задачисем;

художникăн тĕллевĕ, унăн обществăри вырăнĕ, ытти анлă тата уйрăм ыйтусем тавра хĕрӳ калаçу-тавлашусем пынă. Çĕршывра пулса иртекен аслă улшăнусем, çынсем хушшинчи урăхла хутшăнусем, çĕнĕ идеологипе тĕллевсем — çакна пĕтĕмпех ăша хывса ăнланса илмелле пулнă. Çавна май литература пĕлтерĕшĕ те нихăçанхинчен вăйлă хăпарса каять: вăл пурнăçа тĕпрен улăштарса çĕнетме пулăшакан хăватлă вăйсенчен пĕри пулса тăрать.

«Илемлĕ литература произведенийĕсем — класс кĕрешĕвĕнчи вăйлă хĕç-пăшал. Çав вăхăтрах вĕсенче класс кĕрешĕвĕ хăй те сăнланса тĕкĕрленет.

...Литературăна — пит пысăк вăя — социализм тăвас ĕçе пăхăнтарса, ăна тума илсе пыракан çулсем çине ямалла... Илемлĕ литературăн тĕп задачи — иртнĕ пурнăçпа хальхи пурнăçри опытсене, пулнă ĕçсемпе пулса пыраканнисене аса илсе, малашнехи пурнăçа тăвас ĕçре хăйĕн мĕн пур хăвачĕпе тĕрĕс çул кăтартса пымалла...

Пирĕн илемлĕ литература социализм тăвас ĕçе пăхăнмалла»[3].

Илемлĕ литература тĕллевĕсене, пĕлтерĕшне Ефрем Еллиев критикăна кĕнĕ çулсенче епле ăнланнине куртăмăр ĕнтĕ, çавна май критика функцийĕсем мĕнлерех курăннăши çав тапхăрта? Çакна палăртса хăвармасăр Е.Еллиевăн критикăри шыравĕсем çинчен калаçни ыйтăвăн капашне ансăрлатни, ыйтăва пĕр енлĕн тишкерни пулĕччĕ.

1927 çулхи утă уйăхĕнче пулса иртнĕ ЧППА III-мĕш съездĕнче Н.Патман доклачĕ тăрăх йышăннă «Критика çинчен» ятлă резолюцире çапла çырнă: «Роль и значение критики в художественной литературе целиком и полностью совпадают с ролью и значением самой художественной литературы в борьбе классов...»[4] РКП(б) Тĕп комитечĕн 1925 çулхи «Парти илемлĕ литература енĕпе тытса пыракан политика çинчен» ятлă резолюцийĕ сăмахлăхра та, критикăра та витĕрех пусахласа тăни куçкĕрет.

Е.Еллиев ятарлă специалист-критик, эстетик пулманнине маларах палăртса хăварнăччĕ ĕнтĕ. Унăн критикăри, эстетикăри шыравĕсем илемлĕ литературăри пултарулăхĕпе таччăн çыхăннă. Вĕсем пĕр-пĕринпе уйрăлми çыхăнура тăраççĕ. Хăй çыравçă пулнă май, вăл куллен-кун пултарулăхра вăл е ку эстетика ыйтăвĕсемпе тĕл пулсах тăнă, вĕсене татса парас тесе тăрăшнă, хурав шыранă. Ытах та, Еллиев вĕсене

ытларах чухне ятарлă статьясемпе мар, хăйĕн произведенийĕсем урлă вулакан патне çитерет е куллен çырса пынисене хывса пырать.

Мĕнлерех çыхăнса тăраççĕ-ши Е.Еллиев шухăшĕсем çав вăхăтри литературăри, критикăри лару-тăрупа? Унпа пĕр кĕвĕллĕ-и вĕсем, пĕр-пĕр çирĕпленнĕ е тин çеç çуралнă концепцирен тухаççĕ-и вĕсем, е пачах хăйне свĕрлĕ уйрăм пулăм вăл?

Чи малтанах çакна палăртмалла: Е.Еллиев — чăн-чăн художник. Вăл илемлĕх саккунĕсен вăрттăнлăхне шалтан, тарăннăн туять, пĕр-пĕр япалара е пулăмра уçăмлă курăнаканни хыçĕнче куçа курăнманнине уяса илме тăрăшать. Вулакана та шăпах çавна, çыравçă пытарса, шахвăртса каланă шухăша, куртарма хăтланать вăл. Чи хакли уншăн — шырав, çырас тенине чĕре витĕр кăларса, «каламаллине калаймасăр чăтайми пулса, çын пĕлменнине пĕлтермесĕр тӳсейми пулса» çырасси, вулавçа çыравçăпа пĕрле ĕçлеттересси пулса тăрать. Ахальтен мар унăн «Куллен çырса пынисенче» çине-çинех художник тени тавра явăнакан шухăшсене тĕл пулатпăр: кам вăл чăн-чăн художник, мĕнле пĕлтерĕшлĕ пулмалла унăн тата ытти те.

«Кам вăл чăн-чăн художник?

Чăн-чăн художник хуть те мĕнле япалана та çын пек каласшăн мар, урăхларах, çивĕчрех»[5].

Еллиев калăпланă программăна, манифеста критикăра та, илемлĕ пултарура та çирĕп тытса пырать: «Чăн-чăн писатель чăн лайăх художествăллă произведенире ниме те тӳррипех каламасть, систерсе çеç... Е ĕçлет тĕплĕ, кирлĕрех енне маларах хурса...»[6]

Акă, Е.Еллиев Айзманăн «Театр» ятлă драмине тишкернĕ чухне çапла çырать: «Кăтартмасть автор, каласа çеç парать.

...Автор калас текен шухăш сĕре мăкăрăлса тăрать. ...Драма пуçламăшĕнчех, пĕрре ярса пуссанах пĕлетĕн Вуслан кам иккенне»[7].

Вăл ытарлă каланишĕн, вулакана хăйне шухăшлама ирĕк хăварнишĕн тăрать. Ахальтен мар çакна тĕпчевçĕсем (Ю.Артемьев, Ю.Яковлев, Г.Федоров тата ыттисем те) Е.Еллиев илемлĕ стилĕн тĕп енĕсенчен пĕри пулнине палăртаççĕ.

Вăтăрмĕш çулсенче чылай çыравçă индивидуаллăхĕпе пĕрлех («Юратмаççĕ халь уйрăм тĕслĕ çынна. Пурте пулмалла пĕр тĕслĕ, пĕр ĕмĕтлĕ... Уйрăм тĕс йĕкĕлтет, хăратать»)[8] илемлĕ произведенири герой хăйĕн уйрăмлăхĕ, харкамлăхĕ, хăйне евĕрлĕхĕ çухалса пырать, шаблонпа схематизм ытларах та ытларах вăй илсе сарăлса пырать. Талантлă писательсем, çав шутра Е.Еллиев хăй те, искусствăра хăйсен çулне, çын хыççăн каяссинчен асăрханса çĕнĕ ăслайсемпе мелсем шыранă: «Писателĕн чăн вăйлă тăшман — çын йĕрĕ çине туртни, вашак анаталла çĕре кусма туртни... Вăйлă писатель ăна çĕнтерет, хăйне çĕнĕ мехелсем, меслетсем шыраттарса тупать. Вăйсăрри — кусса анать те, пĕтет çавăнпа»[9]. Вĕсем пултару ирĕксĕрлĕхĕнчен мĕн пур майпа тухма тăрăшнă пулсан («...искусство чăтмасть чарака!»[10]), «иккĕмĕш ретри» çыравçăсем çак серепен авăрне ытларах та ытларах путса пыраççĕ: «Хальхи вăхăтра... Мĕн чухлĕ вăхăтлăха явăçнă çынсем, писательсем, сăвăçсем тата ыттисем»[11].

20—30-мĕш çулсенче литература теорийĕнче, критикăра илемлĕ литература функцийĕсем тĕлĕшĕпе икĕ тĕрлĕ модель йĕркеленсе çирĕпленет:

1) ăна идеологипе политика çумçакки (придаток) пек курса ăнланни;

2) чĕрĕ пурнăçа пултарулăх мелĕсем урлă тĕпчесе шырани.

Критикăра пĕрремĕш шухăша тытса пыракансен ушкăнĕ уйрăмах йышлă: кунта А.Золотова, Н.Патмана, И.Кузнецова, В.Долгова тата ыттисене те асăнмалла.

Иккĕмĕшсен шутне, паллах ĕнтĕ кунта таса эстетизм пирки сăмах пымасть, М.Федоров, Е.Захаров тата ытти хăшпĕр тĕпчевçĕсем кĕреççĕ. Е.Еллиева та çак ушкăнрах палăртмалла. Пролеткультовецсем илемлĕ литература функцийĕсене ансăрлатнине, художникăн шалти туйăмĕн, пултарулăхпа тĕнчекурăм çыхăнăвĕсене тӳнтерлетнине хирĕçлеççĕ вĕсем. Тӳрреммĕн искусство утилитарлăхĕшĕн тăракан критиксем унăн пĕлтерĕшĕпе тĕллевĕсене агитаци мелĕсемпе пропаганда шайне антарса лартнине хирĕç сăмах калаççĕ вĕсем. Анчах та, çĕршыври пĕтĕмĕшле лару-тăрупа партин илемлĕ литература тĕлĕшĕпе тытса пыракан политикине шута илсен, витĕмлĕ вăй камсем енче пулни пирки иккĕленмелли çуках ĕнтĕ.

Искусство функцийĕсем ансăрланса, хĕсĕнсе юлаççĕ: чăн пурнăçри конфликтсемпе вăхăт хире-хирĕçлĕхĕсене тĕпчени мар — идеализациленĕ пуласлăх концепцине йĕркелесси. Пурнăçа литература урлă тĕпчесе пĕлесси (гносеологи функцийĕ) çухалать, мала — пропаганда тĕллевĕ тухса тăрать. «...унăн (писателĕн — А.Т.) илемлĕ литературăн килĕшӳллĕ майĕсемпе колхозри пурнăçа, колхозри, заводсенчи çитĕнӳсене килĕшӳллĕ кăтартса парса çав çитĕнӳсемшĕн, çĕнĕ пурнăçшăн кĕрешме чĕнесси», — тесе çырать С.Ялавин[12].

Илемлĕ литуратура функцийĕсене çапла палăртни хайлав поэтикине хăех шаблонлă, схемăллă картана хупса хурать: унта конфликт мĕнле пуласси, ăна мĕнле татса парасси малтанах палла; сăнарсен йышĕ те, вĕсем мĕнлерех калăпланасси те, вĕсен хайлаври вырăнĕ те малтанах палла. Кунта кивĕ пурнăçпа çĕнĕ пурнăç, кивĕ тĕнчекурăмпа çĕнĕ тĕнчекурăм, усал сăнарсемпе ырă сăнарсен хирĕçӳлĕхĕ, вĕсен кĕрешĕвĕ. Произведенире коммунист, хастар хресчен е рабочи тата романтизациленĕ ырă илемлĕ пуласлăха хирĕç кĕрешекен сăтăрçă, тата ытти ăнлансах е айванлăха пула тăшмансен ушкăнне лекнĕ сăнарсем пур.

Е.Еллиев çавăн евĕрлĕ схематизм пирки питех те уçăмлăн, куçа тирекен сарказмпа çапла çырать: «Çыра-çыра нумай вĕрентрĕç ĕнтĕ пире. Эпир пит нумай «пĕлтĕмĕр» кулаксем çинчен, чухăнсем çинчен, вăтамсем çинчен.

Эпир пит лайăх, çавхатер пит лайăх, калама çук лайăх пĕлетпĕр (писательсем вĕрентрĕç): кулак — усал, кулак — мăн хырăмлă, кулак — кĕреçе сухаллă, кулак — хулăм саспа каласать.

...чухăн — типшĕм, чухăн — йăваш, чухăн — «качака сухаллă», çинçе саспа каласать.

...вăтам — вăтам çын, вăтам — вăтам сухаллă, вăтам — вăтам кăмăллă, вăтам — вăтам саспа каласать.

...Эпир нумай пĕлетпĕр! Эпир мĕн пур плакат çинчи сăнсене пĕлетпĕр. Чĕрĕ, пурнăçра пур пурăнакан çынсене кăна пĕлместпĕр.

...чĕрĕ çынсене кăна, чĕрĕ пултаруллă та, çитменлĕхлĕ те, савăнăçлă та, хуйхăллă та, кулакан та — пĕр сăмахпа, «пурнакан çынна» пĕлместпĕр»[13]. Куратпăр ĕнтĕ, кунран ытларах мĕн калайăн. Литература илемлĕхĕпе пахалăхне пăсакан схематизмпа риторикăлла кăшкăрашу, политика

лозунгĕсене илемлĕ произведение кĕртсе çăмăлттайла кăшкăрашакансем пирки Еллиевăн çак сăмахĕсенчен ытла ним калама та кирлех те мар: пĕтĕмпех калана.

Искусство çине çапла позицирен пăхнинченех критикăн задачи илемлĕ произведенири эстетика енĕсене тишкерессинчен малтан, ытларах чухне хайлаври класс кĕрешĕвне кăтартасси, ун тăрăх хайлавпа авторне политика ярлăкĕ çакасси пулса тăрать: пролетари писателĕ, хресчен писателĕ, попутчик тата ытти те.

Л.Троцкий 1924 çулта тухнă «Революция и литература» кĕнекинче никĕсленĕ традици (çыравçăсене пултарулăх ушкăнĕсене мар, политикăпа идеологилле ушкăнсене пайласа хаклассн) каярах чăваш критикинче те анлăн сарăлать.

Сăмах май, Д.Данилов акă, чăваш çыравçисене виçĕ пысăк ушкăна уйăрса пăхать (Классовая борьба в чувашской литературе //Марксистско-ленинское искусствознание. 1932. № 3. С. 3—32; № 4. С. 43—64), Н.Шупуççыннин — икĕ тĕп ушкăн; вĕсем хăйсем тата пĕчĕкрех юхăмсем çине пайланаççĕ иккен (Васильев Н. Краткий очерк истории чувашской литературы. М., 1930).

Нормативлă эстетика çирĕпленсе пынă майăн шаблон, схематизм вăй илсе каять, илемлĕ литературăра чĕрĕ шухăш çухалса пырать. Искусствăра хăйне майлă идеологилле эстетикăлла нормăсем çирĕпленеççĕ. «Килет», «Мучар» (Трубина Мархви), «Тымарсем» (Таньков), «Итлĕр» (Н.Мранька) тата ытти çав калăплă хайлавсем хăйне евĕрлĕ канон пулса тăраççĕ. (Сăмах май, çав шаблонлă произведенисен авторĕсен, пурин те мар, паллах, хăшĕсен — калăпăр, Трубина Мархвиннех — тарăн шухăш-туйăмлă, илемлĕ хайлавсем те çук мар.) В.Рсайăн «Пушар», Е.Еллиевăн «Чĕлхесĕр Эрхип», «Хапха», И.Тăхти, П.Хусанкай произведенийĕсем мар, маларах асăннă ретри хайлавсем илемлĕ литература аталанăвĕн саккунĕсен йĕркисем пулса тăраççĕ. Эстетикăра этемлĕх, гуманизм принципĕсем класлăх принципĕсемпе улшăнаççĕ. Критика парти политикин, цензурăн, идеологи пусмăрĕн чукмарĕ пулса тăрать, илемлĕ литературăна аталанма пулăшас вырăнне, ăна йĕплĕ картара тытса тăма пулăшакан хатĕр пулса тăрать.

Е.Еллиев критика ăслайĕсем, мелĕсем çине те эстетика шайĕнчен тухса пăхать. «Художествăллă произведение илсен,

ун çинчен çуран утса тухма хушнă, лашапа мар... Чăнах та — улăхра çуран утса тухнă чух куран нумай чечек, сăнан нумай улах вырăнсем — киленетĕн ытларах...»[14]

Çав тĕлĕшрен ун позицийĕ нумай енчен В.Рсай шухăшĕсене сывăх: «Критика задачи... схемăпа, аршăнпа аршăнласа мар пымалла художествăллă произведени патне, чи малтан художник хăйĕн произведенийĕнче панă пурнăçа анализласа пымалла»[15].

Писатель задачи пурнăçри фактсемпе событисене, çитĕнӳсене нормативлă эстетика картинчен тухмасăр ӳкерсе кăтартасси, çырса пырасси шайне анса ларать. «Епле пысăк улшăну!

Ĕлĕк этеме юратакан, этем çинчен ăшшăн çырнă произведенисем хакла ларатчĕç. Писатель халне те çавăнпа виçетчĕç. Халĕ — этемлĕхе курайманни, уйăрни, пайлани маларах пултăр», — тет кун пирки Е.Еллиев[16].

Çакăнтан вара хайлавра сăнарсен системинче уççăн е вăрттăн Совет влаçне хирĕç кĕрешекен тăшман тата тăшмана тăрă шыв çине кăларакан сăнар хушшинчи конфликт тĕпре пулса тăрать. Художник пуç пулса тăракан идеологие социаллă, класлă схемăсемпе кăтартакан сăнсăр иллюстратор вырăнĕнче юлать.

Пултару асапĕ, илемлĕх саккунĕсен вăрттăнлăхĕ шав канăç паман Е.Еллиева. «Асап вăл писателĕн малтанхи кунĕсем; хĕсеççĕ пуçа тĕрлĕ мелсем, тăрусем, курăнусем майлашăнаççĕ, пур пек туйăнать тата çивĕчĕ приемсем, сăмахсем, анчах астуса илеймен пек, пуçа пырса кĕреймен пек...

Кĕтетĕн вара... Хăш чух кĕтни кăлăх...»[17]

Ефрем Еллиевăн «Кун йĕркинчи хăш-пĕр ыйтусем» (1933), «Уç çыру — чăваш писателĕсем патне вулакантан» (1933) статйисенче, «Куллен çырса пынийĕсенче» илемлĕ пултарулăхри, критикăри шыравĕсен кăткăслăхĕ, асапĕ пушшех те курăнать. Вĕсенче литература аталанăвĕн çав тапхăрти тăрăмне пĕтĕмĕшле ытамласа илсе кăтартни мар, уйрăм проблемăсемпе ыйтусене чун витĕр кăларнă шухăшсем, детальсем, фрагментсем. Вĕсенче илемлĕх саккунĕсен вăрттăнлăхне уçма тăрăшса шыранă асап...

**Усă курнă литература**

[1] *Васильев А.В.* У истоков чувашского литературоведения и критики / /Труды ЧНИИ. Вып. 67. Чебоксары, 1976. С. 130—149.

[2] *Родионов В.Г.* Чăваш литература вĕрентĕвĕн малтанхи утăмĕсем // Чăваш литератури: поэтикăпа стиль ыйтăвĕсем. Шупашкар, 1989. 5—21 с.

[3] Чăваш литературин малашнехи çулĕсем. А.Золотов доклачĕ тăрăх йышăннă тезиссем //Сунтал, 1925. 3 №. 10—11 с.

[4] ЧПГĂИ ĂА, V уйр., 177 упр. ед., 624 инв. №, 86 л.

[5] *Еллиев Е.В.* Куллен çырса пыни //ЧПГĂИ ĂА, V уйр., 1559 упр. ед., 8702 инв. №, 12 л.

[6] Çавăнтах, 7 л.

[7] *Еллиев Е.* Кун йĕркинчи хăш-пĕр ыйтусем //Сунтал, 1933. 5 №. 32 с.

[8] *Еллиев Е.* Куллен çырса пыни //ЧПГĂИ ĂА, V уйр., 1559 упр. ед., 8702 инв. №, 11 л.

[9] Çавăнтах, 22 л.

[10] Çавăнтах, 16 л.

[11] Çавăнтах, 25 л.

[12] *Ялавин С.* Пирĕн хальхи литература тата малашнехи задачăсем çинчен //Халăха вĕрентес ĕç, 1930. 11—12 №. 45 с.

[13] *Еллиев Е.* Уç çыру — чăваш писателĕсем патне вулакантан //Трактор, 1933. 7 №. 151—152 с.

[14] *Еллиев Е.* Куллен çырса пыни //ЧПГĂИ ĂА, V уйр., 1559 упр. ед., 8702 инв. №, 13 л.

[15] *Ресай В.* Социализмла реализм çинчен //Сунтал, 1933. 3—4 №. 24 с.

[16] Çавăнтах, 18 л.

[17] Çавăнтах, 3 л.

# АСА ИЛЎСЕМ — ВОСПОМИНАНИЯ

## Е.М.Тимирясов
## О Ефреме Васильевиче Еллиеве

В 1938—41 гг. я учился в Аксубаевском чувашском педагогическом училище. Училище готовило учителей для чувашских начальных школ. Приезжали сюда учиться ребята и девчата из Аксубаевского, Первомайского, Октябрьского, Билярского, Алькеевского районов Татарской АССР и некоторых деревень и сел Куйбышевской области. До войны директором педучилища работал Шиков Павел Васильевич, завучем — Илюхин Иван Иосифович. Преподавателями были: Галкин М.М. — географ, Евграфов Т.Е. — историк, математику преподавали Иудин И.Н. и Федоров А.Г., химию — Захаров П.З., педагогику — Родионова, биологию — Егорова А.И., рисование и чистописание — Миронов Г.В., языковедом была Есина А.Ф., физкультурником — Абруков С.Н., военному делу учил Николаев М.В., а Федоров и Иванов И.И. — музыке и пению. Они же были методистами по своим предметам. Все наши учителя были по-своему примечательными людьми и оставили добрую память о себе. Старейшим из них был Иванов Иван Иванович, родившийся в 1893 году и окончивший Симбирскую чувашскую учительскую школу. Неутомимый труженик, он очень много сделал для налаживания работы советской школы в нашем крае, работал в первые годы советской власти инспектором, а в 1927—28 гг. и заведующим Чистопольского кантонного отдела народного образования.

Преподавателем чувашского языка, литературы и методики чувашского языка работал известный чувашский писатель Еллиев Ефрем Васильевич. Знали мы, что он родился в 1907 году в с.Сунчелеево Чистопольского уезда (ныне Аксубаевский район) в семье крестьянина-середняка. После окончания Чистопольского педагогического тех-

никума в 1926 г., он некоторое время работает учителем в своем селе и едет учиться в Московский университет на факультет истории и литературы. Продолжить образование в университете ему не удается по состоянию здоровья. По возвращении из университета, Еллиев — учитель Нижне-Баландинской и Егоркинской начальных школ Саврушской ШКМ. С 1932 года он переводится работать в только что открытое чувашское педагогическое училище.

Его произведения печатались в литературно-художественном журнале «Сунтал» и альманахе «Трактор». Писал Еллиев и рассказы, и повести, и пьесы, и стихи. Я хорошо запомнил литературный вечер, посвященный жизни и творчеству А.П.Чехова. Проходил он где-то в октябре или ноябре месяце 1938 года. Учился тогда я в 1 классе. Доклад делал Ефрем Васильевич. На всех нас его выступление произвело очень сильное впечатление. Покорил докладчик слушателей прекрасным знанием материала (он редко заглядывал в конспект своего доклада) и своеобразной манерой изложения. Говорил он быстро, выразительно, обладал прекрасной дикцией, умел удерживать внимание слушателей. Во второй части вечера Ефрем Васильевич проводил литературную викторину. Вопросов было много, высока была и активность присутствующих на вечере. Для меня, первоклассника, особенно было лестно то, что по ответам на викторине я удостоился занятия почетного третьего места.

Любили мы уроки Ефрема Васильевича. Живо, интересно проходили они у него. Он умел передавать свою увлеченность своим ученикам. Учебников по чувашскому языку и чувашской литературе тогда у нас не было. Учитель диктовал нам основные правила грамматики и материал по теории литературы (он преподавал в 3 классе еще и курс теории литературы). Сам учитель не имел в руках никаких пособий. Он в совершенстве знал предмет. На уроках литературы при чтении литературных произведений нередко отрывался от книги и читал наизусть целые страницы — отличная была у него память. Под руководством учителя мы учились писать рассказы. Эти творческие работы на уроках теории литературы очень тщательно анализировались.

Огромным авторитетом он пользовался у учащихся. Все мы гордились им. Мы не помним, чтобы он когда-либо

на своих уроках повышал голос. Учащиеся чувствовали себя на его уроках непринужденно, в то же время были собранны и внимательны.

Ефрем Васильевич обладал чувством юмора. Добродушные, своевременно сказанные шутки учителя, помогали снимать усталость учащихся, повышали их настроение. Произносил он их с нарочито серьезным видом. Сам Ефрем Васильевич мог заразительно посмеяться над удачной шуткой классных острословов.

Всех учеников звал он по именам и только так и обращался: «Марья, Микуль, Кулине, Елисей». Урок он начинал буквально с порога. Время у Ефрема Васильевича было рассчитано до минуты. Не успеет бывало закрыться за ним дверь, и он уже вызывает для ответа учащегося шутливым предложением: «Санька, тăрса каласа пар-ха, сывлăш çавăрмасăр, шатăртаттарса...» И назовет правило, тему, вопрос, о котором надо рассказать ученику. К знаниям учащихся Ефрем Васильевич был требователен до пунктуальности, не любил верхоглядства. безответственности. Умел он таких учеников пристыдить одной фразой. Помню, как на одном из уроков литературы, посвященном зарождению чувашской письменности, он говорит: «А ведь в этой работе одним из соратников И.Я.Яковлева был Сергей Тимирясов, должно быть, Елисей, он ваш родственник». Мало кто из нас в то время знал об этом.

Иногда на уроке Ефрем Васильевич весь уходил в себя: уставит свои огромные глаза на какую-либо точку на стене и глубоко задумается. Учащиеся знали, что Ефрем Васильевич ушел в мир своих литературных героев и, боясь потревожить его мысль, сидели, затаив дыхание.

Александра Николаевна Янилкина, методист Аксубаевского РОНО (она училась вместе с нами в одном классе, но в другой группе) вспоминает:

«Мне поручили дать открытый урок по чувашскому языку в начальной базовой школе. Помогал готовить урок методист Ефрем Васильевич. В конспект урока внес последний раз уточнения и исправления, наложил визу и вот я на уроке. По ходу урока смотрю на своего методиста — мне дорога его реакция, его мнение. Вижу, он что-то пишет быстро-быстро и много. Я стала беспокоиться: «Неужели

что-то делаю неладно?» В конце урока спрашиваю у своей подруги, сидевшей на уроке рядом с учителем: «Что это Ефрем Васильевич так много писал?» Она отвечает: «Он писал стихи». Учитель был уверен в своей ученице. Все, что надо делать методисту, он сделал».

Литературный кружок, который вел Ефрем Васильевич, посещал Николай Семенович Шишков, мой товарищ по педучилищу и классу. Сейчас он работает преподавателем математики в Старо-Тимошкинской средней школе (и по моей просьбе он поделился воспоминаниями о своем любимом учителе). Николай Семенович вспоминает:

«Ефрем Васильевич руководил литературным и драматическим кружком. Выпускали мы рукописный литературный журнал. (В педучилище много студентов писали стихи. Они помещались и в общешкольной стенной газете.) Драматический кружок ставил на сцене его пьесу «Пёр кун». В 1941 году Ефрем Васильевич писал крупное произведение. В литературном кружке читал нам отрывки из будущего произведения, выдавая его за чье-то, но мы догадывались, что оно его. Просил нас высказывать свое мнение. Я не знаю о судьбе этого произведения. Кончил он его или нет? Началась война. Вместо пера Ефрему Васильевичу пришлось взять в руки винтовку».

Ефрем Васильевич Еллиев был ниже среднего роста. Лицо его кругловатое, полное, глаза темные, большие, огромный лоб. Волосы коротко острижены. Походка его быстрая, стремительная. Живой, энергичный. Простой, доступный. Таким он сохранился в нашей памяти.

Многие учащиеся последних, довоенных лет хорошо помнят случай, характеризующий Ефрема Васильевича как доброго и отзывчивого человека. Стипендию в педучилище давали только хорошо и отлично успевающим учащимся. Одному ученику, способному, но испытывающему большие материальные затруднения, не хватало для получения ее одного или двух баллов. Узнав об этом, Ефрем Васильевич настоял на проведении переэкзаменовки этого ученика по своим предметам. Ученик успешно окончил педучилище.

Знали мы, что он хороший семьянин, заботливый муж и отец. Жена Еллиева, Софья Ивановна Медянцева, некоторое время преподавала в нашем классе русский язык

и литературу, потом долго работала бухгалтером в педучилище и средней школе. Сейчас она на пенсии. Умная, рассудительная, человек большой выдержки и такта, Софья Ивановна была достойной спутницей жизни своего мужа и матерью его детей. Их у них было трое. Тогда, до войны, они были маленькими, дошкольного и ясельного возраста. Одна, в тяжелые военные и послевоенные годы, сумела она их вырастить и дать образование. Старший сын Еллиева Е.В. Станислав сейчас работает журналистом, средний — Юрий, после окончания Горьковского университета стал доцентом, кандидатом химических наук. Младший — Валерий, работает на одном из предприятий г.Горького. «Тогда, в довоенные годы, — вспоминает А.Н.Янилкина, — мы, аксубаевцы, идя в педучилище, проходили мимо дома, где жили Еллиевы. (А жили они в учительской квартире бывшей РКШ) и нам часто приходилось видеть во дворе дома Ефрема Васильевича, одетого в рабочую шубу, что-то делающего по хозяйству: или несущего воду из колодца, или идущего с охапкой дров, или что-то прибирающего во дворе». В последний раз я видел Е.В.Еллиева в конце августа 1941 года на августовском совещании учителей. Оно проходило в зале педучилища. Накануне мобилизовали в армию зав. РОНО Игнатия Ивановича Исаева. Доклад делала методистка РОНО Кириллова Вера Федоровна. Помнится мне, сидели Ефрем Васильевич с И.Н.Иудиным у входа в зал. Разговорились.

Отец мой до войны работал заместителем директора Ст.Тимошкинской МТС по политчасти. После окончания педучилища мне дали направление в Сергиевскую начальную школу (этот поселок входит в Ст.Тимошкинский с/с). Но начавшаяся война спутала все «мирные» планы. В июле 1941 года отец ушел в Красную Армию. На руках у матери остались две мои младшие сестренки. Немного оставалось времени и до моего призыва. Старший мой брат в армии служил с 1939 г. В это тяжелое время в интересах семьи было желательно жить в одном месте всем членам семьи. Надо было учить моих сестренок. Ефрем Васильевич и Иван Никифорович приняли самое горячее участие в моей судьбе. Благодаря хлопотам этих учителей в этот же день РОНО дал мне направление в Ст.Ильдеряковскую НСШ на работу в

качестве преподавателя математики и физики. Такое не забывается.

Больше мне не суждено было встретиться с Ефремом Васильевичем. Уже после войны, в 1945 году, я узнал о том, что Ефрем Васильевич Еллиев погиб смертью храбрых в боях с немецко-фашистскими захватчиками в ноябре 1942 года. Тогда ему было 35 лет. Он был командиром минометного взвода.

Еллиев в 1941 г. окончил заочно факультет языка и литературы Казанского педагогического института. О судьбе произведения, о котором вспоминает Шишков Н.С. Как рассказывала Софья Ивановна, Ефрем Васильевич его окончил в 1941 г. и отвез в Чебоксары в Дом народного творчества на конкурс. Но там его следы затерялись. Есть предположение, что название пьесы было «Энтип».

31 марта 1975 г.

## Ф.А.Михейкин
## О незабываемом старом друге

*Не забываются школьные годы,*
*Любимые учителя,*
*Друзья оживают в памяти.*

Еллиев Ефрем Васильевич родился 23 января 1907 года в селе Сунчелеево Старо-Мокшинской волости Чистопольского уезда Казанской губернии (ныне Аксубаевского района Татарской АССР) в чувашской семье крестьянина-середняка, рос в родной семье. С 1915 по 1919 год он учился в начальной школе родного села, которой заведовал Томасов Степан Тимофеевич, имевший звание учителя церковно-приходской школы, а второй учительницей являлась Афанасьева Варвара Павловна, окончившая 8 классов Чистопольской женской гимназии.

После Октябрьской социалистической революции велика была у молодежи жажда к знанию. Открывались новые школы, но не хватало учителей, знающих родной чувашский язык. Тогда по ходатайству Чистопольского кантонного съезда чуваш осенью 1918 года в селе Сунчелееве открылась Чувашская семинария, вскоре преобразованная в 3-хгодичные чувашские педагогические курсы.

Первым заведующим курсов в организационный период работал Абруков Прохор Тарасович (родом из дер.Малое Сунчелеево), через год, в 1919 г., заведующим стал Соболь Степан Феофанович (по специальности математик), но вскоре его освободили за грубость и с осени 1920 г. третьим заведующим (председателем совета) курсов был назначен Эсливанов Василий Никитич, из чуваш, добродушный, авторитетный руководитель. Курсы размещались в здании начальной школы с четырьмя классными комнатами, и дополнительно пристроена пятистенка с двумя комнатами. В одной из комнат была устроена сцена для постановки спектаклей.

С открытием педагогических курсов село Сунчелеево превратилось в центр просвещения чувашских селений Закамья.

В то время большинство детей оканчивало лишь начальную школу и поступающие на курсы принимались в младшую подготовительную группу, а немногие, проучившиеся в двухклассных и второклассных училищах, зачислялись в старшую подгруппу или на первый курс.

На втором году со дня открытия курсов — с сентября 1919 года по 1921 год — мне, старомокшинскому мальчику, в течение двух лет пришлось учиться вместе с Ефремом Еллиевым в одной группе (младшей и старшей), в которой обучалось 42 учащихся: 30 мальчиков и 12 девочек.

Наша учеба на курсах совпала с годами гражданской войны, которая задела и наши селения. В них в 1918 году побывали отряды наступавших белочехов, а в 1919 году — кавалерийские части Колчака и на ближних подступах станции Нурлат произошли упорные бои между белыми и красными частями под Русской Менчой, Караульной Горой и за Егоркино, которое не раз переходило в руки белых и обратно в руки красных. Хозяйство страны находилось в состоянии разрухи. В этой обстановке мы учились в крайне трудных условиях: при нехватке учебников (3—4 экземпляра на класс) или полном отсутствии их по некоторым предметам, не имели школьных тетрадей. Только для проверочных работ имелись классные тетради по русскому языку и математике. Мы были вынуждены сшивать для себя тетради из разных обрывков старых книг и бумаг, чтобы со слов учителя записывать конспекты. На уроках для текущих записей и решения задач пользовались аспидными (грифельными) досками и больше липовыми досками. Записи на последних скоблили стеклом или ножом.

Как бы ни было трудно, мы стремились сообща преодолевать эти трудности: помогали друг другу в учебе, небольшими группами часто готовили уроки, отдавали переписывать конспекты и имеющиеся учебники ходили по рукам в порядке очереди. Так мы учились дружной коллективной жизни, упорству в осуществлении своей мечты. Общежития не было, и приезжие слушатели курсов жили на квартире. В зимние долгие вечера при отсутствии керосина избы освещались лучинками, сжигаемыми в треножниках и

от дыма у нас глаза слезились. При таком плохом свете мы готовились к урокам.

Благодарны мы нашим учителям, которые открыли нам светлые пути познания. Любили мы учителей: языковеда Сорокину Ниталью Никитичну (по мужу Абрукова), географа Миссюра Александра Титовича и его супругу Нину Сергеевну — учительницу французского языка, которые были эвакуированы с Украины в 1918 г. во время немецкой оккупации, учителя биологии и пения Абрукова Евгения Тихоновича, учителя арифметики Томасова Степана Тимофеевича.

С Ефремом Еллиевым в те годы я еще не был в очень близких отношениях, а дружил больше с малосунчелеевскими одноклассниками: Давыдовым Леонидом, Кудряшовыми Лаврентием и Константином. Они мне казались более общительными и смелыми. Но в летнее время вместе с Еллиевым частенько рыбачил удочкой на реке Сульче или вместе ходили на речку купаться. Знал я тогда Еллиева как очень скромного, застенчивого сокурсника, вероятно, он был таким от того, что у него в правом глазу от детской травмы имелось небольшое бельмо. Он, как и многие из нас, мечтал стать учителем, влиться в ряды просветителей своего родного чувашского народа.

В те годы в селе Сунчелееве не было ни клуба, ни избы-читальни. Молодежь в зимние вечера в некоторых избах собиралась на посиделки, где девушки пряли и вязали. На посиделках приходилось встречаться с Еллиевым и вместе с ним слушать чувашские сказки и самим читать интересные книги: поэму Константина Иванова «Нарспи», А.С.Пушкина — сказки, «Дубровский», «Капитанская дочка», Н.В.Гоголя — «Вечера на хуторе близ Диканьки», «Вий», «Тарас Бульба», В.Г.Короленко — «Слепой музыкант», Генриха Сенкевича — «Крестоносцы» и др.

В те годы учебы у нас материальное обеспечение было плохое: обуты в лапти, носили белье и одежду самотканые и домашнего шитья. Трудно было соблюдать гигиену: умывались без мыла, а в бане мылись щелочью. В первом полугодии 1919/1920 учебного года столовой не было, и приезжие слушатели еженедельно на воскресенье уходили домой и с котомкой на плечах приносили продукты на неделю. Мы очень обрадовались, когда позднее открыли столовую и

пекарню для выпечки хлеба. Кормили нас обедом один раз в сутки, обходились без чая и сахара. Всю работу в столовой при одном поваре выполняли дежурные слушатели. Продукты в первое время покупались за счет стипендий, а позднее стали поступать из собственного хозяйства курсов. На отведенные Сунчелеевским педагогическим курсам 52 десятины земли засевали рожь, пшеницу и просо, имели 4 десятины огорода. Имелась ферма, где выращивали свиней и бычков, держали несколько десятков коров. Силами учащихся по утвержденному графику производились огородные работы, уборка школьного поля (хлеба жали серпом), распиливали дрова, закладывали силос для скота фермы и выполняли другие общественно-полезные работы (устройство заваленок, ремонт столового инвентаря, книг библиотеки и пр.).

Жизнь на курсах была построена на коллегиальных началах. Большую роль в жизни курсов играло самоуправление курсантов — общее собрание, комитет и товарищеский суд. На собраниях обсуждались не только учебные вопросы, но и проведение культурно-массовых и хозяйственных мероприятий. В президиум совета курсов входил председатель комитета курсантов.

Во внеклассной работе курсов значительное место отводилось занятиям кружков (литературного, драматического и музыкально-вокального), подготовке и проведению революционных праздников, постановке спектаклей. Таким образом, курсы являлись для нас не только светочем знаний, но и коллективной трудовой школой.

После возникновения комсомольской организации в 1918 году в организации общественно-политической жизни слушателей Сунчелеевских педкурсов начала играть ячейка комсомола, организованная в 1919 году, но все же в то время она оставалась малочисленной и слушатели подготовительных групп оставались вне его влияния.

Может быть, некоторым читателям покажется излишним описание нашей суровой жизни и учебы того времени. Мне хотелось показать, в какой обстановке закалялись воля, духовное мужество Ефрема Васильевича Еллиева, откуда могли начаться истоки его творчества, чтобы потом в застенчивом юноше Еллиеве развился талант чувашского писателя.

Окончить курсы нам не удалось. В связи с голодом 1921 года многие слушатели не могли посещать занятия и в январе 1922 года постановлением Главпрофобра Наркомпроса Татарской АССР Сунчелеевские педагогические курсы закрыли. Одна часть слушателей передавалась Чистопольскому педтехникуму, а другая — осенью 1922 г. должна была поехать учиться в Казань во вновь открываемый чувашский педагогический техникум. После этого наши пути разошлись. В конце августа 1922 года я, Михейкин Федор, поступил учиться на I курс Казанского чув. пед. техникума и после его окончания в 1926 году с направлением Татнаркомпроса поступил учиться в Московский государственный университет имени М.В.Ломоносова на факультет Советского права (ныне юридический), где проучился до 1930 года. Конечно, об этом Еллиев знал.

Он же осенью 1922 года поступил учиться в Чистопольский педагогический техникум, который окончил в 1926 году, и в 1926/27 учебном году работал учителем Нижне-Баландинской начальной школы Кривозерской волости. Но желание получить высшее юридическое образование не покидало его, и осенью 1927 года он приехал в Москву для поступления в Московский университет. Успешно сдав экзамены, он был зачислен на I курс факультета Советского права. В это время, через шесть лет, я и Еллиев Е.В. снова встретились и, как земляки и старые знакомые, подружились.

Однако стипендиальная комиссия не зачислила его в число стипендиатов, как поступившего без направления советских организаций. Когда Ефрем Васильевич обращался к председателю профкома и стипендиальной комиссии Сергею Седову (сыну Л.Д.Троцкого) с просьбой, чтобы ему разрешили получать стипендию, последний ему ответил, что сейчас стипендиальный фонд исчерпан, и дал Еллиеву закрытый пакет, адресованный в приемную Кремля. С этим пакетом Еллиев был пропущен в Кремль, где его приняла Надежда Константиновна Крупская. Прочитав врученное ей письмо, Надежда Константиновна расспрашивала его: откуда он приехал, кто его родители и какой национальности, какие имеет средства, чтобы учиться? Еллиев рассказал ей, что он желает получить профессию юриста, родом из крестьян

чувашского села Сунчелеева Чистопольского уезда Татарской АССР, граничащей с Симбирской и Самарской областями. Отец его середняк и не в состоянии обеспечить его средствами для обучения в высшем учебном заведении. Внимательно выслушав объяснение Еллиева, Надежда Константиновна одобрила его желание учиться в Московском университете на юриста и сказала: «Значит, Вы приходитесь земляком В.И.Ленина, да и желаете, как и он, стать юристом. Надо просвещать чувашей и готовить национальные кадры. Надо помогать молодым чувашам учиться». Написав ответное письмо профкому и стипендиальной комиссии и вручив его Еллиеву, Надежда Константиновна сказала, что стипендию он будет получать. Поблагодарив ее, Еллиев вышел из Кремля и, придя в университет, отдал пакет от Н.К.Крупской стипендиальной комиссии. Вскоре стипендия Еллиеву была назначена в размере 25 рублей в месяц. Что заставило Ефрема Васильевича поступить на факультет Советского права? Стремление к справедливости, законности. Не престижные должности судьи и прокурора влекли его, а желание не допустить ущемления интересов трудового народа, нарушений Советских законов, которые уже в 1927—1928 годах стали проявляться со стороны местных органов власти в отношении крестьян во время проведения хлебозаготовок.

Обучение Еллиева Е.В. на I курсе факультета Советского права Московского университета имело для него большое значение. Он слушал лекции видных профессоров и юристов: по историческому и диалектическому материализму, по политэкономии, по истории классовой борьбы в России и на Западе, по Конституции СССР и общей теории права и государства, изучал уголовное право, психологию и др. Ректором Московского университета был Вышинский А.Я., который потом в 1935—37 годах, став генеральным прокурором СССР, вместо того, чтобы стать стражом законности, оказался пособником массовых репрессий, произвола и беззакония И.В.Сталина.

Обучаясь в университете, мы принимали активное участие в общественно-политической жизни студенчества. Мы в то время были увлечены идеей о скорой победе мировой революции и думали, что «на горе всем буржуям, мировой пожар раздуем».

Также с интересом следили за ходом дискуссии по вопросу о возможности победы социализма в отдельно взятой стране, т.е. в СССР, об индустриализации. Читали мы об этом в дискуссионных листах газеты «Правда» статьи Н.И.Бухарина, Г.Е.Зиновьева, К.Радека, А.И.Рыкова, В.В.Куйбышева и др. Троцкисты, отрицавшие возможность построения социализма в СССР, были идейно разгромлены.

В десятую годовщину Великой Октябрьской социалистической революции в колонне студентов МГУ мы вдвоем участвовали на демонстрации на Красной площади и на трибуне Мавзолея В.И.Ленина видели: И.В.Сталина, Ф.Э.Дзержинского, К.Е.Ворошилова, С.М.Буденного, М.И.Калинина, А.И.Рыкова, Н.И.Бухарина и др. Вместе один раз посетили Мавзолей В.И.Ленина. По воскресным дням посещали кинотеатры или музеи. Помню: вместе осмотрели музей В.И.Ленина, музей революции, изящных искусств имени А.С.Пушкина и Третьяковскую картинную галерею. В общем, надо сказать, наша студенческая жизнь была насыщенной как в идейно-политическом, так и в культурном отношении. Несомненно, все это оказало большое влияние на мировоззрение, общее развитие и кругозор студента Ефрема Васильевича Еллиева. Он был увлечен лекциями К.Н.Корнилова по экспериментальной психологии и чтением произведений русского писателя-психолога Ф.М.Достоевского, который в лице героев своих произведений умел глубоко раскрыть тайники человеческой психики. Таким образом, богатая духовная жизнь Еллиева во время обучения в Московском университете явилась важным истоком, наряду с талантом, его будущего литературного творчества.

Весной 1928 года Ефрем Васильевич оставил университет по болезни пневмонией (воспаление легких) и был направлен в Башкирию на лечение. Врачи признали, что пневмония связана с переутомлением, и проводили кумысолечение. Лечащий врач сказал ему, что с такими легкими жить в городе противопоказано, что дальше надо жить в деревне. Поэтому с осени 1928 года Ефрем Васильевич стал работать учителем начальных классов Егоркинской НСШ. Оттуда в 1930 г. был переведен учителем Саврушской НСШ.

Литературное творчество Е.В.Еллиева началось в начале 30-х годов, когда в обстановке проводившейся

коллективизации в чувашских журналах «Сунтал», ныне «Ялав» (Знамя), «Тăван Атăл» (Родная Волга) один за другим появлялись его рассказы: «Ременные вожжи», «Ворота», «Жена», «Через 10 лет», «Милые глаза» и др. Встречи с сельским активом и наблюдения за работой колхозников, их жизнью, давали ему богатую идейную пищу для его творчества. Сюжет его рассказов довольно прост, порой в их основу положен какой-нибудь эпизод, как, например, в рассказе «Ременные вожжи», где Акулина, жена колхозника Самай, после окончания мужем вывоза навоза со двора увела колхозную лошадь во двор колхоза и тайком от мужа оставила у себя ременные вожжи. Когда Самай узнал об этом, то по поводу возвращения этих вожжей в колхоз у него происходит острая внутренняя борьба идей, то за, то против возврата.

Самобытность, своеобразие творчества Ефрема Васильевича состоит в том, что его произведения отличаются глубоким психологизмом, философским обобщением позитивных взглядов и убеждений персонажей с новыми идеями и правилами коллективной жизни. Он показывает, как новый колхозник Самай, — по натуре и труженик, и собственник, — преодолевает свою мелкобуржуазную психологию и после долгих раздумий возвращает ременные вожжи в колхоз.

Еллиев не успел написать крупные произведения (романы, повести), но высокая идейность, душевность и изящность родного языка его рассказов привлекли внимание читателей и общественности, и он стал одним из популярных, известных чувашских писателей. Как педагог и писатель, он пользовался высоким авторитетом не только в педучилище, где он работал, но и среди населения Аксубаевского района.

В обращении с людьми он был всегда простым, общительным, добродушным человеком. По внешним данным: среднего роста, с кругловатым лицом без бороды и усов, с короткими волосами на голове, шатен. Запомнилось мне его приветливое и всегда улыбчивое лицо, но с пристальным взглядом серых глаз, что, видимо, было связано с его высокой наблюдательностью к людям и проницательным взором на окружающий мир.

В 1932 году по приглашению администрации Сунчелеевского педагогического техникума он стал работать

преподавателем-методистом чувашского языка и продолжал заочное обучение в Казанском педагогическом институте на факультете русского языка и литературы.

В 1935 году педтехникум был переведен во вновь выстроенное здание в с.Аксубаево и получил новое наименование — Аксубаевское чувашское педагогическое училище.

В июле 1934 года в с.Аксубаеве Еллиев Ефрем Васильевич женился на учительнице Сунчелеевской средней школы Медянцевой Софии Ивановне, которая преподавала немецкий язык. Вырастили и воспитали они трех сыновей: Станислава, Юрия и Валерия. Из них Юрий Ефремович ныне работает в Горьковском университете доктором химических наук.

Работая в Аксубаевском педучилище, Ефрем Васильевич продолжал еще писать рассказы и рецензии. И вот однажды в 1938 году в чувашской газете «Хĕрлĕ Ялав» (Красное Знамя), издававшейся в г.Казани, появилась критическая статья,в которой подчеркивалось, что не протаскивает ли Еллиев Е.В. в одном из последних рассказов (кажется, под названием «Клад») мелкобуржуазные идеи, скрытно враждебные социалистическому строю. Какой-то «бдительный» цензор об этом сообщил из Казани начальнику Аксубаевского райотдела внутренних дел Евграфову Т.С., который усмотрел уже в Еллиеве вражеское лицо и хотел арестовать его, но предварительно решил согласовать арест с райкомом ЦКП(б). Первым секретарем Аксубаевского райкома в то время был Владимиров Прокопий Владимирович. Последний предложил Евграфову воздержаться от ареста Еллиева пока о нем, на их запрос, не поступит отзыв от Союза писателей Чувашии, а Еллиева заставил написать объяснительную записку по поводу статьи в вышеупомянутой чувашской газете. Эта записка вместе с запросом райкома была отправлена в г.Чебоксары. Из Союза писателей Чувашии о Еллиеве поступил положительный отзыв и тогда его оставили в покое.

Такая подозрительность по отношению к Еллиеву Е.В. со стороны сотрудников райотдела внутренних дел проявлялась и раньше, после трагической смерти (самострела из мелкокалиберной винтовки) в декабре 1935 года его брата Георгия, учителя Савгаческой НСШ, на почве недовольства последнего проводившимися в то время репрессивными мерами в отношении крестьян. В связи с этим в доме

Еллиевых в селе Сунчелееве производился обыск с целью выявления запрещенных книг, к которым были отнесены не только книги осужденных троцкистов и так называемых правых оппортунистов (Бухарина Н.И., Рыкова А.И. и др.), но даже произведения Сергея Есенина. На квартире же (в селе Аксубаево) у Еллиева имелась солидная библиотека, в которой, к примеру, находились шеститомник избранных произведений В.И.Ленина, полное собрание сочинений Ф.М.Достоевского, двухтомник Сергея Есенина и произведения других русских и чувашских писателей.

В Аксубаеве Ефрем Васильевич дружил с земляком Галкиным Маркелом Мироновичем, работавшим директором Аксубаевской средней школы. Жена Еллиева — София Ивановна — рассказала, что они, боясь повторения обыска, вдвоем сожгли книги Сергея Есенина.

Кроме того, ведь в те годы культа личности Сталина в ходу были репрессии: всякие доносы и аресты безвинных людей, причисления их к врагам народа. Органы НКВД и КГБ проводили расследование по делу повстанческой контрреволюционной организации «Крестьянская трудовая партия» или просто «Крестьянский союз» и производили в селениях многочисленные аресты так называемых врагов народа, многие из которых по приговору троек были расстреляны или сосланы в концентрационные лагеря. Фактически же такой контрреволюционной организации вовсе не существовало. В таких условиях люди жили под постоянным страхом преследований. Когда началась Великая Отечественная война, Еллиев Е. подал заявление в Аксубаевский райвоенкомат добровольцем вступить в ряды Красной Армии. В то время РВК производил набор на военные курсы из призывников 1927 года рождения в количестве 30 человек, но набралось только 28 человек. Тогда для полного укомплектования РВК в список тридцати включил из числа старших по возрасту добровольцев Еллиева Е.В. и земляка Захарова П.З. Набранных курсантов отправили в город Красноярск на трехмесячные курсы минометчиков. По окончании курсов Еллиева отправили в стрелковый полк на Калининский фронт, где он участвовал в боях в составе минометной батареи в расчете из 4-х бойцов, которые таскали свой миномет на спине.

Из последнего письма от 3 ноября 1942 года, адресованного жене Софии Ивановне Медянцевой, видно, что Ефрем Васильевич находился в санчасти в сильно ослабленном состоянии из-за дизентерии, вместе с ранеными бойцами. А вскоре — в ноябре 1942 г. под городом Бологое, в заболоченной местности, в условиях осенней слякоти и бездорожья армия генерала Ефремова, в которую входил стрелковый полк Еллиева Е.В., попала в окружение немецких и двух румынских армий и была рассечена на две части. Одна часть окруженной врагом армии при помощи нашей 10 армии вырвалась из окружения, но другая часть осталась в окружении, и генерал Ефремов, не желая быть в плену, застрелился. Ясно, что эта окруженная часть была разгромлена превосходящими силами противника. Вероятно, что много бойцов погибло в неравном бою, а раненые и больные советские солдаты были пристрелены немецкими фашистами или погибли, оставшись без всякой помощи.

Так в ноябре 1942 года трагически оборвалась жизнь моего друга Ефрема Васильевича Еллиева на Калининском фронте*. В 1962 г. посмертно он был зачислен членом Союза писателей СССР.

Казань, 1990 года.

---

* В письме от 14 августа 1998 г. Михейкин Ф.А. внес следующее уточнение: «Сообщаю Вам, что в очерке «О незабываемом старом друге» допущена ошибка относительно времени и армии, где погиб Еллиев Е.В. Проверкой в последние дни установил, что предположение о пребывании Еллиева в 33-й армии генерал-лейтенанта М.Г.Ефремова ошибочно. 33-я армия в составе Западного фронта находилась в лесах юго-западнее г.Вязьмы, где была окружена немецкими войсками, и с помощью 10-й армии 18 июля 1942 выйти из окружения удалось не всем. С остальными частями 33-й армии генерал Ефремов решил прорваться к своим к реке Угре, но немцы обнаружили отряд и разбили его. Генерал был тяжело ранен и, не желая попасть в руки врага, застрелился (Из книги маршала Г.К.Жукова «Воспоминания и размышления». Т. 2. 1983. С. 242).

Из последнего письма Еллиева Е.В. от 3 ноября 1942 г. видно, что он, тяжело больной от кровавого поноса, в это время находился в санитарной части на Калининском фронте.

24 ноября 1942 г. войска Калининского фронта под командованием генерал-полковника М.А.Туркаева начали наступление на Великие Луки, продолжавшееся до 2 января 1943 г. 30 ноября войска Калининского фронта завершили окружение гарнизона Великих Лук противника (Из книги «1418 дней войны». 1990. С. 647).

Смог ли Е.В.Еллиев выздороветь и участвовать в этих боях, трудно сказать. Ясно одно, что в ноябре 1942 г. его жизнь оборвалась на Калининском фронте».

# Е.ЕЛЛИЕВ ПЬЕСИ — СЦЕНА ÇИНЧЕ

Ефрем Еллиевăн «Çухалнă телейсем» драми Чăваш çамрăкĕсен театрĕн сцени çинче «Пирĕн телей çавнашкал» ятпа икĕ çул пычĕ (1992—1993). Спектакль режиссерĕ — Вячеслав Оринов. Пьесăна сцена çинче лартма Юрий Яковлев хатĕрленĕ. Художникĕ — Владимир Шведов. Композиторĕ — Николай Казаков. Халăх юррисене вĕрентекенĕ — Зинаида Козлова.



**Михаил Воробьевпа**
**Борис Иванов сăнӳкерчĕкĕсем**

## «ВĔРИЛЕТĔР ĂСА ТА, ЧУНА ТА ЮНА»

«Пирĕн телей çавнашкал» спектакльпе Вячеслав Оринов режиссер поэзи, эпика театрĕн ялавне çĕклерĕ. Çак ялав — халăхăн чун илемне халăхне хăйне кăтартас текенсен, тӳр кăмăллисен, харсăррисен, чăвашăн нуши-асапне чĕрине илнисен ялавĕ.

Несĕлсен хĕрлĕ юнлăхĕ,
нĕрлĕ тунсăхĕ,
савнăçĕ
Вĕрилетĕр ăса та,
чуна та
юна.
Çич ĕмĕр çич мăшкăлĕ,
тутăх сăнчăрĕ,
кăшăлĕ
Чăнкăртаттăр манра та,
санра та
ванса.
Сас кăлартăр чăвашлăхăн
чăтнă чăнлăхĕ,
çынлăхĕ:
Вăл çĕр çийĕн çĕкленнĕ
тĕнче çӳппи
мар!
Тĕвĕлентĕр пуласлăхăн
ирĕк чĕрлĕхĕ,
пурлăхĕ.
Çын ачи çын таптанă
çул çинчи
тусан мар!

*Иосиф Дмитриев.*

Спектаклĕн тĕпри кăмăлĕ-хавалĕ те — çавнашкал.

Анчах ăна уççăн, ятран палăртман. «Чăн илемлĕ япала ĕмĕрне яланах çапла, — теннĕ Ефрем Еллиев. — Вăл ертсе пырать, пĕр-пĕр проблема çутатать, çутатса парать, унтан сасартăк татать те сан умна шухăшлама тепĕр пысăк проблема кăларса тăратать». Спектакль, чăваш халăхĕн, этемĕн хурлă шăпине кăтартса, куракана чăваш пурнăçĕ мĕншĕн йывăррин сăлтавне шыраттарать — шырама чĕнет, ăна мĕнле улăштармалли пирки шухăшлаттарать — шухăшлама чĕнет. Йывăр шухăшĕ вара ирĕклĕх юррине кăларакан чунри хĕлĕхсене пырса перĕнет те — пирте сăвăçăн аçа-çиçĕмлĕ йыхравĕ майлă кăмăл-туйăм тапранать:

«Несĕлсен хĕрлĕ юнлăхĕ,
нĕрлĕ тунсăхĕ,
савнăçĕ...»

Спекталь чăваш хресчен тĕнчине, чăнлăхне шалтан — тĕнĕненӳпе йăла-йĕрке, савнăç-ĕмĕтпе куççуль-тарăху урлă сăнласа

кăтартать, унăн илемне уçса пама майсем шырать. Вĕреннĕ чăвашсене е, ĕлĕкхилле каласан, «çутă тӳмеллисене» ыйхăран вăранма, интеллигенцин халăх умĕнчи тивĕçĕ пирки аса илме чĕнет.

Театрăн çĕнĕ ĕçĕ — чăнлăха (вăл кирек темле йывăр пулсан та) куçран пăхас тени. Вăл куракана шеллемест, Ухсай Яккăвĕ калашле, «каласать халăха мухтасшăн ялан пат тӳрĕ сăмахпа». Спектакль хумхатать, анчах туйăмсене çеç мар — ăс-тăна та. Пьеси хăй те жанр тĕлĕшĕнчен философилле драма. Ефрем Еллиев 1935—1937 çулсенче (пьесăна çавăн чухне çырнă тесе шутлатпăр) тăратнă ыйтусем патне чăваш интеллигенцийĕ, тĕрĕссипе, халĕ кăна çывхарать-ха.

Чухăнлăх, пуянлăх, уйрăмлăх йăранĕ
Ирĕкпе çĕнелнĕ пурăнăçран тарĕ,
Чĕрере ачашшăн çунĕ, çулăмланĕ
Тантăшлăх, тăванлăх, юрату кăварĕ.
*Çеçпĕл Мишши.*

Кăвар чĕрем — пин çын чĕри.
Эп пĕр çын мар — эп хам пин-пин,
Эп пин чăваш, эп пин-пин çын!
Чĕрем юрри — пин çын юрри.
*Çеçпĕл Мишши.*

Çитмĕл те çичĕ хĕçпе хăмсартăн-и,
хыçăмран мар, çич ют, умран хăмсар.
Тăхăрвун та тăхăр тăванăм пур,
тăхăрвун та тăрăх тăванăмăн хурри
пулăн, усалу, ултаву, хĕçӳ айне пулăн!
*Иосиф Дмитриев.*

Халăх çинче тăлăх та вилмен. Ял-йышран вăтан, намăса пĕл...

Çапла каланă чăваш.

Паян та çаплах калать. Утă çинче ак халăх канма ларать те — ялти хыпар-хăнара шĕкĕлчет. Ыррине ырлать, усалне сивлет.

Чăнах та, ялта сан пурнăçу — халăх çинче. Халăхĕ вара — пĕр халăх, чăваш халăхĕ.

Тăван ял-йыш, тăван халăх умĕнче — пĕр самант та пулсан намăсланаççех: вырăс пек пурăнас текен пуян Çимун та, «Тӳле! Эп тахçанах тӳлесе татнă» — текен Петĕр староста та. Намăсланаççĕ вăйсăррипе — чухăн Çимене, унăн çемйине — хӳтте илменшĕн, чăвашлăх, тăванлăх карти урлă пуснăшăн.

«Пирĕн телей çавнашкалри» халăх (И.Дмитриевăн «Ялта» спектаклĕнчи пекех) — авалхи грексен е хальхи поэзи театрĕнчи хор пĕлтерĕшлĕ.

Чăтаççĕ-ха чăвашсем,
Вĕçнех çитмен-ха вĕсем,..
Юррисене юрлаççĕ,
Куççулĕпе кулаççĕ.
Чăваш! Сана ун чухне,
Чуну çĕкленнĕ чухне,
Мĕн пит асна килет-ши?
Мĕн пит чунна хĕсет-ши?
Савăнăç-и, куççуль-и
Сан куçунта куç тулли?

*Константин Иванов.*

Мана халь йывăр, йывăр питĕ:
Чĕремçĕм уйрăлчĕ икке!

*Петĕр Хусанкай.*

Спектакльти кашни сăнар — символ. Еля халăх чунĕнчи канăçсăрлăха сăнарлать.

«Ма манран пурте мăшкăлаççĕ?» Елян çак ыйтăвĕ — халăх ыйтăвĕ.

«Каллех ача чухнехи пек сана ачашлам-ха. Урăх пĕр çын та вĕт сана ачашламан!» — Еля амăшĕн — Чĕкеççин — сăмахĕсенче чăваш халăхĕ хисеп курман пирки каланă чăнлăх.

Шăпа, чăваш шăпи — Еляна пурнăçне Викторпа мар, Сергейпе сыптарать. Апла чăваш укçапа мул (ăна спектакльте пуян Çимунпа унăн ачисем сăнарлаççĕ) картинчен-серепинчен тухса — идейăпа ирĕклĕхе (Сергей сăнарлать) юратма пуçлас шанчăклă.

Еля — В.Рсайăн, Ю.Скворцовăн, Е.Лисинан хĕрарăм сăнарĕсемпе пĕр туртăмлă. Туртăмĕ ку — Достоевский хĕрарăмĕсемле. Анчах ăна С.Савельева хăйĕнле — шеллес, юратас килтерекен хĕр илемне мала кăларса — вылять. Вылять чăваш хĕрĕн чунне, юратăвне.

Саккун, тесе, чиркӳ ларттарнă
Сăрта, чи çӳллĕ вырăна,
Чансем кăнттам саспа янранă,
Хупланă пĕтĕм таврана:
Хĕресĕсем çиççе йăлтăранă —
Палач хĕçĕ пек курăнса.
Ылханлă самана тылланă,
Силленĕ пирĕн пурнăçа.
*Ухсай Яккăвĕ.*

Эпир, чăваш йăваш тесе
Тире сĕвессине кĕтсе,
Куян пекех ларасшăн мар,
Сиксе тăрасшăн-ха, Тутимĕр.
Хура пупсем, нӳхреп куçсем,
Таса чӳк вăрманне
Пĕтерчĕç, каснă йывăçран
Ялта чи çӳллĕ вырăнта
Чиркӳ ларттарчĕç ирĕксĕр,
Унта пире кĕлтутарма
Илсе çӳреççĕ салтакпа.
Кĕлтумасан, хĕне-хĕне
Тӳлеттереççĕ хырçă-марçă.
*Ухсай Яккăвĕ.*

«Ĕлĕкхи чăваш революционерĕсенчен çĕрĕшĕнчен тăхăрвунă тăххăрăшĕ пекех революцишĕн пуçа хурса вăхăтсăр вилĕмре канăçлăх тупрĕç», — тенĕ Мĕтри Юман, чăваш чĕринче пуринчен ытла пăлхавăрлă (революциллĕ) вуткăвара килĕштерекенскер.

Стражник умĕнче çĕлĕкне хывман Сергей кутăнлăхĕ те революциллĕ шухăш патне аталанса çитет: вăл телейсĕррисем валли телей тупасшăн, Еляна (апла чăваш халăхне те) телей кăтартасшăн.

Сергей — чăвашра халăхшăн, идейăшăн пурнăçне пама хатĕррисен чĕмĕ тепĕр хут чĕрĕлме кирли пирки калать.



Вăрăм-вăрăм тееççĕ,
Пур вăрăма çил тивет.
*Халăх юрри.*

Сергее хăваласа яраççĕ. Хăваласа яраççĕ ирĕклĕ, юратакан чуна.

Хăваласа яраççĕ пулас революционера, героя.

Чăвашран та тахçанах ĕнтĕ хăвалаççĕ Сергей сăнарлакан вăй-хăвата. Сергейсем пĕччен, хăвалакансем нумайăн. Рычак тути тĕрлĕ (пачăшкă е И.Я.Яковлев туйин тути-и, коммунизм рычакĕ-и?) — анчах йӳççи пĕрре — «пуçна ан каçăрт, мĕскĕн чăваш!» Хăвалакансем чăмăртаннă — рычакланнă. Сергейсем — уйрăмтăран, пĕр-пĕринчен те ютшăнса çӳреççĕ.

Çӳреççĕ-çӳреççĕ те, çиллине шăнăраймасăр-ши, тавăрас шутпа-ши? — хăйсене кӳрентернĕ «хĕсĕк» чăваш тĕнчине «чулпа» переççĕ. Г.Айхи пек Анăçран-и е Е.Лисина

пек нимĕç çĕрĕнчен-и? — пурпĕрех: «чулĕ» кăна ылханлă чăваш хапхин каштине те пулсан ӳкертĕрччĕ.

Спектакль шухăшлаттарать: халăха чăн искусство, литература, пурнăçа улăштаракансем кирлĕ пулсан, сергейсене хамăр хӳтлĕхрен хăвалани нумая пырĕ-ши?

Мĕскĕн пурнăçра —
Пĕтсе — хăрса виличчен
Пыллă пурлăхра пĕрре
Пурăнса курас килет.
*Ухсай Яккăвĕ.*

Çын тени, укçа пулсан,
Ухмаха тухать,
Йыттине кайса çакать
Йывăç тăррине,
Кĕлмĕçĕ пулма хушать
Тăван амăшне.
*Ухсай Яккăвĕ.*

Çименпе Чĕкеççи чăнлăхĕ (Василий Павловпа Лидия Красован ăста вăййи çитерет вĕсен шухăш-кăмăлне чăнлăх,



философи шайне) — ситмен пурнăçпа пурăнакан хресчен чăнлăхĕ. Чăваш чăнлăхĕ.

«Ăс-тăн тĕлĕшпе мĕнле те, çынсем хушшинче Никоновăн чăнах та вара пĕрне-пĕри хирĕçле, пĕрне-пĕри хуплакан икĕ ен палăрать: е вăл ытла... мĕскĕн, е хăюллăрах пулма хăтланать те — чаракне те çухатать», — çапла палăртать Хветĕр Уяр чăваш халăхĕн çак енне.

Стражник чăваш пирки: «Начальствăна хисеплеме пĕлмен халăх», — тесен, Çимун: «Тархасшăн, Самсун Михалăч», — тесе пĕшкĕнет те — хăйĕн пуçĕ урлах сиктерет. Иван Путяков артист чăвашăн çак енне (уйрăмах Ерçенпе калаçнине тата Еляна пусмăрлама тытнă шухăша) ятне тӳрккес, çăра сăрăсемпе кăтартать.



Мĕншĕн — эсĕ?
Мĕншĕн — вăл мар?
Лешĕ мар?
Тепри мар?
Мĕншĕн?

*Раиса Сарпи.*

Хура вăрман варринче
Йывăç-курăк хумханать.
Манăн куçăм умĕнче
Санăн пĕвӳ хумханать.

*Халăх юрри.*

Çапла, хамăра хамăр эпир Ерçен пекех: «Тен, эпĕ те çĕр хурчĕ пек кунĕн-çĕрĕн чаваланма мар, пĕр-пĕр шухăш, идея çуратма çак тĕнчене килнĕ», — тетпĕр. Тетпĕр те, анчах — пирĕн куçсенчен каçхи тӳпери таçта чĕнекен, илĕртекен çăлтăр çутине хуплама хĕрарăм арки те çителĕклĕ иккен.

Рая вĕренекен Ерçене чăнласа хаклама, юратма пултарайманнинче, тен, халăхăмăр пирки каланă чăнлăх та? Кил-çурта, пахчана, выльăх-чĕрлĕхе, укçана... кăна мала хурсан — ытти культурăллă халăхсемпе эпир хăçан та пулсан танлашăпăрши? Çакăн пирки те шухăшлаттарасшăн театр куракана.

Рая Ерçенрен мăшкăлланине Г.Пескова артистка ĕненмелле — сиси-сисĕнми сăрăсемпе ăсран кăлармаллисене ылмаштарса — вылять. Питĕ тулли (юратăвĕ те, мăшкăллас тени те, мăнкăмăллăхĕ те...) сăнар калăплама пултарчĕ артистка.



Пире ăса ăссăррисем вĕрентнĕ.
*Алексей Аттил.*

Кам çын шухăшне хăратса çук тăвать,
Кам çын ачине выльăха кăларать —
Чул пулнă, кĕл пулнă,
Çухалнă, пăчланнă,
Ватсен пехилне манса кайнă.
*Иосиф Дмитриев.*

Андрей Павлăч — хăй халăхĕнчен хăй йĕрĕнекен, халăхăн чун çутине нихçан та чăн çутă вырăнне хуман вĕрентекен символĕ.

Пире пурсăмăра та андрей павлăчсем вĕрентнĕ. «Шăршлă чăваш картинчен» çутта кăларнă: малтан христианство, вырăс çуттине, кайран — коммунизмла вырăс çуттине.

М.Ястран артист ку роле мĕн пурнăç тăршшĕпех выляна тейĕн. Вĕрентекенĕн кулăшла (Ленинла), ухмах, айăплă енĕсене вăл çăмăллăн, ятне пусăмламасăрах кăтартатчĕ. Кулас та килетчĕ вăл калăплакан сăнартан, шеллес те килетчĕ ăна. Апла — хамăра Андрей Павлăчран çӳлерех туятпăр пулсан — темскер улшăнмаллах: чăваш интеллигенцинче те, «ăса» вĕрентекенсенче те.



«Вĕçсе пырать пулĕ пирĕн атте çӳле-çӳле. Чим-ха, çӳле мар. Çакăнпа сынсем тӳрех тамăка каяççĕ терĕ-ске-ха пачăшкă. Çитрĕ пулĕ ĕнтĕ атте тамăка... Ыйтать пулĕ аслă шуйтанĕ: «Мĕншĕн куланай тӳлемерĕн?» — тесе. — «Мĕншĕн?»

*Кĕтерук.*

Ачалăхăм — шур юрлăхăм,
Юр ăшшинче выртмалăхăм.
Ачалăхăм — çут уйăхăм,
Пыран çула уçмалăхăм.

Ачалăхăм — çурçĕрлĕхĕм,
Çурçĕр çилне илтмелĕхĕм.
Ачалăхăм — ачашлăхăм,
Хăр-хар çиле сирмелĕхĕм.

*Иосиф Дмитриев.*

А.Миттован ӳкерчĕкĕсенче мăн çынсем те — ача пек. «Чăваш чунĕ — черчен, хурлăхлă, хăвăрт аманаканскер, теприн чун-чĕрине те хăвăрт ăнланать, хăш чухне вăл пĕтĕмпе ача чунĕ пек», — тет Ева Лисина çыравçă, хăй те çак чуна пултару никĕсне хунăскер.

Усал шăпапа та, Турă çырнипе те çырлахман Кĕтерукăн «Мĕншĕнĕ» вăл — халăх хăй куракан инкеке йышăнса чунĕпе пусăрăнманни те.

Хурлă юрă юратакан Кĕтерук спектакльте чăваш чунне тӳперен сăнăласа тăракан усал шăпапа теттепе выляни пек вылять. Вылять — пĕтес тесе мар, тухатнă тăлăсенчен хăтăлас тесе. Çак утăма вăл пуçа çухатса мар, халăх юррисенчи хурлă шăпа пирки шухăшланă шухăша ăша илсе тăвать.

«Гени вăл — ача», — тенĕ Бодлер.

Кĕтерук ролĕнче Полина Владимирова — пĕчĕк хĕрача.

*Юрий Яковлев.*

**Ефрем ЕЛЛИЕВ**

# ПИРĔН ТЕЛЕЙ ÇАВНАШКАЛ*

**Вылякансем:**

С е р г е й — чухăн ывăлĕ, каярах — рабочи.
Ç и м е н — чухăн хресчен.
Ч ĕ к е ç ç и — унăн арăмĕ.
Е л я — унăн хĕрĕ, 18-та.
К ĕ т е р у к — кĕçĕн хĕрĕ, 10—12 çулта.
П е т ĕ р — вăтам хресчен, староста.
Е р ç е н — унăн ывăлĕ.
Ç и м у н — пуян.
В и к т о р — ывăлĕ, 20-ре.
Р а я — хĕрĕ, 19-та.
А н д р е й П а в л ă ч — учитель.
С а м с о н М и х а й л ы ч — стражник.
Хĕрсем, салтак ачисем т.ыт...

---

* Пирĕн институт архивĕнче «Çухалнă телейсем» драмăн икĕ варианчĕ упранать. Хальхи театр чĕлхине, Е.В.Еллиевăн шалти (цензурăна пула тĕпрен каланман, ытарлă кăна палăрнă) тĕнчине шута хурса иккĕрен пĕрре тума май килчĕ. Ятне те улăштарма тиврĕ, поэзи театрĕ (В.Н.Оринов режиссер ĕçлекен меслет) нумай пĕлтерĕшлĕхе, кĕвĕлле янравлăха, философилле тарăнăша ыйтать. Пьеса текстне те хальхи театр принципĕсемпе килĕштерсе улăштарма тиврĕ. Юратнă çыравçăмăра пурте — пьесăна хатĕрлекенĕ те, режиссерĕ те, артисчĕсем те — хăйсен чун ăшшине пачĕç. Çапла театр сцени çинче хăйне майлă кĕтрет пулчĕ. «Пирĕн телей çавнашкала» куракансем те, критиксем те йышăнчĕç. (Вулăр: *Воробьев М.* Душа народа истосковалась по радости бытия. — «Чăваш ен», 1992, № 42; *Кириллов К.* Подлинно чувашское полотно. — Там же; *Яковлев Ю.* Героическая симфония. — Там же; *Андреев П.* Мĕн çитерес ачана? — «Хыпар», 1992, юпа 7-мĕшĕ; *Кириллов К.* Чăтăмлăх чĕртнĕ чĕм. — Çавăнтах; *Яковлев Ю.* Çапларах шăпа чăвашăн. — Çавăнтах; *Федоров Г.* Чего не смогли увидеть московские эстеты? — «Чăваш ен», 1993, № 7; «Такова наша доля». — «Чебоксарские новости», 28 ноября 1992; *Яковлев Ю.* Любить Россию — любить правду. — «Советская Чувашия», 11 декабря 1992; *Кириллов К.* Утап асаплă çулпа. — «Тантăш», 1992, 2 декабря 1992; *Майская Л.* Çутă сăнар. — Çавăнтах; *Яковлев Ю.* Киреметсем вĕсем — Çеркейсем. — Çавăнтах; *Ефимова А.* Чĕри çаплах чулланман. — «Хресчен сасси», 1992, 48 №; *Алимасова Г.* Икĕ сехет ытла — ачалăх тĕнчинче. — Çавăнтах; *Яковлев Ю.* Чăвашăн ыйăхлă чунĕ канăçсăрланĕ-ши? — «Илем», 1994, 5 №; *унăнах.* Чăнлăха куçран пăхас тени (Ефрем Еллиева асăнса). — «Хыпар», 1995, нарăс, 8.)

## ПĔРРЕМĔШ СЦЕНА

**Сцена.** Аслă урама тухакан тăкăрлăк. Аслă урам. Пуян Çимун çурчĕн пĕр кĕтесĕ пит чаплăн курăнса ларать. Тăкăрлăкра — Çименĕн чухăн çурчĕ. Тайăлнă вăл, пит хурлăхлă.

Аслă урамра хĕрсем юрлани илтĕнет.

Хăйсем курăнмаççĕ.

Мăнаçлăн стражник утса кĕрет. Вăл хĕçпе, мундирпе. Пуян Çимун çурчĕ тĕлне çитерехпе вăл юсанса илет. Уттине чакарать.

Çимунăн тăкăрлăк енчи чӳречи уçăлать.

**Çимун** (*чӳречерен*). Самсун Михалч! Ăçталла чуптаратăн? (*Пуç тайса*) Аван-и?

**Стражник** (*çĕлĕкне çĕклесе*). Семен Степанăч! (*Вырăсларах калать чăваш сăмахĕсене.*) Хĕрсем патне каятăп-ха. (*Юрланă еннелле аллипе сулса кăтартать.*)

**Çимун**. Хĕрсем патне?.. Хă-хă... Самсун Михалч та хĕрсемшĕн пуçне çухатнă эппин... Хă-хă... Асту, Самсун Михалч, Марье Йăванна каласа парсан, кăтартĕ вăл сана хĕрсем... Хă-хă...

**Стражник.** Кулассипех эсĕ, Семен Степанăч. (*Çимун патне утса пырса.*) Ниепле те йĕркене вĕрентсе çитерейместĕп, Семен Степанăч. Ыран спас. Ырă çынсем мунча кĕреççĕ те — çывăраççĕ. Хĕрсем ав юрра янă — мĕнле йĕрке пулать вара вăл? Ман матка... хм-м... çывăраймасть. Çавăнпа хăваласа ярас тесе тухрăм. Хăçан чăваш йĕркене вĕренĕ ĕнтĕ...

**Çимун.** Вĕрентмелле, Самсун Михалч, вĕрентмелле! (*Çав вăхăтра юрă чарăнать, такам кулса ярать.*)

**Стражник.** Эсĕ, Семен Степанăч! Хулана кайманччĕ-и?.. Мĕнле хыпарсем пур?..

**Çимун.** Хыпарсем, тен. Ним çĕнни те çук пек. Участкă сана тухмалла теççĕ. Анчах халăхĕ пирĕн акă ăнланасшăн мар! (*Пауза.*) Кĕретни, Самсун Михалăч! Пăртак калаçса ларăпăр...

**Стражник.** Кĕме... Эпĕ çав çамрăксем патне çитсе çаврăнасшăнччĕ те!

**Çимун.** Кĕр-ха, кĕр... Юрлама чарăнчĕç пулас. Кĕр-ха... Чей ĕçĕпĕр. Хуларан пăртак хĕрлине те илсе килнĕччĕ...

**Стражник.** Хĕрли те пулсан — кĕрес вара.

**Çимун** (*шалалла*). Марук! Марук, тетĕп. Самсун Михалăч килет — чей ларт-ха.

**Стражник** (*крыльца çине хăпарса*). Лайăх пурăнатăн, Семен Степанч, чăваш пек те мар... Вырăс пулмалла пулнă сан, Семен Степанч... Чистă пурăнатăн...

Аслă урампа Сергей хăй юлташĕсемпе салтак юрри юрласа иртет.

Хура вăрман урлă та каçнă чухне
Хуран çулçи ӳкрĕ те пуç çине.
Чиперех те ӳссе çитĕнмесĕрех
Пысăк хуйхă ӳкрĕ пуç çине...

**Стражник** (*кĕме чарăнса*). Эй, эсĕр! Ытла ан ĕçĕр! Кĕçĕр çӳремесен те юрать... Ыран спас!..

Салтак ачисем илтмеççĕ.

**Стражник** (*Çимуна*). Ман матка каллех çывăраймасть ĕнтĕ. Арăм ман çавăн йышши, чăтма пултараймасть чăваш юррине.

**Çимун.** Ара... Марье Йăванна... мĕн хăй те... (*Салтак юрри вăл мĕн каланине хупласа хурать.*)

**Стражник.** Кам ачи-ха вăл... леш яштаки?

**Çимун.** Сергей пулмалла вăл. Макçăм ывăлĕ.

**Стражник.** А-а... ашшĕ те ун çавăн йышши. (*Салтак ачисене кăшкăрать.*) Эсĕр ма итлеместĕр? Ма çĕлĕкĕрсене те хывмастăр?..

Сергей юри мăшкаллана пек çĕлĕкне хывса пуç таять.

**Стражник** (*çиллине чарса*). Юрать салтак ачисем, атту пулсан...

Сергейсем юрласа иртсе каяççĕ.

Пасартан та илнĕ хранцус тутăр,
Тăват кĕтессисем пичетлĕ.
Нумаях тăмăпăр, час каятпăр,
Эпĕр каяс кунсем хисеплĕ.

**Стражник** (*Çимун çине ăшшăн пăхса*). Мĕнле, Семен Степанч, чăваша начальствăна хисеплеме вĕрентмелле? Çĕлĕк хывса хисеп тума пĕлмеççĕ вĕт!

**Çимун.** А пăртак вĕрентмелле, Самсун Михалч, хисеплеме вĕрентмелле! Ăслăланаççĕ вĕсем — пăртак вĕрентсен...

**Стражник.** Хисеплеме пĕлмен халăх.

Кĕрсе каяççĕ. Пăртак тĕттĕмленет.
Еля пĕччен кĕрет. Йĕри-тавра пăхкалать, итлет.

**Еля** (*ачашшăн, хĕрӳллĕн*). Ах, аран-аран каç пулчĕ. Каç пулмасть пуль тесеччĕ паян. Виктăр çĕркаç каланă сăмах хăлхаран каймасть. Ах, ĕненме те хăратăп вăл каланине. Чăнах пулĕ-ши? Чăнах вăл мана качча илĕ-ши?.. Эх, мĕн пуласси пулĕ ĕнтĕ, Турă çырнинчен иртес çук.

Кайма тăрать, çав вăхăтра Сергей кĕрет.

**Сергей.** Еля...

**Еля** (*çӳçенсе*). Ах! хăратрăн.

**Сергей.** Те манран таратăн эс, Еля! Хĕрсем патне кайрăм — унта çук!

**Еля.** Эп халь кăна унта пырасшăнччĕ...

**Сергей** (*кăмăлсăр*). Стражник мана çĕлĕк илменшĕн вăрçрĕ.

**Еля.** Мĕншĕн çĕлĕкна хывмастăн вара? Пăртак хисеплемелле ĕнтĕ... Ну, мĕн? Эсĕ вăййа кайма тухнă-и?.. (*Кайма тăрать.*)

**Сергей.** Еля, эпĕ юлташсенчен юри юлтăм. Ман санпа калаçмалли пур... Еля, ыран-и, тепĕр кун-и эпир каятпăр... каятпăр инçе. Таçта Çĕпĕр леш енне. Яппунсем патне. Тен, урăх кураймăпăр та... (*Хурланса илет.*) Еля, вăрçăра, тен, вĕлерĕç. Каласам, Еля, пĕр сăмах. Вилнĕ чухне сан сăмахна асăнса вилем. Пĕр ăшă сăмах кăна, Еля...

**Еля.** Мĕн калăп ĕнтĕ сана, Сергей. Эсĕ пĕлен вĕт...

**Сергей.** Пĕлетĕп. Çавăнпа мана йывăр та... Виктăршăн мана тиркетĕн. Юлашки каç та калаçасшăн мар! Чăнах, çав пуян ывăлĕ — Виктăршăн мана тиркетни? Вылять кăна санпа вăл, Еля. Улталать, пĕтерет вăл сана, Еля... Эх, мĕншĕн çапла чухăн хĕрсем çав пуян каччăсене хапсăнаççĕ-ши?..

**Еля.** Сергей! Мĕн эсĕ калаçатăн? Никама та эп хапсăнмастăп!..

**Сергей.** Эх, куратăн та ĕнтĕ мĕн курмаллине...

Çимун çуртĕнчен кĕленче сасси илтĕнет, унтан грамофон сасси.

**Сергей.** Ав, Еля! (*Пуçĕпе Симунсен енне кăтартса.*) Эсĕ те çапла... телейлĕ пулăн. Çемçе тӳшек! Грамофон! Пыл та çу! Савăнăçлă пурнăç. Пăх, ав, еплерех савăнаççĕ. Çавна хапсăнатни, Еля?

**Еля.** Сергей, чарăн-ха, тархасшăн! Эпĕ хам та пĕлместĕп: мĕскер манпа пулса иртет... Сана та юрататăп пек... Виктăртан та уйрăлаймастăп... Ах, сисетĕп, сисетĕп, ырăпа пĕтес çук ку! Ырăпа пĕтес çук! Чĕре туять...

**Сергей.** Еля, сисетĕн пулсан пăрах ăна. Ан хапсăн пуянлăха... Айта хам пата. Пирĕн патра пурăнăн эпĕ таврăниччен...

**Еля.** Çук, çук! Ан та калаç... Темскер чарать мана санпа пĕрле пулма...

**Сергей.** Еля (*ăна аллинчен тытса хăйĕн патнерех туртать*). Еля...

Виктăр, Рая, Ерçен алăран-алла тытăнса кĕреççĕ. Еля вĕсене курсан шартах сикет. Сергейран пăрăнарах тăрать.

**Виктăр.** Сергей!

**Сергей.** Мĕн вара?..

**Виктăр.** Кай кунтан!

**Сергей.** Мĕншĕн?

**Виктăр.** Кай тенĕ!

**Сергей.** Каймастăп.

**Виктăр.** Тутанса пăхнă-и эс рычак тутине?! Асту! Асту! Тутантаратпăр! Ерçен, кăшкăр хамăрăннисене!..

**Еля** (*хуллен пырса*). Сергей, кай! Тупата, кай! Эпĕ хăратăп... Пĕтеретĕн мана эсĕ!.. Сергей...

**Сергей** (*хурланса*). Эх, Еля! Ӳкĕнĕн-ха!.. (*Виктăра*) А çапах та санран хăрамастăп!

**Виктăр.** Атя, атя, уттар! Нумай калаçса ан тăр!..

**Сергей.** Юрĕ! Каятăп! Çапах та сан, Виктăр, шалчу тулĕ-ха!.. (*Каять.*)

**Ерçен.** Сергей чăн чăвашла тарать: хăй хăранăран каять, çапах та хăмсарса хăварать-хăваратех...

**Рая.** Ну, кайрăмăр-и, чăваш характерне пĕлекенскер. (*Каяççĕ.*)

**Виктăр** (*хирĕлчĕк кăмăлпа*). Эсĕ мĕн? Урăххине юратас терĕн-и?.. Апла пулсан, мана ун пек хĕр кирлĕ мар!..

**Еля.** Виктăр, шутласа пăх-ха хăвах: айăплă-и эпĕ сан умра. Эпĕ сана кĕтсе тăраттăм, вăл иртсе пыратчĕ те, мана курчĕ те манпа сăмахласшăн пулчĕ: эпĕ пĕр сăмах та хушмарăм...

**Виктăр.** Ĕненетĕп. Ĕненетĕп... Ахаль кăна эпĕ... Ну юрĕ, ан хурлан... Атя, кăшт уçăлса çӳрер. (*Çавтăнаççĕ те каяççĕ.*)

Сергей тăçтан тухать.

**Сергей.** Кайрĕç. Илсе кайрĕ. Ак мĕн тăвать вăл пуянлăх... Мĕнпур хĕр вĕсем кăчăк туртасса кăна кĕтеççĕ-шим вара?.. Çук-ши вара тĕнчере юратун сумĕ? Е вăл нухратпа юнашар çӳпĕ кăна... (*Каять.*)

Ерçенпе Рая кĕреççĕ.

**Ерçен.** Кăшт ларса канар-ха, Рая.

**Рая.** Кĕмелле-тĕр ĕнтĕ. (*Йĕкĕлтевлĕ саспа.*) Мĕн ĕçлесе ларар ара çĕр хута?..

**Ерçен.** Ларар-ха, Рая (*ăна хăй çумне туртса лартать*). Темле тĕлĕкри пек хама туятăп... Çав тери ырă санпа, Рая!

**Рая.** Ырă тетчĕç çав...

**Ерçен.** Пирĕн çӳресси те тата пĕр эрне кăна юлчĕ. Час каятăп ĕнтĕ, Рая...

**Рая.** Каймалла пулсан каяс пулать ĕнтĕ... Мĕн тăвăн?..

**Ерçен.** Пĕлетĕп, эсĕ мана пĕртте асăнас çук эпĕ кайсан...

**Рая.** Эсĕ вилнĕ çын мар вĕт асăнма! (*Анаслать.*) А-а-а... Çывăрас килет...

**Ерçен.** Рая, кала-ха: пулăпăр-и эпир хăçан та пулсан пĕрле? Ĕмĕрлĕхе пĕрле.

**Рая.** Каçĕ сулхăн паян — кĕретĕп эпĕ...

**Ерçен.** Юратмастăн пулмалла çав мана эсĕ, Рая... Манпа та ахаль кăна, никампа çӳреме çукран çӳретĕн пулас...

**Рая.** Ерçен, пăх-ха... Епле кичем паянхи каç сăнĕ... Уйăх та, ав, пĕлĕт хыçне пытаннă...

**Ерçен.** Рая, ĕненсем мана, пĕр саншăн кăна ман чĕре çунмаллипех çунать. Ĕненсем, Рая...

**Рая** (*йăкăлти хĕр, кокетка пек*). Пĕлĕт хушшинче ав çăлтăрпа çăлтăр чуптурĕç... Ну, сывă пул ĕнтĕ. Ыранччен. Тутлă тĕлĕк кур... (*Килне кĕрсе каять.*)

**Ерçен** (*хăй тĕллĕн калаçса*). Пĕлесчĕ ман унăн чĕри çумĕнчи шухăшĕсене. Туятăп, темскер пытарать вăл манран... Хăй çумне лартать-ха, анчах шухăшĕ-ĕмĕчĕсемпе таçта инçетре çӳрет... Илмест мана хăйпе çав çулçӳреве... Ашшĕ-амăшĕ пуян пулнăран ютшăнать-ши ĕнтĕ вăл манран, пуян мар хресчен ачинчен... (*Юлашки сăмахсене хăйĕнчен хăй тăрăхларах калать.*) Анчах укçара кăна мар-çке этем хисепĕ... (*Пĕчĕк пауза.*) Тен, эпĕ те çĕр хурчĕ пек кунĕн-çĕрĕн чаваланма мар, пĕр-пĕр шухăш, идея çуратма çак тĕнчене килнĕ... (*Пауза.*) Райăна эп юрататăп, унпа пĕрлешсен вăл манăн пирĕштийĕм пулĕччĕ, вара эп çунат хушса татах та ытларах тăрăшăттăм...

Шухăша каять. Çав вăхăтра аякри юрă сасси [илтĕнет].

Ан илĕр пуян хĕрсене:
Хуйхă ӳкĕ пуç çине...

Ерçен каять. Сцена пĕр вăхăт пушă, унтан Сергей кĕрет. Аллинче чул. Пытанать. Ельăпа Виктăр кĕреççĕ.

**Виктăр** (*Ельăпа куça-куçăн тăрса*). ...Еля!..

**Еля** (*чĕнмест*).

**Виктăр.** Ыранах аттене сана кавча илесси пирки калатăп... Ну мĕн эсĕ пуçна чикрĕн?! Е пырас мар тетни?!

**Еля** (*чĕнмесĕр кăшт тăхтанă хыççăн*). Килĕшес çук вăл... ман пек чухăн хĕре кин тума.

**Виктăр.** Килĕшет. Эпĕ сана калатăп: тăватпăр туй. Мана сансăр пуçне урăх никам та кирлĕ мар... ним те кирлĕ мар.

**Еля.** Виктăр, улталамăн-и эсĕ мана?.. (*Ăна куçĕнчен пăхса.*) Чĕре тĕпĕнчен тухаççĕ-и, сан сăмахусем?.. Икĕпитленместĕн-и эсĕ пуянсен йăлипе, Виктăр?!

Çав вăхăтрах Сергей пенĕ чул Виктăра чутах
лекмесĕр юнашар çатан картана пырса лекет.

**Виктăр** (*сăнĕпе улшăнса кайса, кăшкăрать*). Кам унта?.. (*Тепĕр чул вăркăнать.*) Эй, пăрах! Вĕлеретĕп, тытсан! Эй! Разбой!..

Çимунпа стражник тухаççĕ.

**Стражник.** Мĕн кăшкăрашатăр?!

**Виктăр.** Ав, такам алхасать... Чулпа перет... Сергей пулмалла... (*Ельăна*) Саншăн тавăрасшăн вăл мана... Кай-ха эс кильна, атте умĕнче аван мар... (*Еля каять.*)

**Стражник.** Çав паçăр çĕлĕк хывманни-и вăл — Сергей?

**Çимун.** Çавă! Çавă!..

**Стражник.** Юрать, кăтартăп-ха эп ку ачана пĕрре!.. (*Шăхăртать.*) Дозор! Дозор!

**Çимен** (*шакăртпа*). Мĕн пулнă ара? Шавлаççĕ!

**Стражник.** Эсĕ ăçта çӳрен! Э-э... Кайса илсе кил Сергее!.. Живă!.. (*Нухайкипе хăлаçланать.*)

**Çимен.** Ăçтан тупас-ха ман ăна?

**Стражник** (*ӳсĕр çын сассипе*). Хăть те ăçтан туп! Килĕнчен илсе кил!.. Вĕлереп илсе килмесен!..

Çимен каять.

**Стражник.** Эп вĕрентĕп ăна чулпа пеме!.. Тупăннă герой!..

**Çимен.** Ак кунтах вăл, Самсон Михалч! (*Сергее илсе кĕрет.*) Ав çав тĕмĕсем хыçĕнче тăратчĕ...

**Стражник** (*нухайкăпа çапса*). Эсĕ мĕн чулсемпе перетĕн, э?

**Виктăр.** Лайăхрах парăр ăна, Самсон Михалăч! Атту вăл урсах кайнă...

**Стражник.** Çимен! Çых! Аллине каялла туртса çых!

**Çимен.** Ниçта та каймĕ, Самсун Михалч!..

**Стражник.** Çых тенĕ сана! (*Çимен çыхать.*) Тыт нухайкă!.. Тыт!

**Çимен.** Самсун Михалч! Эп халиччен те çынна хĕнемен! Епле хĕнес?!

**Стражник.** Ничево... вĕренен! Тыт тата хăвна лекиччен!

**Çимен** (*нухайкă илет*). Эх! Сергей! Эсĕ мана турăшăн, та каçар... Хушаççĕ вĕт...

**Стражник.** Выртта!.. Уç çурăмне! Ну!..

**Çимен.** Эх, мĕншĕн кăна кĕçĕр дузура тухрăм... (*Тата темскер мăкăртатса тăрать.*)

**Стражник.** Ну, команда тăрăх! Çирĕм пилĕк!..

**Сергей.** Хĕнĕр-хĕнĕр! Вĕлерĕр! Мана пурпĕрех ăçта вилесси — кунта-и е вăрçăра...

**Стражник.** Çак чăваша макăрса йăлăннине курăттăм!

**Çимун.** Йăлăн, Сергей, йăлăн! Тен, каçарĕ!.. Мĕншĕн хуна ху хĕрхенместĕн...

**Стражник.** Вăл йăлăнать-и? Хăй йăваш пулсан та, пăхăнман кăмăл чăвашăн! Вăл кăмăла эпĕр!.. Ну! Пĕрре!..

**Çимен.** Сергей, ачам, итле ват çын каланине! Ӳксе пуççап! Каçарĕ-и, тен, Самсун Михалăч...

**Сергей.** Кайăр! пурпĕрех пĕтмелле!..

**Стражник.** Ну, Çимен! Пĕрре!

Çимен çапать. Иккĕ! Виççĕ! Тăваттă!..
Чаршав хупăнсан та хĕнеççĕ...

## ИККĔМĔШ СЦЕНА

Çименĕн чухăн çурчĕ. Пĕр пĕчĕк чӳрече. Кутник. Кутник çинче чирлĕ Кĕтерук выртать. Ун патĕнче амăшĕ вĕрӳ-суру чĕлхи калать.

**Чĕкеççи** (*Кĕтерук пуçĕ тавра чашăкпа шыв çавăрса*). Мул иййи, мул алпасти, мул капкăнĕ, мул çăткăнĕ, мул синкерĕ, сехмечĕ-хаярĕ, — ĕç те, çи те — тух та кай!

**Кĕтерук.** Анне! Мĕн ара вăл — мул иййи? Мĕншĕн тытать вăл мана? Мĕн тунă ара эпĕ ăна?..

**Чĕкеççи.** Мĕн тунă? Ăçтан пĕлес, хĕрĕм, мĕн тунине... Çапла калаççĕ ĕнтĕ. Мул иййи тытать тет те... этем вара анрать тет...

**Кĕтерук.** Çимун мулĕ те усал-и, анне?

**Чĕкеççи.** Кам пĕлет ĕнтĕ ăна, хĕрĕм... Выр-ха, выр эсĕ! Ак çапла. (*Пуçелĕкне çӳлерех хурать.*) Эй, аташтартăн-ха! (*Хăйĕн йăла ĕçне малалла тăсать.*) Ял çинче çӳрен

выбăрщикĕ, стражникĕ, теçетникĕ, старăсти, ĕç те, çи те — тух та кай!.. (*Татах пуç тавра çавăрса тăкать.*)

**Кĕтерук.** Анне! Старăстă та усал-и? Пĕркун пирĕн пата темскер ыйтма килнĕччĕ-çке...

**Чĕкеççи.** Усал, хĕрĕм, усал. Пирĕншĕн пурте усал! Куланайшăн еплерех вăрçрĕ те... (*Пауза.*) Ну, пăртак çывăр ĕнтĕ, хĕрĕм! Çывăрсан пăртак лăпланмĕ-и?.. (*Кĕлне тем пăшăлтатса вĕçтерет...*) Ăш-чиккӳ ыратма чарăнчĕ-и-ха, хĕрĕм?..

**Кĕтерук.** Чарăнчĕ ĕнтĕ... Вăй кăна пĕрре те çук.

**Чĕкеççи.** Ну, çывăр пĕр авка! Урусем шăнмарĕç-и?.. (*Кĕтерук ури вĕçне ларать, урине витет.*) Ну, çывăр ĕнтĕ, хĕрĕм!

**Кĕтерук.** Анне, юрласа пар-ха? Аттепе иксĕр час-часах юрлаканнине... Хурлăхлине...

**Чĕкеççи** (*куççуль витĕр кулма тăрăшса*). Хурлăхлине... Ай Тур, ачам!.. Хурлăхли вара сана кирлĕ-и?.. Сан хурланмалла та мар вĕт. Савăнса кăна чупса çӳремелле... Юрĕ, юрласа парам эппин:

Çити-çитми пурнăçпа
Ула лаша туянтăм.
Çапăм-çапăм, чупмарĕ.
Пирĕн телей çавнашкал.

Çити-çитми пурнăçпа
Ула ĕне туянтăм.
Сума лартăм — сĕт памарĕ.
Пирĕн телей çавнашкал.

Çити-çитми пурнăçпа
Хура кушак туянтăм.
Çын кĕлетне сыхларĕ.
Пирĕн телей çавнашкал.

Çити-çитми пурнăçпа
Ялтан арăм туянтăм.
Хура пулчĕ, лутра пулчĕ.
Пирĕн телей çавнашкал.

**Чĕкеççи** (*юрланă хыççăн кăшт чĕнмесĕр ларсан*). Йывăр пирĕн пурнăç, хĕрĕм, йывăр, анчах вăл ĕмĕр тăршшĕпех çапла пымĕ тетĕп... Пирĕн пуçăмăрсем çинчи хуйха сирме,

хĕрĕм, Турă пур... (*Пауза.*) Ак, часах чĕрĕлĕн, хĕрĕм!.. Вара иксĕмĕр улăха кайăпăр! Пултăран татма! Астăватни, пĕрре кайнăччĕ! Эсĕ йывăç çине хăпарма пуçларăн та — ӳкрĕн...

**Кĕтерук.** Астăватăп, анне! Астăватни, эпир ун чухне чĕрĕп куртăмăр? Эп хăрарăм. (*Кăшт куланçи тăвать.*)

**Чĕкеççи.** Ара, ара... Ак пăртак култăн та, хĕрĕм... Кулкул, ачам. Халех макăрсан, ай-яй нумай макăрмалла пурнăç тăршшĕпе! Ак, чĕрĕлĕн, татах улăха кайăпăр... Юрать-и?..

**Кĕтерук.** Эп чĕрĕлеймĕп çав, анне. Çурччен эпĕ вилетĕп. Çапла мана темшĕн туйăнать...

**Чĕкеççи.** Ай Тур, хĕрĕм! Мĕн калаçан эсĕ?.. (*Ыталаса.*) Хĕрĕм, ан калаç-ха апла. Чĕрене ан çур...

**Кĕтерук.** Анне! Эп вилсен рая кайăп-и? Ман пек пĕчĕккисем рая каяççĕ, терĕ пире пачăшкă.

**Чĕкеççи.** Ах, хĕрĕм, ан калаç-ха ун çинчен... Шелле аннӳна...

**Кĕтерук.** Анне! Пуян Çимун вилсен рая каяймасть вĕт... Пуянсене рая кĕме йывăр, терĕ пачăшкă... Анне, вĕсен луччă чухăн пулмалла... Луччă рая каяччĕç...

**Чĕкеççи.** Çывăр ĕнтĕ, хĕрĕм, çывăр! (*Кăшт чĕнмесĕр тăхтанă хыççăн.*) Асту, пулĕç вĕсем чухăн... Райшăнах чухăн пулмаççĕ ĕнтĕ вĕсем. Вĕсемшĕн пачăшкă кĕлтăвать те, вĕсен çылăх каçать. Лекчĕр-ха вĕсем, хĕрĕм, тамăка. Кунта пиртен пит кулаççĕ...

**Кĕтерук.** Анне, апла калама юрамасть. Апла çылăх... Пире пуриншĕн те кĕлтума хушаççĕ. Çимуншăн та кĕлтумалла... Вăл та рая лектĕр...

**Чĕкеççи.** Ай, мĕскер кăна вĕрентмеççĕ пулĕ сире шкулта. Ан кĕлту, хĕрĕм. Кунта та райра пурăнаççĕ, лере хăть пăртак асапланччăр. Ай, хĕрĕм, ан калаç-ха ун çинчен, çывăр...

**Кĕтерук.** Эпĕ вилсен мана шурă кĕпе тăхăнтартăр! Çынсем килĕç вара мана курса юлма... Эпĕ Ивана та каçаратăп, вăл мана хĕнетчĕ пулсан та... Эпĕ, анне, пурне те каçаратăп...

**Чĕкеççи.** Çитĕ, çитĕ, хĕрĕм! Çывăр ĕнтĕ... çывăр! Ак юрласа парăп эппин. Ну, юрĕ ĕнтĕ, эсĕ юратаканнинех юрлăп! Мĕнлеччĕ-ха?

**Кĕтерук.** Анне, халапне те яр «Сик-сик, лашам, сик, лашам» текеннине.

**Чĕкеççи.** Юрĕ, юрĕ, хĕрĕм (*юрлать*).

Акăр çулĕ тап-такăр,
Уйăх çути çап-çутă.
Чуп-чуп, лашам, чуп, лашам!
Усал кайăк çитиччен...
Çитет, çитет, пĕтет пуç,
Çăлсам, çăлсам, юсманăм!..

**Кĕтерук.** Халап ярса пар-ха, анне...

**Чĕкеççи.** Юрĕ, халап та ярса парăп. Мĕнле халап ярасши вара? Халапĕсем те ĕретлисем çук...

**Кĕтерук.** Анне, леш хĕр çинчен ярса пар-ха!..

**Чĕкеççи.** Юрĕ эппин. Пурăннă тет карчăкпа старик. Ватă пулнă тет. Урисене те сĕтĕреймен тет. Мĕн тумалла-ши тесе шутласа лараççĕ тет... Пирĕн пек чухăн çынсем пулнă тет... Вĕсен пĕр хĕр пулнă тет... Хитре хĕр. Пĕр пичĕ хĕвел пулнă тет, тепĕр пичĕ уйăх пулнă тет... Калама çук хитре пулнă тет ĕнтĕ...

**Кĕтерук.** Пирĕн Еля пекех-и, анне?

**Чĕкеççи.** Пирĕн Еля пекех, хĕрĕм. Сăнĕ-пуçĕ те хитре, алли-ури те правур, чĕлхи-çăварĕ те пыл та çу пулнă тет. Анчах тумланма вара нимех те пулман тет. Чухăн пулнă тет... пирĕн пек. Пурăнать, пурăнать тет ку хĕр. Кавча кайма та вăхăт çитнĕ тет. Анчах никам та çураçма килмест тет. Чухăн, тесе калаççĕ тет. «Кай, хĕрĕм, — тесе каларĕç тет вара карчăкпа старик, — телей шырама. Çавăнта-çавăнта телей тупăн», — тесе каларĕç тет. Тухса кайрĕ тет ку хĕр çула... Сĕм вăрмана кĕрет тет. Унтан тухать тет те курать тет пысăк ту. Хăпарать тет ту çине. Унта ылтăн та кĕмĕл çурт ларать тет... Йĕри-тавра чечексем, чечексем тет... Йĕри-тавра сат тет... Йăлт хитре тет, калама çук...

**Кĕтерук.** Эпĕ те çавăнта кайăттăм!..

**Чĕкеççи.** Пирĕн хĕр пăхрĕ тет те хытрĕ кайрĕ тет, ни малалла каяймасть тет, ни каялла... Тăрать тет тĕлĕннипе хытса... Ак, ăна хирĕç çурт хуçи тухать тет... Кĕлеткипе улăп пек тет. Пустав халатпа, ылтăн та кĕмĕл çĕлĕкпе! Пирĕн хĕр çине пăхрĕ тет те тĕлĕнсе хытса кайрĕ тет. «Ăçтан килтĕн эсĕ? — тесе ыйтать тет. — Сан пек хитре хĕр эпĕ курман»... Хĕр савăннипе ним калама пĕлмест тет. Хуçи вара ăна çавăтрĕ тет те хăйĕн керменне илсе кĕчĕ тет. Тумлантарчĕ тет... Пĕтĕмпе ылтăн-кĕмĕл тăхăнтартрĕ тет...

**Кĕтерук.** Анне! Пирĕн Еля та — тумлантарсан — чаплă хĕр пулĕ-и? Çимунсен Райи пек...

**Чĕкеççи.** Рая йышши кăна пулмалла-и... И-и, хĕрĕм, çукки-çке пире пĕтерет.

**Кĕтерук.** Унтан вара, анне, çавăтса илсе кĕрсен вара. Унтан мĕн пулнă...

**Чĕкеççи.** Унтан вара... мĕн. Пĕрлешрĕç тет, туй турĕç тет. Çав хĕртен телейлĕ çын та халĕ те çук тет...

**Кĕтерук.** Анне, эпĕ мĕн илтрĕм. Аннасем калаçрĕç. Пирĕн Еля Виктăра качча каять тет.

**Чĕкеççи.** Ах, Тур. Ан калаç. Кулать пулĕ вăл. Пирĕн пеккинех илес темĕ ĕнтĕ Виктăр.

**Кĕтерук.** Илет тет... (*Пĕчĕк пауза хыççăн.*) Вăл та халапри пек телейлĕ пулĕ вара...

**Чĕкеççи.** Çывăр, хĕрĕм... Сана нумай калаçма юрамасть. Çывăр... Пуçелĕкне тӳрлетем-ха. Юрă юрласа парас мар-и?.. Мĕнлеччĕ-ха (*ĕнĕрлесе*). А-а, а-а, а-а... Çиессӳ те килет пулĕ, хĕрĕм...

**Кĕтерук.** Çук, анне. Ман çиессĕм килмест. Эпĕ чăтап. Нумай чăтăп... Сире çиессишĕн аптратмăп. Юрĕ-и, анне?..

**Чĕкеççи** (*куççульленсе*). Ай, хĕрĕм (*ыталать, кăшт чуптăвать*). Аптратмăп тет вĕт...

**Кĕтерук.** Анне! Эсĕр хытă-и?..

**Чĕкеççи.** Мĕскер калаçса выртан эс паян, хĕрĕм?..

**Кĕтерук.** Учитель Андрей Павлăч пире çапла каларĕ. Чăваш вăл хытă халăх тет. Çавăнпа вăл аш çимест тет. Çăкăрпа паранкă кăна çиет тет.

**Чĕкеççи.** Вĕсем калĕç!..

**Кĕтерук.** Мĕншĕн ара, анне, эпир аш çиместпĕр?.. Паян та нимĕн те çимен...

**Чĕкеççи.** Ак, аçу илсе килĕ-ха! Çăнăх илме вăл пуян Çимун патне кайрĕ-ха. Çăнăх илсе килĕ те ак, яшка çийĕпĕр. Сан валли пысăк çăмах хурана ярса парăп. Юрĕ-и?..

**Кĕтерук.** Анне, Çимунсем хытă мар-и? Пĕркун вĕсен Аннипе вĕсем патне кĕтĕмĕр те... Сĕтел çинче шур çăкăр, аш, пăтă... Мана та шур çăкрине пачĕç!..

**Чĕкеççи.** Вĕсем параççĕ. Аван çынсем.

**Кĕтерук.** Тата тепре шур çăкăр çийĕттĕм!..

**Чĕкеççи.** Çийĕпĕр-ха, хĕрĕм! Ак аçу Çимун патĕнче. Çимун, ĕçлесен, парать вăл... Ун чух эпĕ сана шур çăкăр пĕçерсе парăп...

**Кĕтерук.** Анне! Эпĕ вилсен — эсир савăнăр!

**Чĕкеççи** (*ыталаса, куççульпе*). Хĕрĕм, хĕрĕм! Çапла калаççĕ-и вара, хĕрĕм, аннӳне?..

**Кĕтерук.** Эпĕ çиме ыйтмăп вара. Пирĕн çăкăр çук вĕт...

**Чĕкеççи.** Ах Тур, хĕрĕм! Чарăн-ха (*макăрать*). Мĕншĕн аннӳне çапла хурлантаратăн.

**Кĕтерук.** Анне! Эпĕ рая лексен, Турра сире çăкăр нумай пар тесе кĕлтăвăп! Юрĕ-и?.. Эсир вара хальхи пек çăкăрсăр пурăнмăр. Лайăх пурăнăр...

**Чĕкеççи.** Ах Тур. Пăсса пĕтернĕ сана пĕтĕмпе... Темӗскер калаçатăн. Ан кай луччă, ачам, шкула... Ну, çитĕ, çитĕ! Кăшт тĕлĕр! Çывăр! (*Юрлать.*)

Нянине — тунине,
Ачине — урине...
Таппи-таппи çӳреме...

Кĕтерук тĕлĕрме пуçлать, Андрей Павлăч кĕрет.

**Андрей Павлăч.** Килте пур-и?

**Чĕкеççи** (*сиксе тăрса*). Пур-ха! Пур! Ах Тур!.. Кĕр-ха, Андрей Павлăч. (*Хуллен Кĕтерука.*) Кĕтерук! Тăрса лар, ачам! Учитель килчĕ. Ырă мар капла...

**Кĕтерук** (*тăма хăтланса*). Аван-и, Андрей Павлăч?!

**А.Павлăч.** Юрĕ, юрĕ! Ан тăр, Кĕтерук! (*Кĕтерук патне хăй пырса.*) Чирлерĕн-им, Кĕтерук? Паян та шкула пыраймарăн иккен!.. Юри пĕлес тесе килтĕм-ха. Мĕн ыратать ара?..

**Чĕкеççи.** Темӗскер вăй çук тет. Урисем шыçăннă пек... Çими те ку хушăра çителĕклĕ пулмарĕ те... Те çавăнпа.

**А.Павлăч.** Пульницăна илсе каймалла. Пульницăна. Пирĕн чăваша çавă пĕтерет: чирлесенех пульницăна илсе каймаççĕ...

**Чĕкеççи.** Пульници те инçе-çке... Унта та çав...

**А.Павлăч.** Инçинчен те мар! Хăвăр çапла ĕнтĕ. Пульницăна кайиччен хăвăртрах вĕрсе-сурса пĕтеретĕр пулĕ-ха... Юмăç патне чупатăр пулĕ-ха хăвăртрах... Çапла-и?..

**Чĕкеççи.** Чĕрĕлĕ те-ха вăл ерипен!.. Çими пулмарĕ! Салма çисе пурăнаттăмăр, халĕ вăл та пĕтрĕ! Паян çимен те-ха акă... Ашшĕ кайрĕ-ха çăнăх шырама. Те тупса килет ĕнтĕ...

**Кĕтерук.** Андрей Павлăч! Пирĕн анне вăл хытă мар!.. Тупата, хытă мар. Пирĕн анне лайăх çын!..

**А.Павлăч.** Ĕçлеме каймалла! Хулана! Пирĕн чăваш халăхĕ шаннă та пĕр çĕр çине. Урăх ĕç çине çаврăнса та пăхмасть. Выçă пулсан та — килтех выртаççĕ... Ав, вырăссем! Как ĕç пĕтерчĕ, ăçта кирлĕ унта саланаççĕ...

**Чĕкеççи.** Чăвашĕ те ĕçлет те-ха вăл... Вĕçрен вĕçе çитерме ниепле те çук. Ак куланайне те тӳлемен-ха. Ĕнене илсе тухатпăр тесе хăратаççĕ... Илсех каяççĕ-ши ĕнтĕ? Мĕнле пурăнăпăр ĕнтĕ вара ун чух... Чăвашĕ те ĕçлемесĕр пурăнмасть те-ха вăл...

**А.Павлăч.** Ĕçлемест вăл, чакаланать кăна — кăпшанкă пек! Вĕсене тахçанах вырăса кăларса пĕтермелле. (*Кĕтерука*) Ну, мĕнле, Кĕтерук! Пуç ыратать-и? Сывал! Сывал часрах. Акă эпĕ сана валли премĕк илсе килтĕм. Ме-ха. Çи те — сывал. Ме тепре. Лайăх ача çуратнă эс, инке. Тупата, хам ачана юратнă пек юрататăп. Лайăх вĕренетчĕ. Вырăс хушшинче çуралнă пулсан эсĕ — пăхса тăранайми хĕр пулмалла та... Кунта типсе хăран ĕнтĕ çапла: çутă курайман чечек пек (чуптăвать Кĕтерука çамкинчен). Ну, сывал... Ме ак тепĕр премĕк... Чăнах, хам хĕр пекех юрататăп! Ытла аван хĕрача!

**Чĕкеççи.** Тав ту, хĕрĕм. Спаçипă те Андрей Павлăча. Ма тав тумастăн! Спаçипă те!..

**А.Павлăч.** Ничево, ничево! Мĕн-ха пĕчĕк ачаран тав сăмахĕ ыйтмалла. Чăваш-ха пысăкки те тав тума пĕлмест! (*Тăрать.*) Ну, сывал, сывал, Кĕтерук. (*Кайма пуçласа.*) Сывалсан каллех шкула çӳрĕн. Кунта вĕренсе тухсан, Чĕмпĕре ярăп...

**Чĕкеççи.** Ах Тур. Чĕмпĕре терĕ-ха. Пиртен пулать-и унта яма. Ыран-паян выçă вилес пек пурăнатпăр...

**А.Павлăч.** Эсир ямасан, хам ярăп... Чăнах, Чĕкеççи инке, тахçанах калаçса пăхасшăнччĕ: парăр мана усрама Кĕтерука... Кăмăлăр пулсан, паллах. Шеллетĕп эп ăна питĕ — ытла та лайăх хĕрача. Эпĕ ăна ӳстерĕп. Вĕрентсе çын тăвăп... Ман хамăн ача çук вĕт пурпĕрех.

**Кĕтерук** (*амăшне ыталаса*). Çук, çук, анне. Эпĕ каймастăп санран! Ниçта та каймастăп. (*Хăраса лăпчăнать.*)

**Чĕкеççи.** Ай, хĕрĕм. Каймăн-çке, каймăн. Каймасть ĕнтĕ вăл, Андрей Павлăч. Ăçта кайтăр ĕнтĕ вăл тăван амăшĕнчен...

**А.Павлăч.** Ан хăра, Кĕтерук. Кун пирки калаçмăпăр урăх... Чĕрĕлсе çит-ха. Каяс-ха апла ман. (*Алăк патĕнче.*) Ыран хам илсе кайса пăхăп-ха эппин пульницине... Чипер юлăр эппин... (*Тухса каять.*)

**Кĕтерук.** Ах, анне, эпĕ хăрарăм мана парса яратăр пулĕ тесе... Анне... (*Амăшĕ çумне йăпшăнать.*)

**Чĕкеççи.** Ăçтан парăпăр-ха сана, хĕрĕм. Савăнăç вĕт эсĕ пирĕн. (*Чуптуса илет.*) Ай, хĕрĕм. Кăшт кăна çывăр-ха ĕнтĕ...

**Кĕтерук.** Анне, эпĕ луччă кунне пĕрре кăна çийĕп, анчах эсир мана ан парăр... Юрĕ-и?..

**Чĕкеççи.** Памăпăр, памăпăр, хĕрĕм. Çывăр ĕнтĕ канăçлă. О-о-о, нянине-паппине...

**Кĕтерук.** Анне, эпĕ пĕчĕккĕ мар вĕт ара, ма апла юрлатăн?..

**Чĕкеççи.** Пĕчĕккĕ мар, пĕчĕккĕ мар... Акă, пысăк пулăн та... унтан вара... (*Пауза.*) Халапри пек эсĕ те телей шырама кайăн... Çывăр. Çывăр...

Кĕтерук çывăрса каять.

**Чĕкеççи** (*вырăн çинчен тăрса*). Ели ăçта çӳрет-ши тата?.. Хампа та пулсан хăть калаçмасть. Чăнах илме пулнă-ши ĕнтĕ Виктăр? Ах Тур... Кулса кăна çынлăхран ан кăлартăрччĕ... Пуян ачинчен унтан тем те кĕтме пулать... Пирĕн пек çынсенчен куласси ним те мар.

Çимен кĕрет.

**Чĕкеççи.** Хуллентерех! Кĕтерук тин кăна çывăрса кайрĕ-ха!.. Эсĕ ăçта çӳрерĕн?..

**Çимен.** Ну, карчăк. Чей ларт-ха хăвăртрах... Хăна килет.

**Чĕкеççи.** Мĕнле хăна тата? Тупрăн-и ара çăнăхне?

**Çимен.** Çимун хăта хăй килме пулчĕ. Халь кăна ăна тĕл пултăм. Çĕр çĕре çитрĕм — пĕр кĕрепенке тупаймарăм. Пĕтĕмпе тарăхса çитнĕччĕ — Çимун хăтана урамра курах кайрăм. Ыйтса пăхас-ха терĕм. Юрĕ, терĕ. Хам пырса çаврăнăп-ха, терĕ... Ахăртнех, эрех ĕçесшĕн пулĕ. Карчăк, хушпуне каллех саклата хурар пулĕ ĕнтĕ... Илес пĕр пулштух эрех...

**Чĕкеççи.** Çимен, ара, эсĕ илтнĕ-и-ха: Виктăр пирĕн Ельăна качча илесшĕн теççĕ...

**Çимен.** Ан калаç.

**Чĕкеççи.** Паян-ха ара Кĕтерук каларĕ... Кĕтӳ хăвалана чухне те арăмсем калаçрĕç... Эпĕ ун чухне ĕненмерĕм... Тен, чăнах-тăр та.

**Çимен.** Апла Çимун хăй мĕншĕн килет-ха...

**Чĕкеççи.** Тен, ку хыпар ун патне çитмен те пулĕ-ха. Хăратăп эпĕ, Çимен. Хĕрĕн ятне ан яччăр вĕсем...

**Çимен.** Мĕн хăрамалли пур ара... Пĕр-пĕрне юратмасăрах çапла хăтланмаççĕ пулĕ ĕнтĕ... Вăл пит аван пулĕччĕ-ха. Тен, пире те прахмĕччĕç. Кураççĕ вĕт мĕнле пурăннине...

**Чĕкеççи.** Темĕн ĕнтĕ, темĕн. Ним калама та пĕлмелле мар...

Еля кĕрет. Хăйĕн савăнăçне пытараймасть.

**Чĕкеççи.** Кил-ха кунта, хĕрĕм... Açупа сан пирки шухăшлатпăр-ха. Ял çинче çӳрекен сăмах тĕрĕс-и вăл, Еля?..

**Еля.** Мĕн вăл «тĕрĕс-и»?

**Чĕкеççи.** Ара, эсĕ Виктăра качча тухатăн теççĕ те... Улталанмалла ан пултăр, хĕрĕм...

**Çимен.** Эпир сан аçу-аннӳ вĕт... Мĕн пирĕнтен пытаратăн... Каласам ара?..

**Еля.** Тĕрĕсех, анне, тĕрĕс... Вăл мана юратататăп, терĕ. Эпир унпа телейлĕ пулăпăр. Анне, сире, тен, кăшт пулăшăп...

**Çимен.** Апла ăнлантăм мĕншĕн вăл «килсе кайăп-ха» тенине. Карчăк, атя, сĕтел çине пуçтар. Çăкăр кивçен ил...

**Еля.** Кам килсе кайăп терĕ ара?

**Çимен.** Ара... Çимун — хăй. Пар-ха хушпуна, карчăк. Шеллесе ан тăр ĕнтĕ... Тен, малашне пире те пăрахмĕç.

**Чĕкеççи** (*хушпуне парса*). Пĕтĕмпех тăнтан кайрăм ĕнтĕ. (*Ельăна ыталаса, куççуль витĕр.*) Ах Тур, хĕрĕм. (*Шăппăн макăрать.*)

**Çимен.** Эй, çав хĕрарăма. Мĕн макăрмалли пур ара. Савăнас вырăнне... Ну, карчăк, хатĕрле. Эпĕ каям-ха.

Кайма тăрать, ăна хирĕç Çимун кĕрет.

**Çимун** (*кĕрсенех сăхсăхать, сухалне шăлкалать*). Аван пурăнатăр-и?.. Ман килес.

**Çимен.** Атя, ирт-ха тĕпелерех, Çимун хăта. Ирт-ха, Çимун хăта, ирт... (*Ельăна.*) Еля, эсĕ хупаха кайсам. Ме акă хушпуне.

**Çимун.** Ан чăрманăр. Ан чăрманăр. Эпĕ лармаллах килмен-ха...

**Еля.** Каяп эппин эпĕ, атте.

**Çимен.** Кай, кай, хĕрĕм. (*Еля каять.*)

**Çимун** (*Чĕкеççи хыпаланнине курсан*). Ан чăрман, ан чăрман, Чĕкеççи тăхлачă. Эп йăпăртлăха кăна... Эп сирĕн хĕр пирки калаçас тесе килсеччĕ те...

Чĕкеççипе Çименĕн пичĕсем çуталаççĕ, савăнаççĕ.

**Çимун.** Чарăр-ха эсĕр пăртак хĕрĕре... Калăр-ха ăна — пăрахтăр вăл Виктăра илĕртме... Ача-пăчана ăна ирĕке ярса ыррине кураймăн... Эп хамăнне тăна кĕртрĕм... Эсир те хĕрĕре хытарса калăр-ха пăртак... Еля пирĕн Виктăра юрăхлă маррине хăвăр та пĕлетĕр... (*Çименпе Чĕкеççи ним калама пĕлмесĕр хытса тăраççĕ.*) Мĕн эсĕр ун пек сăнран кайрăр?.. Парас килетчĕ-и? (*Пауза.*) Çимен, эсĕ те тăхлачă, хам тупса парас-и Еля валли упăшка?.. Кăмăлăр пур-и?.. Пит çамрăках мар та... Тепĕр тесен, мĕн-ха ăна пит çамрăкки кирлĕ... Пуян... Пике пек усрĕ... Тахçанах калаçасшăнччĕ-ха... Çимен, парăр Ельăна хама... Мана, ват çынна... чухăн çын та юрĕ.

**Чĕкеççи.** Ах Тур. Мĕн калаçатăн, Çимун хăта...

**Çимун.** Ма калаçмалла мар вара?.. Эпĕ тӳрех калатăп. Хĕрĕр кăмăла каять. Ăна чăннипех телейлĕ çын тăвăп, хăвăр хирĕç пулмасан. (*Тăрать.*) Калаçса пăхăр-ха хĕрĕрпе, тен, кăмăлĕ çаврăнĕ ман енне... Хăй вăл Виктăршăн пулĕ те-ха... Анчах Виктăра валли эпĕ тупнă ĕнтĕ тахçанах. Хĕрĕ пуян... Мана вара... ват çынна чухăнни те юрать... Ну, юрĕ... Калаçса пăхăр вара. Ним те шеллемĕп... (*Тухма тăрать. Çав вăхăтра Еля кĕрет. Аллинче пулштух кĕленчи.*) Ак вăл хăй те килчĕ... Еплерех хĕрелнĕ вăл. Улма тейĕн. Чипер хĕр. Ну, эпĕ кайрăм. (Алăка уçнă чухне çаврăнса.) Çапла, Çимен, эсĕ те тăхлачă, шутласа пăхăр вара... Эпĕ тата килĕп-ха. Сыв пулăр. (*Тухса каять.*)

**Еля** (*пăлханса*). Мĕн пирки килнĕ вăл, анне? (*Амăшĕ патне пырса, шăппăнтарах.*) Çураçма мар пулĕ те?..

**Чĕкеççи.** Çураçма... (*Макăрса ярать.*) Пире пуян çын ăçтан çураçтăр ĕнтĕ?! Эй, хĕрĕм...

**Еля.** Мĕн каларĕ вара вăл, анне?..

**Çимен.** Хĕрĕм, эс лăплан, тархасшăн... Çимун хăй сана... кавча илесшĕн... Виктăра илтерместĕп, тет...

**Еля.** Турăçăм... (*Вăйсăр тайкаланса, ни макăрма, ни калаçма пĕлмесĕр сак çине ларать.*)

**Çимен.** Хĕрĕм, ытла та начар пурăнатпăр-çке... Сана эпĕр юратапăр та, шеллетпĕр те, анчах Çимуна кавча кайсан пурнăçу çăмăлтарах пулмĕ-ши тетпĕр-çке... Телейлĕ шăпа çырман пулмалла ĕнтĕ пире...

**Еля.** Атте, мĕн калаçан? (*Кăшкăрса макăрса ярать.*)

**Çимен.** Хĕрĕм, эпĕ хăвна лайăхрах пулать-ши ĕнтĕ тесе калатăп-çке...

**Чĕкеççи.** Хĕрне çавна парса пуçне çиес тетни? Ах Турă... (*Еляна ыталать, лăплантарать.*) Памăпăр, памăпăр, хĕрĕм... Ху та çав, ухмахскер, пуян ачисемпе çыхланан... Вĕсем чухăнсене хисеплени хăçан вăл пулнă? Кулаççĕ анчах... Лăплан, хĕрĕм, лăплан...

**Еля** (*макăрса*). Атте, мĕншĕн вара эсĕ мана çавхатер кураймастăн?! Хăвăн хĕрне, мана... ват çынна парасшăн...

**Çимен.** Лăплан, хĕрĕм, памăпăр сана кавча... Хамăр чухăн пулсан та, çынран тухман эпир... Чĕре те пирĕн чулланман.

Чӳречерен шаккаççĕ.

**Петĕр** (*чӳрече леш енчен*). Эй, килте пур-и?

**Чĕкеççи** (*чӳречерен пăхать*). Ах Тур, Çимен... Старăстăпа стражник килеççĕ. Ырлăха мар-тăр. Ĕнене илме килеççĕ пулĕ ĕнтĕ...

**Çимен.** Йăлăнса пăхас тата... Пăртак кĕтмĕç-ши...

Стражникпа Петĕр кĕреççĕ.

**Петĕр.** Çынни çын пулиннĕ хăть... Ун хыççăн вĕт çĕр хут çӳремелле!.. Мĕншĕн тӳлеместĕн, э?

**Стражник.** Çимен! Мĕншĕн-ха тӳлесе татмастăн куланайна?!

**Çимен.** Çук вĕт! Никĕнех те çук, Самсун Михалăч! Паян акă ачасем те выçă-ха!..

**Стражник.** Эсĕ тепĕр виçĕ кунтан тупатăп теннĕччĕ-çке иртнинче... Паян юлашки кун...

**Çимен.** Тата пĕр эрне кĕтĕр-ха, Самсун Михалăч. Епле те пулсан тупса парăп...

**Петĕр.** Сан пĕр эрнӳсене нумай кĕтрĕмĕр ĕнтĕ... Мĕн ĕçлерĕн-ха вара халиччен?!

**Çимен.** Турă пул ĕнтĕ, Петĕр. Эсĕ хамăр ял çынни... Чăваш... Пĕлетĕн вĕт эпир мĕнле пурăннине... Шелле пăртак...

**Петĕр.** Мана пит шелеççĕ!.. Сирĕншĕн кунĕн-çĕрĕн лăскаççĕ... Тӳлле! Эп тахçанах тӳленĕ.

Пӳртри шава пула Кĕтерук вăранса пуçне çĕклет...

**Кĕтерук.** Эпĕ тĕлĕк куртăм. Атте нумай çăкăр илсе килнĕ пек. Атте, çăкăр илсе килтĕн-и?.. Ман çиес килет...

**Çимен.** Эй, хĕрĕм. (*Пырса аллипе çупăрлать.*) Самсун Михалч, тупата, Турă пул-ха... Мана мар-тăк çак чирлĕ ачана та пулсан шелле... Ĕнесĕр çемье выçă вилет, Самсун Михалч...

**Стражник.** Ăна маларах шухăшлаççĕ — вилесси çинчен. Маларах тӳленĕ пулсан... Чăваша кăнтăрла иртсен кăна ăс кĕрет çав... Ну, ăçта сан ĕнӳ — витере-и?

Чĕкеççи макăрать, Еля ним тума пĕлмест.
Ыттисем тухса каяççĕ.

**Кĕтерук.** Анне, мĕншĕн ара эсир пуç таймарăр? Пире учитель стражнике пуç тайма хушрĕ...

**Чĕкеççи.** Пĕлместпĕр эпĕр, хĕрĕм, пĕлместпĕр! Вĕренмен вĕт...

**Еля** (*чӳречерен пăхса*). Ĕнене илсе каяççĕ, анне! (*Макăрса ярать.*)

**Чĕкеççи.** Мĕнле пурăнăпăр ĕнтĕ, хĕрĕм! (*Макăрать.*) Хăй мĕн кĕреймерĕ тата... (*Тухать.*)

**Кĕтерук.** Еля, аппа! Кил-ха! (*Еля пырать.*) Эсĕ Виктăра кавча каятăн-и?..

**Еля.** Мĕн калаçатăн, Кĕтерук!..

**Кĕтерук.** Эпĕ, аппа, тĕлĕк куртăм... Пирĕн пата туй килнĕ пек...

Чĕкеççи чупса кĕрет. Алăка уçса ярса хăрушшăн кăшкăрать.

**Чĕкеççи.** Еля, аçу çакăннă!

**Еля.** Ах, пĕтрĕмĕр... (*Алăкран макăрса тухаççĕ.*)

**Кĕтерук** (*пĕччен, лирикăлла калаçать*). Вĕçсе пырать пулĕ ĕнтĕ пирĕн атте çӳле, çӳле... (*Музыка сасси малтан хуллен, унтан хытăрах илтĕнме пуçлать.*) Чим-ха, çӳле мар. Çакăннă çынсем тӳрех тамăка каяççĕ терĕ-çке пачăшкă. Çитрĕ пулĕ ĕнтĕ атте тамăка... Ыйтать пулĕ аслă шуйтанĕ мĕншĕн куланай тӳлемерĕн тесе.

Çынсем Çимен виллине йăтса кĕреççĕ, майласа хураççĕ, çĕлĕкĕсене илсе сăхсăхаççĕ. Хурлăхлă музыка. Еляпа амăшĕ Çимен вилли çине ӳксе макăраççĕ.

**Кĕтерук.** Анне! Эпĕ те вилсен Турра кĕлтăвăп! Атте рая лектĕр тесе... Ман кĕле илтерех парать вĕт Турă... Эпĕ вилсен ан макăрăр вара...

**Чĕкеççи.** Ах Тур, ачам! (*Макăрса ярать тата хытăрах, ăна курса Кĕтерук та.*)

## ВИÇÇĔМĔШ СЦЕНА

Пуян Çимун çуртĕнчен купăс сасси, вăхăчĕ-вăхăчĕпе юрă, ташлани илтĕнет. Еля тутăрпа пĕркенсе кĕрет.

**Еля.** Мĕншĕн-ха килтĕм?.. Паян кунĕпех хама хам: «Кураймастăп Виктăра, кураймастăп!» — тесе ĕнентертĕм... Тĕттĕм пулчĕ те — йытă çури пек кунта чупса килтĕм... Çук! Çын куриччен — каяс! Мĕне кĕтетĕп эп?.. Иртнине тавăраймăн... Виктăр авланнă... Юлашки вăхăт тĕлĕкле иртрĕ... Хăрушă тĕлĕкле... Чăнах çӳренĕ-ши вара эпĕ Виктăрпа?.. Тĕлĕкре мар-ши?..

Ерçен кĕрет.

**Ерçен.** Еля!.. (*Пауза.*) Виктăр туйне курма килтĕн-и?..

**Еля** (*хуйхăллăн хаш сывласа*). Çук, иртсе пыраттăм та...

**Ерçен.** Райăна курман-и эс, Еля?..

**Еля.** Ирхине ăна Кавалтан çураçма килнĕ терĕç...

**Ерçен.** Çураçма?..

**Еля.** Эсĕ илтмен-им вара?.. Паçăрах çураçса кайнă... Хулăм укçи кăна çĕр тенкĕ килĕшнĕ терĕç...

**Ерçен.** Еля, чăнах-и?.. (*Пăлханса.*) Эсĕ кулатăн пулĕ?.. Çĕркаç кăна-çке, çĕркаç кăна нумайччен ăшшăн калаçса лартăмăр... Çук... Паян эпĕ ăна куратăпах. (*Çимун çуртне кĕрсе каять.*)

Еля кайма тăрать, çав вăхăтра алăк сасси илтĕнет, Еля шартах сиксе хытса тăрать. Виктăр тухать.

**Виктăр.** Еля?!

**Еля** (*кӳренчĕк саспа*). Телейлĕ пул эппин, Виктăр...

**Виктăр.** Ĕнен мана, Еля, эпĕ сана улталасшăн пулман... Илесшĕнччĕ. Анчах сана илсен çуртран нимсĕр тухса кайма тиветчĕ... Хăваласа кăларатчĕ атте... Каçар, ман кĕмелле (*кĕрсе каять*).

**Еля** (*хăйпе хăй калаçать*). Ăçта кайса пуçа чикес-ши?.. Анне те пĕрмай макăрать... Хуйхă вырăн илчĕ-çке чĕрере... Тăрмалать те тăрмалать... Хăваласан та, каймасть... Йывăр мана, йывăр... Чĕр пуçăмпах çĕр тĕпне кĕрсе выртăттăм та... Çылăх-çке ун пек тусан...

Сергей кĕрет.

**Сергей** (*шăппăн, чĕререн*). Еля...

**Еля.** Ах!.. (*Хăрать.*)

**Сергей.** Ан хăра. Çисе ямăп... Ман санпа калаçмалли пур... (*Еля ним те чĕнмест.*) Еля, пĕтĕм ял сан çинчен калаçать... Кулаççĕ санран... Эсĕ вара каллех çав йытă Виктăршăн кунта тăратăн... Еля, ма çапла çынсене култаран?..

**Еля** (*хуйхăллăн пуçне чиксе*). Кулччăр!.. Çынсем пурте эпĕ пĕтессе кĕтеççĕ... Кулччăр!..

**Сергей.** Кулччăр! Манăн ара, манăн çав сăмахсене илтсен чĕре çурăлмасть тетним! Эх, Еля! Кашни сан çинчен каланă сăмах вĕт ман чĕрене çурать...

**Еля.** Калаçчăр. Мана пурпĕрех... Эсĕ те калаç!.. Эсĕ те кул!.. Хĕне мана: «Мĕншĕн Виктăрпа çӳрерĕн?» — тесе... Çап! Тапта мана! Пĕтерĕр! Çынлăхран тухнă эпĕ! Мăшкăлла! Сур!.. (*Сулланса тухса каять.*)

**Сергей.** Мĕскĕн Еля... Эпĕ те хурлантартăм кăна пулмалла... (*Шухăша кайса.*) Эй, хурланин тата! Çавна тивĕçлĕ!.. Чим-ха!.. Çырма хĕрне чупмарĕ-и? Шыва ан сиктĕр! Эх, Еля!.. (*Хыпаланса тухса каять.*)

Çимун çуртĕнчен Ерçенпе Рая тухаççĕ.

**Рая.** Ну, кала, мĕн каласшăн? Чĕнсе тухрăн-тăк...

**Ерçен.** Рая, атя-ха, çаврăнса килер! Ав çак йăмрасем патне кăна... Манăн чĕре ак тем тулнă пек, çурăлас пек ыратать...

**Рая.** Мана ырă мар вĕт ара çапла çӳреме! Эпĕ çураçнă хĕр ĕнтĕ... Мĕнле эпĕ санпа у ç ă л с а (*ку сăмаха пусăмлăрах калать*) çӳрĕп?..

**Ерçен.** Çураçнă... Инçе яла... Каятнах-им вара, Рая?..

**Рая.** Атте парсан каятăп... Пирĕн çемьере каймасан — юрамасть... Ним памасăр кăларса ярĕ атте...

**Ерçен** (*кăшт чĕнмесĕр тăнă хыççăн*). Рая, эс манпа ахаль кăна çӳренĕ-и? Йăпанасшăн кăна-и?..

**Рая.** Ăçтан пĕлен ăна мĕншĕн çӳренине? Çӳрен ĕнтĕ ăна, çамрăк чухне... Анчах эп сана нихçан та хамăн пулас упăшка пек курман... Ĕмĕрте те. Çитменнине тата ч у х ă н эсĕр... Ну, хăв шухăшла! Мĕнле ман сирĕн патра пурăнмалла? Çиес тесен çăкри пулмĕ, тумланас тесен тумĕ пулмĕ... Эпĕ ун пек пурнăçа хăнăхман!..

**Ерçен.** Пулĕ-ха, Рая, пулĕ. Çапла пуянлăха хапсăнатăн пулсан... Вĕренсе тухăп. Унтан... (*Çамрăксене Çимун итлесе тăнă иккен.*)

**Çимун.** Унтан Райăна илетĕн иккен. Ай-ай, хĕрӳллĕ каччă... Пăх-халĕ. Ха-ха...

**Ерçен** (*хĕрӳленсе*). Çимун пичче. Семен Степанч. Ан парăр Райăна таçта çитиех. Эпĕ ăна хам илетĕп. Юрататăп эп ăна...

**Çимун.** Рая, мĕн юпа пек тăратăн? Кĕр хăвăртрах киле. (*Рая кĕрет, Çимун хуллен Ерçен патне пырса.*) Мĕн терĕн эсĕ, ачам? Эпĕ илтсе юлаймарăм.

**Ерçен.** Райăна юрататăп терĕм. Çимун пичче! Чăнах, ан пар!

**Çимун** (*кулса*). Хă-хă! Калаçма пĕлекен ача иккен эсĕ! Пăх-халĕ!.. Мĕскер калаçать вăл! Кăна мĕскер, пĕччен

шухăшларăн-и? Е кампа та пулсан пĕрле? Вăт каларĕ!.. Чĕмпĕрте çапла вĕрентеççĕ-и?

**Ерçен.** Семен Степанăч?!

**Çимун.** Çитĕ, çитĕ! Эс каламасăрах эп Семен Степанч. Эс вăл шухăша пăрах. Илтрĕн-и?.. Ача-пăча-ха эсир!.. Эс пăртак ӳсĕрĕлтĕн пулĕ? Ытла хăюллă калаçма пуçларăн... Ăна, ачам, хăвăн йышшисенчен суйлаççĕ, ытла хапсăнмаççĕ. Урăх пирĕн пата пырса ан кĕнĕ пултăр! (*Пӳртне кĕрет.*)

**Ерçен** (*хăйне тĕллĕн*). Эх, кĕсье тулли ылтăн пулсан! Кĕресчĕ те каласчĕ куçĕнчен ылттăнпа сапса: «На, тăран!» — тесчĕ. ...Хам та ухмах çав, çӳреп йăлăнса... (*Каять.*)

Çимун патĕнчен стражникпе Андрей Павлăч тухаççĕ.

**Стражник** (*какăрать*). Лайăх пурăнать Семен Степанч! (*Хырăмне сăтăрса.*) Калама нечево! Лайăх пурăнать! Çынна хăна тума та пĕлет... Лайăх чăваш!

**А.Павлăч.** Чăвашсен пурин те çапла пурăнмалла! Ĕçчен халăх вăл — чăваш. Тăрăшать, анчах пурăнма пĕлмест, пурнăç тума пĕлмест... Семен Степанăч пурăнма пĕлет вăл... Пурнăç тума пĕлет...

**Стражник.** Пĕлет, пĕлет! (*Уйăх çине пăхса.*) Уйăх та çӳле кайнă паян! Выртмалла-тăр матка çумне кайса! Ял лăпкă-ха! Лайăх ял вăл — чăваш ялĕ! Тупата, юрататăп... Нимĕскер те вăл-ку тавраш пулмасть! Вырăс ялĕ пек мар! Эп пĕр çулхинче вырăс ялĕнче стражник пултăм. Ялĕ пысăк. Савăтĕ те инçе мар. Рабочисем. Ăнтан кайрăм! Пĕрре улпутăнне мĕн те пулсан вăрлаççĕ, тепре кама та пулсан çĕçĕпе чикеççĕ. Хам та сыхланса çӳреттĕм: чиксе ан пăрахчăр, тесе... Чăнах... Ну, усалччĕ ялĕ! Пĕр каç канлĕ çывăрман!..

**А.Павлăч.** Чăваш пек йăваш халăх çук. Чăтăмлă халăх. Ĕçчен халăх! Йĕркене пăхăнакан халăх.

**Стражник.** Да! Эпĕ служить тума тытăннăранпа ним те пулман-ха! Малашне...

Çав вăхăтра аякра Сергей сасси: «Эй, халăх! Халăх!
Еля шыва сикнĕ! Килĕр!..»

**Стражник.** Мĕскер кăшкăрать?

**А.Павлăч** (*хыпаланса*). Еля! Еля тет! Шыва сикнĕ тет! Хăвăртрах, Самсон Михалăч!

**Стражник.** Тьфу! Тупаççĕ вăхăт шыва сикме! Çывăрас тесе кăна тăраттăм...

**А.Павлăч.** Çапла, чăваш вăл шыва сиксе вилĕ! Атя кайса килер!..

**Стражник.** Атя ĕнтĕ. (*Каяççĕ.*)

Аякра шавлани илтĕнет.

**Виктăр** (*чӳречерен аран-аран анасласа*). Эй, мĕн пулнă унта? Мĕн шавлаççĕ?..

**Сасă.** Еля шыва сикнĕ!

Виктăр çакна илтсен киленчен чупса тухать, анчах халăх шавланă енне темиçе утăм тăвать те — каялла çаврăнать. Ун сăнĕнче вăл хăйпе хăй кĕрешни сисĕнет... Чӳречерен çаплипех граммофон сасси илтĕнет. Вăл аякра Чĕкеççи макăрни сассипе хутăшса каять.

## ТĂВАТТĂМĔШ ПАЙĔ

Аслă урам. Халь пуян Çимунăн çурчĕн тепĕр енĕ. Çурчĕ çумĕнче «Хупах» тесе çапнă вывескăллă çурт. Унта шавлани, купăс калани илтĕнет.

Петĕрпе Ерçен кĕреççĕ.

**Ерçен.** Атте, ху кăна кĕр ĕнтĕ... Эпĕ кĕместĕп.

**Петĕр.** Кĕрер ĕнтĕ иксĕмĕрех. Иккĕн каласа çăмăл, ачам!..

**Ерçен.** Эх, тупата. Урăх çынран тупаймăпăр-ши, атте?

**Петĕр.** Камран тупан-ха? Камăн укçа пур?.. Çитрĕмĕр вĕт-ха темиçе тĕле те...

**Ерçен.** Эх, ниçта кайса кĕме çукки кăна. Йăлăнмăттăмччĕ те...

**Петĕр.** Ăçтан пирĕн йăлăнмасăр пулать ĕнтĕ. Ну, атя-ха, кĕрсе пăхар. Хăваласах кăлармĕ... Староста çапах та эпĕ...

Çимунăн крыльци çине çĕкленет, анчах киленчен Çимун тухнине курсан, чарăнать, çĕлĕкне пуçĕнчен илет...

**Петĕр.** Аван-и, Семен Степанч?

**Çимун.** Аван-ха. Мĕн эсир иккĕн тан килнĕ? Хĕр çураçма мар пуль?.. Э?..

**Петĕр** (*ирĕксĕррĕн кулса илсе*). Йăлăнма килтĕмĕр-ха, Семен Степанч. Акă, ачан Чĕмпĕре каймалла та-ха! Вăхăчĕ çитнĕ — кайма укçа çук. Çавăнпа ыйтса пăхас тенĕччĕ те... Пĕр вунă тенкĕ, Семен Степанч... Кĕркуннеччен кăна. Сурăхсене сутсанах тӳлесе татăп...

**Çимун.** Ха! Вĕрентес те килет иккен! Укçи те çук! Ытла та çăмăллăн улпута тухасшăн.

**Петĕр.** Хăй пит вĕренесшĕн пулчĕ те, Семен Степанч. Вĕрентсе пăхас терĕм.

**Çимун.** Кăмăла каймасть мана вăл япала, Петĕр. Мĕн эсир? Пĕр-пĕр улпут-им ачасене вĕрентме?! Вĕрентмелле, сухапуç лайăхрах тытма вĕрентмелле вĕсене!..

**Петĕр.** Хăй пит вĕренесшĕн, Семен Степанч.

**Çимун.** Хăй вĕренесшĕн пулĕ вăл! Мĕн унта вĕренсе выртасси! Суха хыççăн çӳресси мар вĕт вăл!..

**Петĕр.** Вĕрентес тенĕччĕ ĕнтĕ, Семен Степанч... Вĕсем хăть авантарах пурăнччăр тесе. Пĕр вунă тенкĕ парсам ĕнтĕ, Семен Степанч?..

**Çимун.** Вĕренӳ тесен пĕр тенкĕ те памастăп. Урăх япалашăн пулсан — татахчĕ. Ан та ыйт. Сан вăл ахаль те хăйне ытла пысăка хурать.

**Петĕр** (*Ерçене*). Ерçен, ачам! Йăлăн ху! Семен Степанча! Ху йăлăн, ачам.

Ерçен ним тума аптăраса тăрать.

**Çимун.** Ăçта ара вĕреннĕ çын йăлăнтăр! Асту йăлăнать вăл сана! Вăл хăй кĕтет пулĕ эпĕ йăлăнасса! Сан вăл, ача, Петĕр, сĕре чăрсăр! Пĕркун хĕр манран ыйтать. Ыйтмаллипех ыйтать вĕт. Кай, ача! Качча илетĕп тет. Ача кăна темерĕн! Ав, вĕренӳ мĕн тăвать вăл! Çавăнпах хăй кам иккенне манаççĕ.

**Петĕр.** Çамрăк вĕт-ха вăл, Семен Степанăч! Çамрăк чухне!.. (*Ерçене*) Ерçен, ачам! Ыйт ĕнтĕ ху Семен Степанчран! Ыйт!

**Ерçен.** Семен Степанăч! Сана парса тататпăр ара эпĕр!..

**Çимун.** Ав! Ав! Еплерех калаçать вăл! Калăн, вăл мар, эпĕ унтан укçа ыйтап! Ай-яй! Вĕреннĕ çын!.. Çук! Çук! Ан та калаç, сире валли ман пĕр пус та çук. (*Каять.*)

**Петĕр** (*Ерçене*). Эсĕ мĕн, ухмаха ертĕн-им? Çавăн хĕрне хапсăнатăн. Мана, мĕн, тĕнче кулли тăвас тетĕн-им? Э?..

**Ерçен.** Атте! Эпĕр те вĕт çынсемех!..

**Петĕр.** Çынсемех! (*Тăрăхласа.*) Çынсемех! Анчах кам ухмах пуянĕ сана хĕр патăр, э?..

**Ерçен.** Пуян та çын вĕт ара?

**Петĕр.** Çăварна карса ан тăр! Мĕнпур ĕçе пăсрăн! Ăçтан шухăшласа кăларнă хĕр ыйтма. Епле сан çăвару уçăлчĕ, э? Пыйту та çитес çук вĕт пĕр хулăмне пама кăна... Эх, ухмах... (*Тарăхса.*) Вĕрентес терĕм! Çын тăвас терĕм! Кам ывăлĕ вĕренет тетчĕç! Петĕрĕн! Кам ывăлĕ çынна тухать! Петĕрĕн! Эх, пĕтрĕ! Татăлчĕ ĕмĕтĕм! Пĕтрĕ! Луччă пусарам ăша хупахра! Эх!.. (*Хупаха кĕрсе каять.*)

Ерçен кайма тăрать. Рая тухнине курсан — чарăнса тăрать.

**Рая.** Эсĕ халĕ те кайман-и-ха, Ерçен?

**Ерçен.** Кайман-ха...

**Рая.** Пĕркунах каяп терĕн-çке. Хăçан каян?..

**Ерçен.** Укçа тупаймастăп-ха. Кайма укçа кирлĕ. Сан аçунтан ыйтса пăхас терĕм те — памасть. Вĕренӳ тесен памастăп тет.

**Рая.** Ман тепĕр эрнерен туй. Эпĕ те каятăп.

**Ерçен.** Кай ĕнтĕ. Мĕн мана каласа тăран?

**Рая.** Сана пурпĕрех-и?

**Ерçен.** Пурпĕрех. Ма маншăн пурпĕр ан пултăр ара... Эпĕр пуян мар вĕт. Эсĕр, çӳресен те, йăпанасшăн кăна çӳретĕр. Ăçта пирĕн сире хапсăнма. Юрĕ ĕнтĕ, хамăр йышшисене суйлăпăр... (*Пăрăнса кайма тăрать, анчах çав вăхăтра хупахра кĕленче çĕмрĕлнĕ сасă илтĕнет, тахăшĕ кăшкăрать. Пăртак тăрсан стражник Петĕре илсе тухать.*)

**Петĕр** (*ӳсĕр*). Вĕлерĕр мана! Вĕлерĕр! Самсон Михалч! Эх! (*Кăшкăрса ярать.*) Пĕтереп!..

**Стражник** (*ăна хулĕнчен тытнă*). Эй, ку чăваш тени! Икĕ пуслăх ĕçсен пилĕк пуслăх çухăрать вара... Ĕретлĕрех тăр! Атя, килне çитерсе ярам...

**Петĕр.** Каймастăп эпĕ, каймастăп ниçта та... Выртап та ак çакăнта, каймастăп... (*Выртать.*) Ниçта та каймастăп! Вĕлерĕр!..

**Стражник.** Тăр! Эй! Килĕр-ха. (*Ерçене.*) Кил-ха! Кил тенĕ! Кам ачи-ха эсĕ? Ăçта пурăнатăн? Мĕнле этем эсĕ? Эп сана курман.

**Ерçен.** Эп Чĕмпĕрте вĕренетĕп.

**Стражник.** Вĕренен? Студент-и? Бунт кăлараканни апла пулсан! Эп сана вĕрентĕп! (*Кăшкăрать.*) Кам ачи эсĕ?

**Ерçен.** Сана мĕне кирлĕ? Мĕн тăван эсĕ эп кам ачи пулнипе?

**Стражник.** Аха, бунт тăватни? Каламасни? Ага! Эпĕ сана!

**Рая** (*мăшкăлласа*). Мĕн эсĕ, Ерçен? Аçуна палламастни? Пăх ĕнтĕ, пăх, ав выртать вăл! Е çĕтĕк кĕпе тăхăннăран палламастни?..

**Стражник.** А-а! Петĕр ачи-и-ха вăл. Çавăнпа килмест иккен. Ашшĕне те палламасть те!.. Еплерех вăл вĕреннĕ çын! Тĕрĕс калаççĕ иккен чăваш кăшт вĕренсен ашшĕне те паллами пулать тесе... (*Петĕре.*) Ну, Петĕр! Атя тăр! кайса çывăр! Урăх апла ан хăтлан! Эсĕ те кай, студент. Студента хупах умĕнче тăни килĕшмест. Илсе кай аçуна! (*Каялла хупаха кĕрсе каять.*)

**Петĕр.** Каяп! Каяп! Хамах каяп, Самсон Михалч! А ывăла пурпĕрех вĕрентеп! Лашана сутап та, пурпĕрех вĕрентеп. (*Сулкаланса тухса каять.*)

**Рая.** Епле эс çавăн пек хăвăншăн тăрăшакан çынна та палламанçи пулан, Ерçен? Капла эс пире те час паллами пулăн. Çапăнса иртсе кайсан та — палламăн... Вĕреннĕ çынсем çапла ĕнтĕ вĕсем... (*Килне кĕрсе каять. Ерçен те каять.*)

Кĕтерукпа Чĕкеççи кĕреççĕ.
Иккĕшĕ те хутаçпа, çĕтĕк-çатăк тумланнă.

**Чĕкеççи.** Ну, хĕрĕм! Çимун пиччӳсем патне кĕрсе тух та... Унтан каллех кайăпăр вара. Ху кăна кĕр ĕнтĕ унта, ачам.

**Кĕтерук.** Анне! Эсĕ ара?

**Чĕкеççи.** Мана ырă мар, хĕрĕм. Курсанах тулăк ыйтать манран. Пирĕн, хĕрĕм, нимĕскер те çук тӳлеме.

**Кĕтерук.** Юрĕ эппин, анне. Мĕн тумаллаччĕ-ха?..

**Чĕкеççи.** Чӳрече патне пыр та: «Эй, çӳлти аттемĕр», — тесе юрла. Унтан, юрласа пĕтерсен: «Христос ячĕпе ыйткаласа

çӳреттӗмӗр те», — те. Унтан тайӑл, хӗрӗм. Çӑкӑр парсан: «Спаçипӑ», — те. «Турӑ сире пире панӑшӑн çӗр хут ытла патӑр», — те. Юрӗ-и?.. Манмӑн-и ӗнтӗ...

**Кӗтерук.** Манмӑп, анне. Мӗншӗн, анне, юрламасӑр памаççӗ ара?..

**Чӗкеççи.** Вӗсене, хӗрӗм, Турӑ каçарать. Эпӗр Турӑ кӗллипе пурӑнатпӑр та... Турӑ пирӗн кӗлле илтет... Унтан çынсен чӗрисене çемçетет те — вӗсем пире параççӗ вара...

**Кӗтерук.** Апла пулсан хурлӑхлӑ юрлӑп, анне.

**Чӗкеççи.** Кай ӗнтӗ, хӗрӗм, кай!..

Кӗтерук пуян Çимун çурчӗ патне пырса юрлама пуçлать. «Эй, Çӳлти Аттемӗр» т.ыт.те.

**Кӗтерук** (*юрласа пӗтерсен*). Анне, вӗсем ман çине пӑхмаççӗ те...

**Чӗкеççи.** Эс хытӑрах юрла, хӗрӗм.

**Кӗтерук.** Юрӗ эппин. (*Хытӑрах юрлама пуçлать.*)

**Çимун** (*чӗречерен пуçне кӑларса*). Мӗн кирлӗ сана, хӗрӗм?..

**Кӗтерук.** Христос ячӗпе пуçтарса çӳреттӗмӗр те...

**Çимун.** Мӗншӗн пуçтарса çӳретӗн ара?

**Кӗтерук.** Пирӗн çимелли çук.

**Çимун.** Мӗн çиес килет ара сан, хӗрӗм?

**Кӗтерук.** Эпӗр çӑкӑр çиетпӗр. Хӑш чухне паранкӑ пӗçеретпӗр.

**Çимун.** Аш çиместӗр-и?

**Кӗтерук.** Пирӗн аш çук çав.

**Çимун.** Мӗншӗн çук ара?

**Кӗтерук.** Эпӗ пӗлместӗп. (*Амӑшӗ енне çаврӑнса.*) Анне! Мӗншӗн пирӗн аш çук, э?

**Çимун.** А, амӑшӗ те кунта иккен! Ме сана, хӗрӗм. (*Çӑкӑр парать.*)

**Кӗтерук.** Спаçипӑ, Çимун пичче.

**Çимун.** Мӗн эсӗ, Чӗкеççи, пытантӑн?

**Чӗкеççи.** Эпӗ, ара, пуçтарса çӳреттӗмӗр те... Пуçтарса пурӑнмалла пулчӗ ӗнтӗ... Ку куна курас пек марччӗ те вӗт...

**Çимун.** Пурте Турӑ ирӗкӗнче ӗнтӗ, тӑхлачӑ. Сан Çимен мана пӗр 20 тенке яхӑн тулӑк хӑварчӗ. Тупса пар! Ман кунта каçунни укçа çук!..

**Чĕкеççи.** Ах Тур! Ăçтан тупăп-ши? Ниçтан та тупмалли те çук-çке... Вĕлерсен те...

**Çимун.** Илме пĕлнĕ-тăк тӳлеме те пĕлмелле ĕнтĕ... Çуртна сутатни?.. Тӳлесе тат!..

**Чĕкеççи.** Ах Турă! Турă пул ĕнтĕ, Çимун хăта.

**Çимун.** Турă пула-пула ĕнтĕ... Ху хĕрна та халиччен çавăраймастăн та... Каларăм вĕт эпĕ сана: хĕрна хама парсан, тулăкĕ-мĕнĕ çавăнта пулĕ тесе. Хĕрне ӳкĕтле. Пике пек пăхса усрăп.

**Чĕкеççи.** Ах Тур! Каларăм ĕнтĕ, Çимун хăта. Каларăм... Вĕçĕмсĕр макăрать... Ним тума та пĕлместĕп...

**Çимун.** Халь килте-и-ха вăл? Эсĕр кĕрĕр-ха пӳрте, кĕрĕр. Ларăр эпĕ киличчен. Унта никам та çук!.. Эпĕ хам кайса калаçса пăхам-ха!.. (*Елясем патне каять.*)

**Кĕтерук.** Анне, мĕншĕн кайрĕ вăл пирĕн пата? Еляна илме-и?..

**Чĕкеççи.** Ах Тур. Ан калаç, Кĕтерук. Ах Тур. Те каяс ĕнтĕ хамăн та. Хĕре макăртса ан пĕтертĕр тата...

Çав вăхăтра А.Павлăч урампа иртсе пырать.

**А.Павлăч.** Кĕтерук, ма паян шкула пымарăн?

**Чĕкеççи.** Каяймарĕ-ха, Андрей Павлăч. Ашшĕ те вилчĕ те... Халь акă çимелли çук, ыйткаласа çӳретпĕр.

**Кĕтерук.** Андрей Павлăч, пăх-ха, мĕн пысăкăш çăкăр татки пачĕ мана Çимун пичче.

**А.Павлăч.** Спаçипă терĕн-и вара? Спаçипă та темерĕн пулĕ-ха? Ăна çынран мĕн те пулин илсен: «Спаçипă», — теççĕ... Вĕрентсе çитерме çук! Чăваш çавна та пĕлмест вăл!..

**Кĕтерук.** Спаçипă терĕм. Эп манман эсĕр каланине!

**А.Павлăч.** Тунă пулсан — юрĕ! Атя хам пата, Кĕтерук! Капла ыйткаласа çӳремĕн! Вĕрентĕп эп сана! Чĕкеççи инке! Чăнах, пар усрава.

**Чĕкеççи.** Каймасть пуль-ха вăл... Каятни ара, Кĕтерук?

**Кĕтерук.** Çук! (*Амăш çумне лăпчăнать.*) Çук! Çук! Каймастăп!

**Чĕкеççи.** Уйрăлать-и вара хамран?

**А.Павлăч.** Чăваш ачи çав. Ну, ăс кĕтĕр-ха. Унта курăпăр. Ыран пыр шкула, Кĕтерук. Чĕкеççи инке, яр шкула. Хам çитерĕп. (*Каять.*)

**Чĕкеççи.** Атя, эппин, кĕрсе ларар. Мĕн кăна курмаллатăр ĕнтĕ... Атя, кĕрер... Кайсан — мĕн те пулсан, туртса кăларса хамăрăн ята варалĕ тата.

Чĕкеççипе Кĕтерук Çимунăн çуртне кĕреççĕ. Вĕсене стражник курать. Вĕсем хыççăн кĕрет. Тепĕр самантран Чĕкеçпе Кĕтерука çавăтса тухать.

**Стражник.** Эсĕр мĕн тума кĕтĕр унта? Ха. Çынсăр çурта кĕреççĕ... Вăрлама кĕтĕр-и?

**Чĕкеççи.** Вăл хăй кĕрсе ларма каларĕ. Эпĕр ним те вăрламан.

**Стражник.** Эсĕр калăр. Ну-ка. Ним те вăрламан-и? (*Иккĕшне те хыпалать.*) Ку çăкрине вăрларăн-им?

**Кĕтерук.** Вăл хăй пачĕ.

**Стражник.** Эп сире вĕрентĕп — «хăй пачĕ». Семен Степанч хăй килтĕр-ха. (*Каять.*)

**Кĕтерук.** Ним те вăрламарăмăр-çке, анне. Ма пире вăрă теççĕ?

**Чĕкеççи.** И-и-и, хĕрĕм. Мĕн калаччăр ĕнтĕ вĕсем пире — ыйткалакансене. Кам пире шанчăклă çын вырăнне хурать? Спаçипă Турра, халь те-ха хĕнемерĕ... Хĕнесси те часах ун.

**Кĕтерук.** Анне, киле каятпăр-и?.. Еля пире кĕтсе ăвăнчĕ пулĕ?

**Чĕкеççи.** Çăкăрне те пуçтараймарăмăр-çке, хĕрĕм. Тен, анатри урампа çаврăнса килĕпĕр?.. (*Каяççĕ.*)

Чĕкеççин килĕ. Еля çип арласа ларать. Хурлă юрă юрлать. Шухăша кайнă. Пуян Çимун асăрханса, шăппăн кĕрет. Ельăна хыçалтан пырса ыталаса илет. Еля хăраса ӳкет.

**Çимун.** Ан турткалан, хĕрĕм, ан турткалан.

**Еля** (*туртăнса*). Çимун пичче, мĕн хăтланатăн? Яр...

**Çимун.** Хăраççĕ-и вара çапла ват çынтан. Ват çын сире çисе ямасть пуль вăл. Ватă тенĕ те... Ват çыннăн та чунĕ пур вĕт. Хĕрӳллĕхĕ те сӳнмен...

**Еля.** Çимун пичче, мĕн хăтланатăн?

**Çимун.** Эсĕр çав Виктăр пеккисене пăхатăр. А Виктăрĕ. Хă-хă-хă. Авланчĕ. Мул уншăн юратуран та хаклă пулчĕ. Çапла тăваççĕ ăна çамрăк çынсем. Хă-хă-хă. А эп сана юратап... Чухăн хĕр тесе тиркемес... Качча пыр мана, сана майралла тумлантарăп, сив сăмах каламăп...

**Еля** (*туртăнса*). Çимун пичче.

**Çимун.** Çимун пичче, Çимун пичче... Пиччӳ пуласшăн мар-ха эп саншăн. Мăшăру пуласшăн. Илтетни?

**Еля.** Кай, кай, Çимун пичче... (*Çурма макăрса, çурма йăлăнса ыйтать Еля.*)

**Çимун.** Эп сана патша арăмне усранă пек усрăп. Виктăрсем йышши кăна-и? Сур эс çав çамрăксем çине... Ну, кала, пыратни качча? Пырсан, ыранах хăтасем яратăп. Тăватпăр туй акăш-макăш. Сан вĕт пурпĕрех яту кайнă ĕнтĕ... Сана никам та качча илес çук. Ну, кала, пыратни?..

**Еля.** Çук, çук... (*Макăрать.*)

**Çимун.** Хăвăн кăмăлупа пымасан — вăйпа илетĕп.

Çĕклесе илет те кутник çине йăтса пырса хурать. Пусмăрлама хăтланать. Еля май тупса тĕксе ярать те алăк патнелле вирхĕнет. Тула чупса тухать. Çав вăхăтра Чĕкеççипе Кĕтерук та çаврăнса çитнĕ иккен.

**Чĕкеççи.** Çимун хăта, ун пек килтех ан мăшкăлла-ха пиртен...

**Çимун** (*юсанкаласа*). Çавăр ăна, тăхлачă, çавăр... Атту кил-çуртна сутма тивет. Эп тата килетĕп-ха... (*Тухса каять.*)

Ельăпа Кĕтерук кĕреççĕ.

**Еля.** Анне... (*Ĕсĕклесе макăрать.*) Анне, ма манран пурте мăшкăллаççĕ...

**Чĕкеççи.** Эй, хĕрĕм, хăçан кăна çын кулли пулмăпăр-ши?.. Ах Тур, мĕн тăвăпăр ĕнтĕ... Пурнăçăмăр çапла-çке!..

Хăй те хĕрне ыталаса макăрса ярать, вĕсем хыççăн Кĕтерук та.

## ПИЛЛĔКĔМĔШ ПАЙĔ

Чĕкеççин чухăн çурчĕ. Кĕтерук кĕнеке вуласа ларать, амăшĕ итлет.

**Кĕтерук.** Анне! Каламан та-ха эпĕ сана — эп тĕлĕк куртăм! Таçта кайнă пек те, темле ялта... ыйткаласа çӳретĕп-и — астумастăп. Мана Андрей Павлăч тĕл пулчĕ пек те, тытрĕ те илсе каять пек... Унтан хула курнă. Çуртсем пурте чул ту

пек! Çынсем нумай пек... Пурте ман çине пăхаççĕ пек. «Ай, хитре те ку!» — тесе пĕр-пĕринпе калаçаççĕ пек. Унтан вăрантăм...

**Чĕкеççи.** Çав хулана каяссах ĕнтĕ вăл. Андрей Павлăч паян илсе каятăп терĕ вĕт. Час килет-тĕр ĕнтĕ вăл... Çавна пĕлтерет ĕнтĕ тĕлĕкӳ...

**Кĕтерук.** Учитель пире тĕлĕке ĕненме хушмасть. Эсĕ, анне, мĕншĕн ĕненен ара?..

**Чĕкеççи.** Ĕненен çав, хĕрĕм, ирĕксĕрех! Пĕркун пăру çĕрле макăрчĕ... Пĕлсех тăратăп — ырра мар! Аçу çакăннă чухне те çапла ĕне макăрчĕ...

**Кĕтерук.** Анне! Ку вăл — тĕшмĕш! Учитель çапла каларĕ пире! Чăнах!

**Чĕкеççи.** Учитель ăçтан пĕлтĕр ĕнтĕ ăна.

**Кĕтерук.** Пĕлет ĕнтĕ, анне! Вăл — чăваш чăн тĕшмĕшлĕ халăх тет... Чăвашăн сĕре нумай тĕшмĕш тет...

**Чĕкеççи.** И-и, хĕрĕм! Пирĕн пек çынсемшĕн мĕнпур тĕшмĕшĕ вырăна килсе пырать... Вĕсем пеккишĕн вăл вырăна килмест... Ах Тур, хĕрĕм! Андрей Павлăч пирĕн пата часах килмелле... Ачам, эсĕ ăна юрататни?..

**Кĕтерук.** Юрататăп, анне!

**Чĕкеççи.** Вăл аçу пекех, хĕрĕм...

Еля тата пĕр-ик хĕр кĕреççĕ.

**Еля.** Анне, эпир пирĕн патра çĕрĕ ярас тетпĕр! Юрать-и?..

**Чĕкеççи.** Ярăр ара! Ярăр!..

Сĕтел тавра кĕрсе лараççĕ. Çĕррине витре ăшне яраççĕ.

**Пĕр хĕрĕ.** Еля! Çĕррисене эс ху пăтрат! Юррине те хăвах пуçла!

**Еля.** Юрĕ эппин! (*Çĕрĕсем ярать. Юрă пуçлать.*)

Курницара çыру çырнă чухне
Ирхи хĕвел ӳкрĕ пуç çине.
Çырнă иккен Турă çамка çине
Шур супăньпе çуса каймасса...

**Еля** (*çĕрĕ кăларса*). Анне, сан çĕрӳ тухрĕ.

**Чĕкеççи.** Ăçта ара?..

**Еля.** Акă-çке... (*Çĕррине тăсса кăтартать.*)

**Чĕкеççи.** Çырнă çав ĕнтĕ Турă çамка çине... Турă çырмасан çак асапа ăçтан курăн?!

**Кĕтерук.** Анне, тĕшмĕш вăл. Юрă тухнине ĕненмелле мар. Тĕшмĕш терĕ пире учитель...

**Чĕкеççи.** Эй, хĕрĕм. Пирĕншĕн Турă çырмасан та — çырнă... Эсир савăнăçлăраххине юрлăр!.. Мĕн шав хурлăхлине...

**Еля.** Ну эппин, савăнăçлине:

Çыранĕсем чăнкă, шывĕ сулхăн,
Ишес пулсан, епле ишĕп-ши?
Сатри панулми пек пĕрле ӳссе
Уйрăлнă чух епле тӳсĕп-ши?

**Еля** (*туртса кăларнă çĕрре пăхса*). Кĕтерук, сан çĕрру тухрĕ.

**Кĕтерук.** Ăçта? Анне, мĕне пĕлтерет ку юрă?

**Чĕкеççи.** Пĕлсе тухать, хĕрĕм. «Уйрăлнă чух епле тӳсĕп-ши?» — тет. Эсĕ Чĕмпĕре каясса ĕнтĕ вăл. (*Тăрса.*) Ах Тур, мансах кайнă. Час Андрей Павлăч та лаша кӳлсе килĕ. Пуçтарăнар... Кĕпӳсене тăхăнтăн-и?

**Кĕтерук.** Эпĕ хатĕр, анне.

**Чĕкеççи.** Хатĕр пулсан, юрĕ. (*Хĕрсене.*) Мĕнле ара эсĕр? Хăвăр савăнăçлине терĕр. Çав савăнăçли пулчĕ-и ара?..

**Еля.** Мĕн тумалла ĕнтĕ, анне. Пĕр савăнăçлă юрă та çук-çке. (*Çĕррисене пăтратать те — юрласа ярать.*)

Ямшиксенĕн пушшисем вăрăм пушă,
Çавăрса çапассисем час пулмĕ.
Çакăнтан эпĕр пĕр уйрăлсан,
Курса калаçасси час пулмĕ...

**Еля** (*çĕрĕ кăларать, анчах ним те чĕнмест*)...

**Хĕрсенчен пĕри.** Камăн çĕрри тухрĕ ара?..

**Еля.** Хамăн...

Пĕр хушă пӳлĕмре шăп. Сергей кĕрет.

**Сергей.** Аван-и?

**Еля** (*тĕлĕнсе те хăраса*). Сергей?!

**Чĕкеççи.** Аван-ха. (*Хĕрсем*: «*Пирĕн каяс-ха*», — *тесе тухса каяççĕ.*)

**Сергей.** Еля, ман санпа калаçмалли пурччĕ. (*Еля ун патнерех пырать.*) Еля, ялта сан çинчен çĕр тĕрлĕ сăмах

çӳрет... Эп ӗненмерӗм çынсем калаçнине... Хӑвӑнтан ыйтас терӗм...

**Еля.** Ӗненместӗн. Мӗншӗн вара ӗненместӗн, Сергей? Ӗнен... Çынсем вӗт мана малтан Виктӑрпа, халӗ ашшӗпе пурӑнать теççӗ. Ни хӗр, ни арӑм теççӗ. Мӗн тата çавӑн пек хӗрпе калаçса тӑратӑн. Сур ман çине, Сергей, çупса яр... Çавна тивӗçлӗ ӗнтӗ эпӗ... (*Макӑрса ярать.*)

**Сергей.** Еля! Чунтан калатӑп: эпӗ тахçанах юрататӑп сана. Пыр мана кавча...

**Еля.** Сергей, сана таса Еля кирлӗ вӗт... Ячӗ вараланнӑ хӗре эс юратас çук...

**Чӗкеççи.** Чимӗр-ха, ачасем!.. Еля, тасаран хӑвна ан хурла-ха... Сергей, итле... Таса чун вӑл, Еля... Сӑмахне ӑна Çимун йыттисем сарса çӳреççӗ... Çимун Ельӑна кавча илесшӗн пулчӗ те — эпӗ памарӑм. Виктӑрӗпе те çыхланмалла пулман та — чӗрене хушаймӑн... Эс икӗ çул ялта пулмарӑн. Пӗр хыпар та ямарӑн. Çак вӑхӑтра миçе хутчен аса илмерӗшши ӗнтӗ сана Еля?.. Юратать сана вӑл, Сергей...

**Сергей** (*Ельӑна куçӗнчен пӑхса*). Чӑнах-и, Еля?..

**Еля.** Чӑнах.

**Сергей.** Апла пулсан, пыратни манпа? Эп ӗçленӗ çӗре кайӑпӑр?..

**Еля.** Юрать.

**Сергей.** Анчах паянах, халех каймалла. Патшана хирӗç пынӑшӑн, телейсӗррисене валли телей тупассишӗн çуннӑшӑн мана шыраççӗ, çавӑнпа халех каймалла...

Çав вӑхӑтра пӳрте стражник кӗрсе тӑрать.

**Стражник.** Как раз тӗл килчӗ иккен-ха! Сергей! Эпӗ сан пата! Пристав сана темшӗн чӗнтерет. Эс ӑçтан таврӑннӑ халӗ?..

**Сергей.** Донбасран!

**Стражник.** Ну, вӑт! Атя-ха! Ытла чӑрсӑрччӗ çав!

**Сергей.** Еля, килни çапах та ахаль пулмарӗ. Эпӗ час таврӑнатӑп. Таçтах илсе каймӗç-ха!.. Эп халь вӑйлӑ, ма тесен пӗлетӗп — эс мана юрататӑн!.. (*Ку сӑмахсене вӑл Ельӑна лӑплантарма кӑна калать. Хӑй тепре курасса та шансах пӗтермест. Тухса каяс умӗн чӑтаймасть, куççулленет те.*) Кӑтартас тенӗччӗ сана телей... (*Шӑлне çыртса.*) Эх, пурнӑç!

**Стражник.** Ăна малтан политикăпа çыхланмалла пулман... Малтан шутламалла пулнă! Ну, атя!

Тухса каяççĕ. Еля вырăн çине ӳксе чарăнаймасăр йĕрет.

**Чĕкеççи.** Ачам, ачам! Тăр ĕнтĕ... Макăрнипе каялла çавăраймăн! Эх, хĕрĕм! Хĕрĕм! Темле пулса кайрĕ пурнăçу! Пĕр телейлĕ кун кураймарăн! Сăну-кĕлеткӳ те пăхса тăранмалла мар! Ĕçне те тиркеместĕнччĕ! Çапах телей кураймарăн! Йăлтах чухăн пурнăç пĕтерчĕ! (*Еля патне пырать те.*) Каллех ача чухнехи пек сана ачашлам-ха. Урăх пĕр çын та вĕт сана ачашламан! Кил! Кил-ха! Юрă юрлаканччĕ эпĕ сан сăпку çинче. Мĕнле юрăччĕ-ха? Эсĕ савăнаттăн. Лăплан-ха, хĕрĕм, лăплан...

Юрлать, аякра музыка хуллен янăрать:

Сĕтел ури тăваттă та
Тăваткал хăма айĕнче.
Ай-хай манăн çамрăк пуçăм
Йывăр хуйхă айĕнче.

А.Павлăч çула кайма тумланнă тумпа кĕрет.

**А.Павлăч.** Мĕн эсĕр? Пурте макăратăр? Ну, эпĕ килтĕм ĕнтĕ... Кĕтерук! Атя! Тумлан! Ак тăлăп илсе килтĕм. Тăхăн!

**Кĕтерук.** Анне! Эпĕ кайсан Еля пек телейсĕр пулмăп-и?..

**Чĕкеççи.** Пулмăн, ачам, пулмăн! Эсĕ телейлĕ пулăн! Атя тумлан!..

**Кĕтерук.** Эс маншăн ан хуйхăр вара, анне. Килнĕ чух эпĕ сан валли кучченеç илсе килĕп, анне! Юрĕ-и?

**Чĕкеççи.** Юрĕ, ачам, юрĕ! Ман валли кучченеç илсе килĕн... (*Ĕсĕклесе макăрать.*)

**Кĕтерук.** Ну, сыв пул, анне!

**Чĕкеççи.** Сыв пул, ачам! Сыв пул!

**Кĕтерук.** Еля, эсĕ те сыв пул!

**Еля.** Сыв пул... (*Пуçне çĕклет те.*) Кĕтерук, Кĕтерук! Ах Турă!

**А.Павлăч.** Ĕмĕрлĕхе мар вĕт. Мĕн макăратăр? Чĕмпĕр таçта инçех мар. Çуллах килĕ ак. Ну, кайăпăр, кайăпăр, Кĕтерук!

**Кĕтерук.** Атя! (*Алăк патне çитсен.*) Анне! (*Амăшĕ патне чупса пырса кăкри çумне кĕлеткипе çыпçăнать.*)

**Чĕкеççи.** Тур сыхлатăр ĕнтĕ сана, хĕрĕм! Вĕрен! Куран, мĕнле пирĕн пурнăç! Тен, сантан кăшт телейлĕрех çын тухĕ... Лайăх вĕрен. Андрей Павлăча ан çиллентер... Кай ĕнтĕ халь...

**А.Павлăч.** Чипер юлăр, эппин.

Тухса каяççĕ.

**Чĕкеççи.** Эх, пурнăç. Ху ачусене те курса савăнмалла мар та... Çиччĕ çуратрăм, çиччĕрен иккĕ ӳсрĕç. Иккĕрен пĕрне усрама илчĕç. Тепри те телейсĕр çуралчĕ. Кил, хĕрĕм! Юлтăмăр эпир санпа иксĕмĕр! Ни тăван çук, ни хурăнташ çук! Ни чуна йăпатакан пĕр çын та çук!

Ерçен кĕрет.

**Ерçен.** Еля! Сергей кĕрсе калама хушрĕ! Ан хуйхăрăр. Илсе каясса, хулана илсе кайнă... Ахăртнех, каялла яраççĕ пек. Айăпламалли сăлтавсем çук!

**Чĕкеççи.** Тен, килĕ-ха апла пулсан. Ун чухне, тен, эсĕр те телейлĕ пулăр, Еля!

**Еля** (*тарăннăн сывласа*). Тен, килĕ-ха, анне?! Тен, килĕ...

## Тупмалли

**Ум сăмах вырăнне (чăваш çыравçин шăпи пирки)** 5

**Тĕпчевсем**

*Ю.В.Яковлев.* Ефрем Еллиев пултарулăхĕ: çынлăхăн тĕнпе философи пĕлтерĕшĕ пирки ..... 8

*А.А.Ефимова.* Илемлĕ хайлавсенчи ял пурнăçĕн социаллă чăнлăхĕ: Е.Еллиевпа С.Аслан прозине танлаштарулла тишкерни ..... 21

*А.А.Тимофеев.* Е.Еллиевăн пичетленмен сăввисем 34

*Е.Р.Афанасьева.* Ефрем Еллиевăн драматургири шыравĕсем ..... 40

*А.Н.Тимуков.* Е.Еллиевăн критикăри шыравĕсем 44

**Аса илӳсем**

*Е.М.Тимирясов.* О Е.В.Еллиеве ..... 53

*Ф.А.Михейкин.* О незабываемом старом друге 59

**Е.Еллиев пьеси — сцена çинче**

*Ю.Яковлев.* «Вĕрилетĕр ăса та, чуна та юна» 70

*Е.В.Еллиев.* Пирĕн телей çавнашкал ..... 82

Чувашский государственный институт гуманитарных наук

# ЕФРЕМ ЕЛЛИЕВ: НОВОЕ ПРОЧТЕНИЕ И ТОЛКОВАНИЕ:

## исследования, воспоминания, сценический вариант драмы «Потерянное счастье»

Составитель *Ю.В.Яковлев*
Редактор *А.А.Тимофеев-Ыхра*
Художественный редактор *А.А.Трофимов*
Корректоры: *Г.И.Алимасова*, *Т.И.Кириллова*
Компьютерный набор и верстка *Э.В.Кирилловой*

Сдано в печать 19.09.02.
Бумага офсетная.
Печать офсетная.
Физ. печ. л. 7,5.
Заказ № 22.

Формат 60x90$^{1}/_{16}$.
Гарнитура Times.
Уч.-изд. л. 5,94.
Тираж 100 экз.

Чувашский государственный институт гуманитарных наук
428015, Чебоксары, Московский пр., д. 29, корп. 1.

Лицензия № 04143 от 27.02.2001 г.

15=